КС(Чув)
У 84
Ч-37216

Геннадий Уткин

Пуç синчи пуртă

УДК 821. 512. 111
ББК 84 (2 Рос=Чув) – 4
У 84

Национальная библиотека ЧР
4-037216

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Уткин Г.А.

У 84 Пуҫ ҫинчи пуртӑ. Очерксем. Статьясем. Тӗрленчӗксем. - Шупашкар. 2001. - 75 с.

У84

Геннадий Уткин

Очерксем
Статьясем
Тӗрленчӗксем

Шупашкар 2001

Пурнăç - хытти, çăкăр - çемçи

ĔÇЛЕКЕН ĔСĔКЛЕСЕ ЛАРМАСТЬ

"Сорма" коллективлă предприяти ертӳçин Юрий Иванович Владимировăн "Ударник" директорĕн ĕç пӳлĕмĕнче самаях тытăнса тăма тиврĕ. Юрий Ивановичпа Платон Павлович Давыдов - кӳршĕсем. "Сорма" Элĕк районне кĕрет, "Ударник" - Муркаш тăрăхĕнчи чи паллă хуçалăхсенчен пĕри. Вун виçĕ яла пĕрлештерсе тăрать вăл. Ялĕ–ялĕпе, урамĕ–урамĕпе кирпĕчрен хăтланă çĕнĕ çуртсем çĕкленчĕç кунта юлашки çулсенче. Кашнине тенĕ пекех вĕсене çутçанталăк газĕ кĕртнĕ. Кăçал 30 киллĕ Хурăнкасси еннелле газ пăрăхĕсем хывма тытăнмалла. Хурăнкассинчен çухрăм çурăра - çĕр çирĕм пилĕк киллĕ Мăн Шемĕш ялĕ. "Сорма" предприятине кĕрекен мăншемĕшсем те газлă пуласшăн. Пăрăхсене Хурăнкассинчен хывса пырсан, ку ĕç хăвăртрах та пулмалла тата йӳнĕрех те лармалла. Директор кабинетĕнчен Юрий Иванович сĕкленӳллĕ кăмăллпах тухрĕ. Кӳршĕсем пулăшма хатĕр: Платон Павловичпа тата ытти специалистсемпе мĕнле йышши газ пăрăхĕсем кирлĕ пуласси, вĕсене хăçан хума пуçласси пирки те калаçса татăлма май килчĕ.

"Ударник" нумаях пулмасть хăйĕн статусне улăштарнă. Халĕ ăна опытпа производство хуçалăхĕ (ОПХ) теççĕ. Статусĕ улшăннă пулсан та, ĕçĕсем унчченхи пекех: тырпул, тымарçимĕç, çĕрулми туса илмелле, курăк акса ӳстермелле, выльăх–чĕрлĕх ĕрчетмелле. Икĕ çул каялла 8 гектар çинче хăмла лартса хăварнă. Çитес вăхăтра вăл продукци пама тытăнмалла. Анчах унччен симĕс ылтăн тесе хакласа тăнă хăмлана пĕлтĕр сăра завочĕсем вак нухрат вырăнне те хурасшăн пулмарĕç, ку продукцие ют çĕршывсенчен кӳрсе килме пуçларĕç. Пĕлекен çынсем каланă тăрăх, республикăра халĕ те 700–800 тонна пĕлтĕрхи сутăнман хăмла выртать. "Ударникре" ку культурăн лаптăкне тата 10 гектар аслăлатасшăн. Пурĕ вара 18 гектар пулать. Пĕлтĕрпе кăçал хăмла хакĕ чакни П.Давыдова та, специалистсене те хăратмасть.

-Çулпа çул пĕр пек килмест. Хăмла яланах пирĕншĕн тупăшлă продукци пулнă, малашне те çапла пулĕ. Плантацине сарнă май çынсем валли ĕç вырăнĕсем ытларах туса паратпăр.

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
37216
ПРОВЕРЕНО 20 10
4

Çакна та шутран кăларма кирлĕ мар,- тет Платон Павлович.

Хуçалăх темиçе çул каяллах ĕнтĕ вăрлăхлăх çĕрулми туса илме специализациленнĕ. "Ударникре" ку культурăна çулсерен 350–380 гектар çинче лартса тăваççĕ. Пысăк тухăç шантаракан элита вăрлăх кирек кама та кирлĕ. Вăрлăха та, çиме хăварнă çĕрулмие те кăçал çуркунне сутма çăмăл пулмарĕ. Этем сĕтелĕ çине лекмелли продукт чылай хуçалăхсемшĕн выльăх çăварне кăна кĕмелле пулса тухрĕ. Çавна пула пысăк тăкак тӳсекенсем те пулчĕç. "Ударникре" ку енĕпе проблемăсем çук. Вăрлăха кама тата мĕн чухлĕ сутас пирки малтанах килĕшсе хунă. Халĕ ăна Чăваш республикин тулашĕнчен килекенсем, хамăрăннисем туянаççĕ. Чулхула, Вологда, Вятка тăрăхĕнчен те килсе илсе каяççĕ вăрлăхлăх çĕрулмине. Пурĕ икĕ пин тонна уйăрса хунă çакăн валли.

Пĕлтĕр–кăçалсенче "ялхуçалăхĕ арканать, пурнăç начар, мĕнпур япала хаклă, патшалăх пулăшмасть", тесе макăракансем, кăшкăрашакансем нумайланчĕç. Чăнах та, патшалăх органĕсем ял хуçалăхне çĕклес енĕпе мĕн кирлине пĕтĕмпех тунă теме çук–ха. Çапах та вырăнта мĕн тума пултарнине пĕтĕмпех тăваççĕ тесе те калама çук. "Ударникре" вара йĕмесĕр–макăрмасăр ĕçлеççĕ патшалăх чăрмантарни çине йăвантармаççĕ. Хăйсенчен мĕн килнине пĕтĕмпех туса пыма тăрăшаççĕ. Аш–какай тата сĕт сутса хуçалăх кăçалхи пĕрремĕш кварталта 370 пин тенкĕ яхăн укçа–тенкĕ тупăшĕ илнĕ. Ку отрасльсен рентабеллĕхĕ 33–37 процент шутланать. Паллах, апрель уйăхĕнчен пуçласа патшалăх пулăшăвне пама пăрахни отрасле хавшатма пултаратех ĕнтĕ. Анчах та Платон Павлович ку енĕпе Чăваш правительствин ертӳçисем хăйсем халиччен йăнăш ĕçлесе пынине ăнланасса шанать, республика халăх депутачĕ пулнă май, хăйĕн прависемпе усă курасран та пăрăнса тăма шутламасть.

Çапах та япалан тĕлли–палли пурах çав. Акă, сысна ĕрчетесси халичченхи пек дотаци парса тăрсан та усламлă пулас çук. Сыснана çитерме тырă нумай кирлĕ. Тырри халĕ питех те хаклă. "Ударникре" халиччен 3 пин пуç е унран та ытларах сысна усранă. Халĕ самăртмалли сыснасен йышне чакарса пыраççĕ. Çав вăхăтрах тĕп тата пĕр хут çăвăрлаттаракан амасен шутне пĕрре те пĕчĕклетесшĕн мар. Ку йыш, пĕрле шутласан, 400 пуç патнех капашать. Хуçалăх сысна çурисем нумай сутать. Пилĕк–ултă килограмм таякан çурасене вырăнта та, Чулхула облаçĕнче те алранах туртса илеççĕ. Сысна ашĕ сутса иртнĕ кварталта кăна хуçалăх нумай тăкак тӳснĕ. Паллах, çакăн пирки тарăхма та, пĕтĕм çын илтĕнмелле кăшкăрма та пулать. Анчах та "Ударникре" апла тăвасшăн мар. Патшалăх хăçан та пулсан сысна ашĕ кирлех пуласса вĕсем пĕлеççĕ, çак енĕпе хавхалантаракан çăмăллăхсем пулсанах ку отрасле çĕнĕрен çĕклесе яма хатĕр кунта. Мĕн тăвăн, рынокăн законĕсем çавăн пек: тупăш паман ĕçпе кам хăйĕн алли–урине çыхса ларттăр?

Ĕне–выльăхпа тĕрмешнин усси вара халлĕхе пур–ха. Ку выльăхсен йышĕ хуçалăхра та, уйрăм çынсен картишĕсенче те ӳссех пырать. “Ударник” хуçалăх вырнаçнă Йӳçкасси ял администрацийĕнче пурĕ 780 кил, 2550 çын пурăнать. Виçĕмçул уйрăм çынсем кунта 840 пуç ĕне–выльăх усранă. Кăçал ку йыш 935 пуçа çитнĕ. Платон Павлович шухăшĕпе ял çыннисем кил–картишсенче тытакан тынашкасемпе вăкăрсем шучĕ тата та ӳсмелле. Пĕлтĕр хуçалăх рабочисемпе служащисене 2200 тонна тӳлевсĕр тырă панă. Хăш-пĕр çынсем 5-6 шар тонна тĕштырă илнĕ. Ăна çăкăр пĕçерсе (сăмах май каласан, Йӳçкассинче питĕ кăпăшка та тутлă çăкăр кăларакан пекарня пур) пĕтерес çук. Сутас-туянакана тупма йывăр, мĕншĕн тесен, ку тавар ялта пурăнакан кашни çыннăн пур. Рабочи–служащи ун пек чухне килти выльăх шутне ӳстерет.

Платон Давыдовпа кашни ялах çитсе курма тӳр килчĕ. Мĕн калăн: урамсене тирпейлес, çул–йĕрсене йĕркене кĕртес енĕпе ĕçлемелли пур–ха кунта. Ку тĕлĕшрен Йӳçкасси ял администрацийĕ те пуçарулăрах пулсан аванччĕ. Çапах та куçа чи малтан çакă курăнчĕ: çурт лартас текенсем паян та йышлăн–ха кунта. Машинăсем çинчен кирпĕч пушатакансене те, хыр–чăрăша чус тума пилорамăна ăсатакансене те курма май килчĕ ялсенче.

Укçа пулмасан - çурт лартаймастăн. “Ударникре” кăçалхи пĕрремĕш кварталта вăтам ĕç укçи пин тенке çитнĕ. Дояркăсем икĕ пин тенкĕ ĕçлесе илеççĕ. Механизаторсемпе шоферсен ĕç укçийĕ кăштах пĕчĕкрех. Паллах, сахалтарах илекенсем те пур.

Строительсем вара сахал ĕçлесе илекенсен ушкăнĕнче мар. Вĕсем пĕрре те пушă лармаççĕ. Строительство ĕçĕсем те кунта унчченхинчен япăх мар пыраççĕ. Производство объекчĕсенче те хĕрӳ ĕç пырать. Халĕ виçĕ çĕрте 200–шер вырăнлă пăру вити тума тытăннă. Сĕт завочĕ лартма площадка хатĕрлесе çитернĕ. Ку вăл сменăра 6 тонна продукци кăларакан чылаях пысăк предприяти пулать. Унăн продукцийĕ - услам çу, тăпăрчă, хăйма, казеин. Çĕве шывĕ те ахаль сая каяс çук. Ку завода туса лартсан, ял халăхĕнчен хальхинчен икĕ–виçĕ хут нумайрах сĕт сутăн илме пулать.

Платон Павлович Давыдовăн малашлăх валли палăртнă ĕçсен планĕнче çĕрулмирен вырăнтах апат–çимĕç продукчĕсем кăларакан предприяти тума палăртни те пур. Анчах вăл продуктсене хатĕрлеме тип çу кирлĕ пулать. Ăна пирĕн республикăра кăлармаççĕ. Çапах та 60–70 çул каялла кăна Чăваш тăрăхĕнче тип çу çапакан армансем çĕршерĕн шутланнă. Кантăр çăвне те, йĕтĕн çăвне те пăчĕ–пăчĕпе хатĕрленĕ чăваш, хĕвелçаврăнăшĕнчен те çу çапса кăларма пĕлнĕ. Хуçалăх директорĕ “Ударникре” кантăр акса тума, унăн çуне вырăнтах çапса кăларма, унпа çĕрулмисенчен апат–çимĕç хатĕрленĕ çĕрте усă курма майсем пурри çинчен каласа пачĕ.

ЧĂНЛĂСЕМ ЧĂНЛĂХА ЮРАТСА ПУРĂНАÇÇĔ

Хĕсĕк уйсемпе вăрман лаптăкĕсене хыçа хăварса, машина малтанах Тутар республикин Çĕпрел хирĕсемпе иртрĕ, ун хыççăн Чемпĕр уçлăхĕнчи Чăнлă район çĕрĕсем çине кĕрсе кайрĕ. Тимĕрçен, Чăвашкасси, Кивĕ Улхашпа Çĕнĕ Улхаш - пурте чăваш ялĕсем. Тахçан-тахçан пĕр пĕлĕшĕм: "Шăмăршăсен хирĕнче ама тăрна кăшкăрать, улхашĕсен хирĕнче аçа тăрна кăшкăрать. Çавсен сассине илтсе килтĕмĕр", - тесе юрлани аса килет. Тăрна кăшкăрмалăх шыв-шур çителĕклех пуль те-ха улхашсен, çапах та путене юрламалăх, тăри вĕçмелĕх анлă уй-хир тата та нумайрах.

Кĕрхи ĕçсене вĕçлесе çитереймен-ха ку тăрăхра. Çĕртме тăваççĕ, сахăр кăшманĕ кăлараççĕ. Кăçал çумăрсем тăтăш çуса тăчĕç, нӳр çителĕклĕ пулчĕ. Пурпĕрех кăшман тухăçĕ иртнĕ çулхинчен пĕчĕкрех. Чăнлă районĕнчи ялхуçалăх управленийĕн специалисчĕсем çакна юлашки çулсенче тăпрана тутлăхлă япалсем сахалтарах хывма пуçланипе ăнлантараççĕ. Минераллă удобренисем туянма нухрат çитми пулчĕ. Выльăх-чĕрлĕх шучĕ чакса пынă май, уй-хире тислĕк сахалтарах тухма пуçларĕ.

Апли апла та, çавах чăнлăсем чейлĕ-сахăрлă. Сахăр завочĕ те вĕсен хăйсенех. Тиевлĕ машинăсем автовиçесем витĕр тухаççĕ те тӳрех районти сахăр заводне çул тытаççĕ. Чăваш республикинчен килнĕ автомашинăсене те сахал мар курма пулать кунта. Чăваш хутлăхĕнче те юлашки çулсенче пылак тымарçимĕç акса çитĕнтерме вĕренсе çитрĕç, анчах та хамăрăн заводăмăр çукки хуплать. Патăръелĕнче завод тăватпăр тесе вун-вун гектар çинчи хура тăпрана сирсе хунăранпа çулталăк ытла иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Ĕç кал-кал тапранни сисĕнсех каймасть. Комсомольски районĕнчи "Красный маяк" ялхуçалăх предприятийĕнче сахăр завочĕ лартас енĕпе пуçаруллăх пысăкрах, çапах та предприяти паянлăха ĕçе пуçăнайман-ха. Сахăрĕ пирĕн патăрта та пур-ха вăл. Хаклă - акă мĕн пăшăрхантарать ял тата хула çыннисене.

Чăнлă тăрăхĕнче вара апат-çимĕç пирĕн патăртинчен чылай йӳнĕрех. Район центрĕнче - Нагаткинăра - пĕр буханка çăкăра икĕ тенкĕпе сутаççĕ. Магазинта черет çукпа пĕрех. Пĕр килнĕ чухне темиçе çăкăр илсе каяс тесе хĕрĕнекен пĕр çын та курăнмарĕ: çемçе çине çемçе туянса тăраççĕ. Ялсене те йӳнĕ çăкăр пырать. Ку тăрăхра никам та эрнере икĕ хутчен пӳрт мăрйинчен çăра тĕтĕм кăларса, çу кунĕнче те вут-шанкă пĕтерсе çăкăр пĕçерсе аппаланамасть.

-Хĕрĕх-аллă çул каяллахи патне таврăнма шухăш çук пирĕн, - терĕ Нагаткино поселок администрацийĕн пуçлăхĕ, ырă чăваш Николай Федорович Большебородов, çăкăр-тăвар пирки сăмах хускатнă май.

Чăннипе каласан, лавккасенче йӳнĕ те çемçе çăкăртан татăлас мар тесе чăнлăсем хăйсемех тăрăшаççĕ. Районта юлашки çулсенче тулăн çăкăр промышленноçне каякан сорчĕсене ытларах акса тума пуçланă, кĕртыррисен лаптăкĕсене ӳстернĕ. Элеваторсенче çăкăр пĕçерме каякан тыррăн резервĕсене туса хураççĕ, тырпул хăйхаклăхне чакарма тăрăшаççĕ. Унсăр пуçне Ульяновск облаçĕ те çăкăра йӳнетме дотаци уйăрса парать. Апат-çимĕç продукчĕсене талонпа сутассине те пăрахăçламан кунта.

-Рынока кĕтĕмĕр-çке-ха. Мĕн тумалла унпа - талонпа? Пĕтерес ăна! - тесе кăшкăракансем пачах та çук иккен ку тăрăхра.

Çын хыççăн кайса пусса ан сик, ху пуçупа пурăн текен чăнлăха пĕр самантлăха та манмаççĕ чăнлăсем. Рынок сăмахпа хăлхана йӳçĕхтерекенсем хыççăн кайма васкамаççĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ пулса кунта вашават кăна тутар Ханяфи Валиевич Рамазанов ĕçлет. Хăй вăл Пенза облаçĕнчи Драки ялĕнче çуралса ӳснĕ, анчах унăн пĕтĕм пурнăçĕ Чăнлă районĕпе çыхăннă. Кунта вăл совхоз директорĕ те, ялхуçалăх управленийĕн начальникĕ те, райĕçтăвком председателĕ те пулса курнă. Халĕ - район администрацийĕн пуçлăхĕ. Район кăлави унччен ĕçлесе пуçтарнă опыта та манасшăн мар, çĕннине те (вăл паха, усăллă пулсан) алла илме хирĕçлемест. Ĕççи вăхăтĕнче облаçран, районтан вырăна представительсем (уполномоченнăйсем) янине миçе хутчен сивлемен пулĕ! Халĕ, рынок вăхăтĕнче, ун пирки асра-тĕсре те пулмалла мар пек ĕнтĕ. Ульяновск облаçĕнче, Чăнлă районĕнче, уполномоченнăйсен "институтне" сыхласа хăварнă, авă. Усси те пур теççĕ. Усси пулсан, мĕншĕн хирĕçлемелле.

Нагаткинăра хăйĕнче те, унăн таврашĕнче те строительство ĕçĕсем чарăнса ларман. Çĕнĕ фермăсем тăваççĕ, киввисене юсаççĕ, клубсем, ача сачĕсем лартаççĕ. Ытти çĕрте финанссем "романссем юрлама" пуçланă чухне, Нагаткинăра асăну центрĕ тума пуçланă. Площадьре штабелĕ-штабелĕпе кирпĕч выртать. Чăваш республикинчен килнĕ каменщиксем ĕçлеççĕ (тавах турра, хăть çакăнта ĕç тупма май пур).

-Кирпĕче Шупашкарти заводран турттаратпăр. Хаклă. Пин штукĕ пин тенкĕ тăрать. Çапах та укçаран кермен туса лартаймастăн. Кирпĕч кирлĕ. Çавăнпа сирĕн патăртан туянатпăр, - каласа парать поселок кăлави Николай Большебородов.

Лайăххине лайăх темелле ĕнтĕ. Çапах та Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи халăх (унта чăвашсем 64 процент шутланаççĕ) Сарă кун çĕршывĕнчи пек тулăх пурăнать тесе каласшăн мар эпир. Вĕсен те проблемăсем сахал мар, терчĕнушисем те йышлансах пыраççĕ. Акă эпир ялхуçалăх управленийĕн выльăх-чĕрлĕх тата хатĕрлев енĕпе ĕçлекен аслă специалисчĕн Анатолий Сафронович Чебановăн (чăвашсен паллă драматургĕ, çыравçи) ĕç пӳлĕмĕнче ларатпăр. Анатолий

Сафронович шут шăрçисене унталла-кунталла хăвăрт куçарма тытăнать. Унччен хи çулсемпе танлаштарсан, какай туса илесси те, сĕт сăвасси те чакнă иккен. Выльăх-чĕрлĕх продукци пама пăрахман. Çакă хăтарса пырать пуçĕпех йывăрлăха кĕрсе ÿкесрен.

Раççей правительстви ялхуçалăхĕ енĕпе тытса пыракан политика чăнлăсене те тивĕçтерейместь. Кама тивĕçтертĕр вăл? Çапах та район çĕнсе илнĕ чикĕсенчен чакасшăн мар, район малалла аталанасшăн.

КУÇÇУЛЬ МĔНШĔН ТĂВАРЛĂ?

Кăçалхипе çирĕм иккĕмĕш çул вырăн çинчен тăраймасть Валерий Соколов. Унăн тĕнчи - хăй вырткан тирпейлĕ те çутă пÿлĕм, кравать тĕлне çакнă шурă хурăнлă та симĕс улăхлă ÿкерчĕк тата чÿречерен курăнакан кăвак пĕлĕт ластăкĕ. 1984 çултанпах, Муркашра хваттер илнĕренпех, çакăнта вăл. Унччен, вара... Унччен хине аса илнĕ чухне Валерий куçĕсенчен куççуль пăчăртанса тухрĕ.

Кун-çулĕ йĕркеллĕ сыпăнса пырас-тăк, вăйпитти вăхăт пулмаллаччĕ хĕрĕх улттăри арçыншăн. Халĕ, акă, вăйсăрлăхпа халсăрлăх тыткăнĕнчен хăтăлаймасăр хăшкăлать вăл: урисем хăйне итлемеççĕ, аллисем имшер те хусканусăр. Апат çинĕ чухне те алăри кашăкĕ кăпăрт тухса ÿкет, кăранташа икĕ алăпа тытса çырмалла. Çын пулăшмасăр хăй вырткан кравать умне анасси пирки ан та шухăшла.

Унччен вара... Эх, ăçта-ши вăл çирĕм пилĕк çул каялла иртсе кайнă савăк та хĕрÿ вăхăт?!

Валерий Çĕнял Муркашра йышлă ача-пăчаллă çемьере çуралса ÿснĕ. Шкул пĕтернĕ хыççăн шофера вĕренсе тухнă. Çул çитсен çамрăк çын ялти хăйĕн тантăшĕсемпе пĕрле çара кайнă. Салтак тивĕçĕ ăна Германине тата Чехословакине илсе çитерет, виçĕ çул иртнĕ хыççăн каччă тăван тăрăха тĕрĕс-тĕкел таврăнать. Алăра - юратнă ĕç, йĕри-тавраш ра - туссемпе юлташсем, килте - атте-анне тата çывăх тăвансем. Пĕр вăхăт Соколов райпо машинипе ялтан-яла тавар турттарать, кайрантарах районти çар комиссариачĕн газикне чуптарать, ун хыççăн, коммуналлă кантура ятарлă çĕнĕ автомашина килсен, ун рулĕ умне ларать. Вĕри те хастар каччă пулнă теççĕ Валерий пирки ăна çамрăк чухнех паллакан çынсем. Ун пек этемĕн, паллах, туссем те нумай, тăшмансем те çук мар.

Ларма-тăма пĕлмен каччă юратнă хĕр тупса авланнă хыççăн кăштах лăпланнă. Пĕрне-пĕри савсан ÿплере те рай туса хума пулать тесе ахаль каламан-тăр çав. Çамрăк мăшăр хăйĕн кĕтесĕ çук пулсан та пуçа усман. Валерипе арăмĕ хушшинчи çураçулăх, туслăх хĕрача çуралнă хыççăн тата та çирĕпленнĕ.

Ĕнер аван, паян лайăх, ыран тата ырăрах пулассăн туйăнать яш чухне. Кам кĕтет инкеке, енчен те вăл çитсе

хупăрлас пулсан, кам ăна сирсе яма малтан хатĕрленсе тăрать? 1971 çулхи июль вĕçĕнчи çав кун инкек-синкек сиксе тухас пирки Валерий асĕнче те пулман. Çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕн автомашинипе (транспорт хатĕрĕ юсавлах мар пулин те) вăл Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулăн туалечĕсене тасатма тухса каять. Каялла таврăннă чухне кардан татăлса тухнипе чылай пысăк хăвăртлăхпа пыракан машина çаврăнса ӳксе, кабинăра ларакан водителе çĕмĕрсе имретет. Халĕ, унтанпа çирĕм икĕ çул иртнĕ хыççăн, урăхла каласа паракансем те пур. Вĕсем ас тунă тăрăх, вăл кун Соколов вутă турттарнă пулать, эрех те сыпса пăхма тивнĕ имĕш унăн. Апла-и е капла - анчах та Валерий çав синкерте ĕмĕр сывалмалла мар аманса юлать. Ĕнсе шăмми хуçăлнипе, ытти сурансем канăç паманнипе вăл сакăр уйăх больницăра пĕр хускалми выртать. Сурансем ӳт илсе пирченĕ, анчах ĕнсе тымарĕ майланман. Шăпах тепĕр çулхи апрель пуçламăшĕнче, çутçанталăк чĕрĕлнĕ чухне, Валерий Соколова, ĕмĕрлĕхех сусăрланса юлнă çынна, ашшĕ-амăш килне тиесе пырса вырттараççĕ.

Ĕнерхи, иртсе кайни куççуль витĕр ыррăн, илĕртӳллĕн çиçсе тăрать пулсан та, иртнĕ кунăн çути çук çав. Пуласси вара тĕксĕм, хура, синкерлĕ. Анчах, чун сыхланса юлнă пулсан, ăна чул хушшине хурса пулин те пурăнмаллах. "Пурăнмалла", - тет хăйне Валерий Соколов та. Утма-тăма пултарайманскере, ашшĕпе амăшĕ ăна вунă çул ытла чĕчĕ ачине пăхнă пек пăхаççĕ. Чирлĕ çынна кунăçтарма ай-яй йывăр: унăн юнтарасси те хăйĕнпе пĕрлех, кăмăлне тупса çырлахтарма та çăмăл мар. Алли-ури ĕçлемест пулсан та, Соколовăн чĕлхи пур, ăсĕ пур. Вăл унччен хăй ĕçленĕ организаципе çыхăну тытма пăрахмасть. Хаçат-журнал вуласах тăрать, унта та кунта çырусем çырать. Кăмăлĕсем сӳрĕк мар, инкекре этеме пулăшма пултаракан çынсене хăй патне чĕнет: ӳкĕтлет, ыйтать, тархаслать.

Çын инкекне ăнланма пултаракансем пĕтмен-ха пирĕн хушăмăрта. 1984 çулта ун чухне Муркаш райĕçтăвкомĕн председателĕнче ĕçленĕ Леонид Софронович Софронов тăрăшнипе пĕрремĕш ушкăнри ĕç инвалидне Валерий Александрович Соколова райцентрта хĕвел ялан кĕрекен чӳречеллĕ, кăвак тӳпе курăнакан кантăклă хваттер параççĕ. Ăна пăхма çын кирлине те шута илеççĕ. Пĕр пӳлĕмлине мар, иккĕллине сĕнеççĕ ăна. Ятарлă кӳмепе сусăр çынна çӳлти хутсенчен аяла антарма чĕр вилĕм. Çакна та манса каймаççĕ Соколова ырă сунакансем: унăн хваттерĕ пĕрремĕш хутрах пултăр теççĕ.

Ырă сунни, пулăшни шанчăкĕ сӳнсе пыракан çынна вăй парать, пурăнма хавхалантарать. Телефон кĕртсе панă хыççăн Валерий хăйне çут тĕнчене тухнăнах туйма пуçлать. Çывăхра хăйне тарăннăн ăнланакан тăван çын çукки çеç чĕрине хĕстерсе ыраттарать унăнне: ашшĕпе амăшĕ çитмĕлтен иртнĕ ватăсем, пиччĕшĕн-шăллĕн хăйĕн нуши-терчĕ. Мăшăрĕ - Валеришĕн

каснă чĕлĕ. Вăл тахçанах упăшкинчен уйрăлнă. Чĕрĕ-и е вилнĕ упăшка пулнă çын - пĕлетех-ши тата çакна?

Çĕнĕ хваттерте пĕчченçи пилĕк çул пурăннă хыççăн (тăванĕсем килсе-кайса тăнă-ха ĕнтĕ) Соколовăн пурнăçĕ сасартăк улшăнать. Çав вăхăтра Муркаш уçлăхĕнче Якаткасси хĕрĕ, Ирина Замятина, курăнса каять. Телейлĕ пулма ĕмĕтленмен хĕрарăм пур-ши çĕр çинче? Ирина та çакăн пек ĕмĕтпех пурăннă. Вăтам шкултан вĕренсе тухнă, педагогика институчĕн филологи факультетне вĕренме кĕнĕ. Ăна пĕтерсе тухса вырăс чĕлхипе литература преподавателĕ пулас шухăшпа пурăннă вăл. Анчах пур чухне те ĕмĕтленнĕ пек пулмасть çав. Икĕ курс пĕтернĕ хыççăн тĕрлĕ сăлтавсене пула Иринăн институтран пăрахса килме тивет. Ăнăçсăр качча кайса килни çемье телейĕ пирки ĕмĕтленнине те хуплать. Тăванĕсем Иринăн хутне кĕме васкамаççĕ. Ытла та телейсĕр, ытла та пĕччен туйма пуçлать вăл хăйне. Садикре воспитательте ĕçлесе пĕр вăхăт лăпланса пурăнать-ха ĕнтĕ. Çывăх çын çук, пурăнма вырăн çук. Çав вăхăтра вăл Муркашра икĕ пӳлĕмлĕ хваттерте сусăр этем, пулăшусăр çын выртине пĕлет. Ирăн пуçĕнче хăйне валли пурăнма кĕтес тупас шухăшпа пĕрлех çынна пулăшас шухăш та çуралать. Тухса çӳреймен çынпа урамра курса калаçаймастăн, хăвăн пуçарăвупа калаçма та ырă мар. Анчах та Валерипе Ирина хушшинчи пĕрремĕш тĕл пулу пулса иртет-иртетех. Вĕсем пĕр-пĕрин кăмăлне пĕлеççĕ, ĕнер кăна пĕр-пĕриншĕн ют пулнăскерсем, пĕр хваттерте пурăнма пуçлаççĕ. Валерий хăйне пăхакансăр пĕр утăм та тăвайманни пуриншĕн те паллă-ха ĕнтĕ. Ача-пăча йĕрсе юншăхлать те кайран амăшĕ çумне тĕршĕнет. Валерий хевтепе ача пек, характерĕпе тата йăли-ерĕнкипе вăл - çитĕннĕ çын. Ĕнсе тымарĕ татăлни унăн ар пултарулăхне те ĕмсе илнĕ. Ун пек чухне хĕрарăмпа арçынна çывăхланма ырă сунаслăх, ăшпиллĕх, евĕклĕх анчах пулăшма пултарать. Иринăн е Валерийĕн ытларах пулнă-ши çак енсем, çапах та вĕсем пĕр-пĕринпе çывăхлансах пынă, кайран вара пĕрлешсе арăмĕпе упăшки пулма килĕшнĕ. Акă ĕнтĕ тăваттăмĕш çул Ирина, Замятина хушамата улăштарса, Соколовăпа çӳрет.

Çемье ăшши - ача-пăчара. Иккĕн выртса виççĕн тăмалли телей паман турă Валерипе Ирина Соколовсене. Апла пулсан та вĕсем ачаллă пулас ĕмĕте пăрахман. Икĕ çул каялла Валерий Александровичпа Ирина Ивановна усрав ача пирки районти тата республикăри учрежденисенче çӳреме пуçлаççĕ. Пулăшас текенсем те, ăнланман çынсем те тĕл пулаççĕ вĕсен çулĕ çинче. Ача усрава илес шухăш пурнăçа кĕреймест. Ирина - çамрăк хĕрарăм. Шăпах ача амăшĕ пулас вăхăтра пурăнать вăл халĕ. Мĕншĕн унăн хăйĕн пепкине хăйĕн çуратмалла мар? Вăл енĕпе хĕрарăма сывлăх учрежденийĕсем те пулăшма хатĕр халĕ. Иринăпа Валерий Чулхулана кайса килеççĕ. Унта çӳренин пулăшăвĕ пулманнипе Шупашкара çул тытаççĕ. Тăрăшни, çӳрени ахаль пулмасть, Ирина йывăр çын пулса юлать.

Соколовсен хваттерĕ - Муркашри тĕп урамсенчи пĕринче туса лартнă икĕ хутлă кирпĕч çуртра. Хаклă йышши сĕтел-пукан та, кавирсем те, хрусталь таврашĕ те çук унта. Тимĕр кравать, кивелсе якалнă диван, пысăк мар телевизор тата сĕтел çинче ларакан транзисторлă радиоприемник - çакă пӳлĕмри мĕнпур япала. Коридорта çĕмĕрĕлсе юрăхсăра тухнă инвалид коляски ларать. Ку коляска Валеришĕн çăмăл автомобиль те, автобус та, такси те. Ăна вăл, Югославире туса кăларнăскере, пĕр палланă çын пулăшнипе туяннă. Унпа малашне усă курма çук ĕнтĕ, туянас тесен каллех "палланă çынна" шырас пулать.

Çăмăллăх шучĕпе çăмăл машина туянас ĕмĕт те пулнă Соколовсен. Ирина - ырă-сывă хĕрарăм. Вĕренсен водитель правине те илме пултарать. Валеришĕн çывăхри больницăна, кӳршĕри тăван яла кайса килесси те çав тери йывăр проблема. Автомобиль пулсан, ку проблема ăнăçлă татăлмалла. Ăçта кăна çитмен пулĕ ку ыйтупа Соколов. "Ку ĕçпе премьер патне кĕресси анчах юлчĕ ĕнтĕ. Нумаях пулмасть Аслă Совет председателĕн пĕрремĕш заместителĕ патĕнче пултăм. Пурте пулăшма сăмах параççĕ, кайран манса каяççĕ. Ултавлани тесе шухăшлатăп эпĕ çакăн пирки. Чун тăварланса килет. Вĕри куççуль сахал мар юхтарнă сусăрлансан та, кайран та. Халь анчах пĕлсе çитрĕм: куççуль вĕри кăна мар, тăварлă та иккен", - сăмахлать Соколов юншăхласа.

Соколов пек çынсем çăмăллăх шучĕпе çăмăл машина туяниччен тĕве йĕп çăрти витĕр çăмăллăнах тухма пултарать. Мĕншĕн çакăн çинчен уççăн каламалла мар Валерине çӳллĕ пукансем çинче ларакан чиновниксен? Мĕншĕн урасăр-алăсăр çынна çул çӳретсе хăшкăлтармалла? Пулăшас пур - хăвăртрах пулăшмалла. Анчах чылай чухне усă парас вырăнне мăшкăллани кăна пулса тухать. Акă, Соколов çăмăл машина туянас тĕллевпе кивçен укçа илес пирки район ертӳçисем патне çырупа тухать. "Кивçен укçа илес пирки хăвăр ĕçлекен организацине кайса пăхăр", - тесе хуравланă район администрацийĕнчен. Соколов çирĕм икĕ çул хушши хускалмасăр выртнине, вăл ниçта та ĕçлеменнине питĕ те лайăх пĕлеççĕ-çке-ха. Куçкĕретех çапла кулма кирлех-ши çынран?

Соколовсене çакăн пек "пулăшу" паракансем тата та пур Муркашра. Кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ăна ватă çын тесе (Валерий 1947 çулта çуралнă "старик") 50 тенкĕлĕх (сакăр буханка шурă çăкăр илмелĕх) "пысăк" пулăшу панă. Валерипе Ирăн хваттерĕ 27 тăваткал метрлă. Коммуналлă хуçалăх предприятийĕ çак лаптăкшăн хваттер укçи илмест. Унччен ку "çăмăллăх" уйăхсерен темиçе теçетке тенкĕрен те мала пулман, халĕ - 160 тенке яхăн. Газпа, элетроçутăпа, ăшăпа усă курнăшăн Соколовсем уйăхсерен тӳлемелле. Кил хуçи хăй инвалид пуличчен коммуналлă службăра ĕçленине аса илсе çак енĕпе çăмăллăхсем пама ыйтса çырнă. "Хваттер укçишĕн çăмăллăх панине шута илсе, Соколов коммуналлă пулăшусем енĕпе ыйтса

çырнине коллектив тивĕçтерме май çук тесе шутлать", - хуравланă муниципаллă предприяти ертÿçисем хăйĕн çинчен яланах аса илтерсе тăракан инвалида.

Çапах та Соколовсене паян вăл-ку мар, Ирина ĕçе йĕркеллĕ вырнаçса ача çуратмалли отпуска ăнăçлă тухасси пăшăрхантарать. Вăхăт иртсе пырать. Ирина Соколовăн пĕтĕмпех пулас ачашăн пурăнас самант та çывхарать. Çак кунсене чунне-чĕрине çунтарса, ик куçĕнчен куççуль юхтарса кĕтсе ан илтĕрччĕ вăл. Соколовсене çын пулăшăвĕ кирлех.

"АТТЕ, КИЛЕ ХĂÇАН ТАВРĂНАТĂН?"

Ашшĕ киле урăх таврăнаймасси пирки вăл кун Майоровсен йышлă çемйинче никам та шухăшлама пултарайман. Ялти вăтам шкулта ку килтен пиллĕкĕн çÿреççĕ те, ачасене шкула кайма пĕтĕмпех хатĕрлесе çитерейменнине кура, кил хуçи хĕрарăмĕ Людмила Майорова вăл кун упăшкине, Алексее, райцентрти магазинсене çитсе килме сĕннĕ. Хăйне ăна тухса çÿреме кансĕр, аллинче - çур çул та тултарман Сашук, Надьăпа Вера, пĕчĕкскерсем, амăшĕн кĕпи аркинчен туртма пăрахман-ха. Çемье пуçĕ, Алексей Майоров, ферма кĕтĕвĕнче çÿрекенскер, вăхăт йÿнеçтерсе райцентра кайса килме килĕшнĕ. Унта тухса кĕме тепĕр сăлтав та пулнă унăн: шăпах çав кун райцентрта Майоровсен аякри тăванĕ вилнĕренпе хĕрĕх кун çитнине асăннă. Кĕсьене паспортпа ытти хăш-пĕр документсене тата пилĕк пин тенкĕ ытла укçа чиксе Майоров çула тухать. Райцентра вăл чиперех çитет, тăванне асăннă çĕре хутшăнать. Нумай лармасть, магазинсене çитсе çаврăнма шухăш тытать. Куç пек кĕтеççĕ-çке ăна килте ывăлĕсемпе хĕрĕсем. Ашшĕ мĕн кирлине пĕтĕмпех туянса килессе шанаççĕ. Анчах таçта кайса кĕчĕç юлашки вăхăтра ача-пăча таварĕсем. Унччен райцентрта ачасем валли ятарласа магазин пурччĕ. Халĕ ăна та хупнă. Вăл çук та, ку çук. Пурри те виçесĕр хаклă. Ашшĕн киле пушă алăпа таврăнас килмет. Вара вăл, ют хулара тавар нумай тата йÿнĕ тенине астуса юлнăскер, Ульяновска çитсе килме шутлать.

Майоровсен хурăнташĕ Геннадий Краснов каласа панинчен: "Вăл кун эпир пурте пĕрле аннен хĕрĕх кунне асăнтăмăр. Алексей нумай лармарĕ, кайса килмелли пур тесе тухса кайрĕ. Ик-виç сехетрен çаврăнса çитрĕ, хăй кăмăлсăр, нимĕн те туянайман. "Манăн ачасен куçне мĕнле курăнас!" - тет. Ульяновска çитсе килме шухăш тытнă. Эпир ярасшăнах марччĕ, вăл çине тăчĕ. Вара, çул çине тухса, хамах автобуспа лартса ятăм".

Алексей Майоровăн арăмĕ Людмила каласа панинчен: "Алексей райцентрта çĕр выртас пирки калаçманччĕ те, эпĕ ăна каçах кĕтме тытăнтăм. Вăл тепĕр ирхине те çитеймерĕ. Тепĕр кун та, тата тепĕр кун та ял хĕррине, автобус чарăнакан вырăна, темиçе те чупса тухса пăхрăм. Вăл çук та çук, хамăн

ăш çунса тухать. Вара Красновсемпе çыхăнса калаçрăм. "Вăл Ульяновскине кайнă вĕт", - теççĕ. Чĕрем çурăлсах тухрĕ. Милицине пĕлтертĕмĕр. Ачасем кашни кун атте хăçан киле таврăнать, тесе ыйтаççĕ. Эрне те çитрĕ, иккĕ те иртрĕ - Алексей киле килмерĕ".

Людмила Семеновна шанчăкне çухатмасть. Шырав ĕçĕ мĕнле пыни çинчен милицире ыйтса пĕлет. Анчах ăна кунта ырă хыпарпах савăнтараймаççĕ. Упăшки çухалнăранпа чылай вăхăт иртсен, вăл Ульяновск хулине хăй çитсе килме шухăш тытать. Шалти ĕçсен органĕсенче, больницăсенче, моргсенче пулать хĕрарăм. Малтан моргсенчен пĕринче унăн упăшки евĕрлĕ пĕр арçын вилли пурри çинчен те пĕлтернĕ пулнă ăна. Анчах та ку Алексей Майоров мар иккен, пачах урăх çын. Следовательсем Людмилăна сăнўкерчĕксем кăтартаççĕ. Вĕсенчен пĕрин çинче хĕрарăм хăйĕн упăшкине палласа илет. Анчах та Алексей ку сăнўкерчĕксене тунă вăхăтра ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупнă пулнă ĕнтĕ.

Людмила Майорова малалла каласа парать: "Следовательсем каласа панă тăрăх, манăн упăшкан виллине Ульяновскри пасартан инçе мар августăн 30-мĕшĕнчех тупнă иккен. Суран-мĕн пулнине каласа памарĕç. Вăл ĕçсе вилнĕ теççĕ. Çумĕнчи докуменчĕсене те, укçине те тупайман. Ĕçсе вилнĕ тенине ĕненместĕп. Пĕтерчĕç пулмалла ман упăшкана. Халĕ преступлени тăвакансем лавĕ-лавĕпе те, хўме çумĕнче выртакан ятсăр çыншăн кам тăрăштăр, кам йĕтĕр? Уголовнăй ĕç пуçарни пирки те пĕлместĕп. Пĕр уйăх ытла моргра выртнă хыççăн ăна тăванĕсене тупмасăрах тирпейлесе пытарнă. Хăш масар çине чикнине каласа пачĕç, шыраса тупăр, терĕç. Пĕрле çын та ямарĕç. Хулапа унăн таврашĕнчи вырăнсенче çўресе тăн тухрĕ. Алексей вилтăприне аран-аран тупрăмăр. Халĕ мĕн ĕнтĕ: пурăнас пулать, ачасене ўстерес пулать".

Çакна каланă чухне Людмилăн куçĕсем шывланчĕç, пуçне вăл кăкăрĕ çинелле усрĕ. Чăтмалла мар йывăр халĕ çак вунă ачаллă хĕрарăма. Упăшки вилни çинчен паян кун та ĕнентерў хутне алла илеймен-ха вăл. Лерен, Ульяновск хулинчен, унăн упăшкине тата ачисен ашшĕне, Алексей Майорова, тирпейлесе пытарнăшăн укçа тўлеме ыйтаççĕ иккен. Унсăрăн ĕнентерў хутне те алла илейместĕн. Алра документ çук - пенси хучĕсене йĕркелесси пирки ан та шухăшла.

Укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен кăрăс пурăнать Майоровсен çемйи. Ку кил-йышра халĕ ĕçлекенни те Светлана кăна, Çемьере вăл - иккĕмĕш ача. Светлана, ашшĕ пекех, ферма ĕçе вырнаçнă. Асли, Ира, çĕвĕçе вĕренсе тухнă. Анчах та хăйĕн специальноçĕпе ĕçлеме тўр килмен ăна. Пĕр вăхăт райцентрти çăкăр заводĕнче тĕрмешсе пăхнă вăл. Халĕ килтех, ĕçсĕр.

Çырма хĕрринче вырнаçнă хăрах каслă урамри çак йывăç çуртран хуйхă-суйхă хăвăрт сĕвĕрĕлес çук. Çăмăл пулмасть Людмила Семеновнăна вунă ача пăхса çитĕнтерме. Халлĕхе ăна пулăшаканĕ те çичĕ çухрăмра вырнаçнă Чурачăк ялĕнче

пурӑнакан ватӑ амӑшӗ кӑна-ха.

Халӗ, саккӑрла саламатлӑ саманара пурӑннӑ чухне, кашнин хӑйӗн терчӗ, хӑйӗн хуйхи-суйхи. Ҫапах та пирӗн хушӑмӑрта ҫын нушине туйса тӑракан чӗреллӗ ҫынсем те пурах-ха.

Ырӑ кӑмӑллӑ ҫыру та, укҫа пулӑшӑвӗ те хуйхӑллӑ хӗрарӑмшӑн халӗ ытлашши пулас ҫук.

УЛМАЛЛӐРА УЛМА ТУТИ КАЛАМАСТЬ

Шӑмӑршӑ урамӗсенчен пӗринче граждан вӑрҫи геройӗн Космовскин бюсчӗ ларать. Ҫак паллӑ этем ку тӑрӑхра ҫуралса ӳснӗ. Улмаллӑ райцентртан 40-45 ҫухрӑмра, Тутар республикипе Ульяновск облаҫне савӑлланса кӗрсе вырнаҫнӑ. Улмаллӑра колхозӗ те Космовский ячӗпе хисепленсе тӑрать. Маршрутлӑ автобус Пӑчӑрлӑ Пашъелне илсе ҫитерсе антарса хӑварчӗ. Кунтан Улмаллӑна ҫитме тата сакӑр-тӑхӑр ҫухрӑм. Ҫӗпрел районне кӗрекен Хура Катана - асфальтпа хытарнӑ ҫул, малалла - шывлӑ-сӗлкӗшлӗ уй сукмакӗ. Шурӑ тӑмлӑ тӑпра урасене ҫыртса лартать, кӗрлесе юхакан ҫурхи шывпа тулнӑ вӗтӗ ҫырмасем урлӑ каҫма та ҫӑмӑл мар. Сӑрт ҫинче сапаланса ларакан ялӑн кашни килӗнчех, ятне тӳрре кӑларас тенӗ пекех - йывӑҫ пахчи. Юр-ҫумӑр айӗнчи панулми, слива, чие йывӑҫҫисем ҫурхи ҫивӗч ҫил лӑсканипе тӗксӗммӗн карласа лараҫҫӗ. Улмаллӑра кивелсе шултӑрканӑ йывӑҫ ҫуртсем нумайрах. Кирпӗчрен купаланӑ пӳртсем сайра-пӗрре кӑна курӑнкалаҫҫӗ. Укӑлча тӑваткалӗнчи ҫеремлӗ вырӑнта шурӑ кирпӗчрен туса лартнӑ икӗ ҫурт, вӗсене хӑтласа пӗтереймен пулсан та, урама урӑхла сӑн кӗртсе лараҫҫӗ.

Яла ҫитнӗ хыҫҫӑн темиҫе минутранах колхоз правленийӗн тӑвӑр пӳлӗмне лӑках ҫын кӗрсе тулчӗ. Аякран ҫӳрекенсем кунта сайра пулаҫҫӗ те, ҫавӑнпа ҫынсем кашни килен-каякана хавас. Пуҫтарӑннисем хушшинче ял администрацийӗн пуҫлӑхӗ Юрий Андреевич Соболев, Александр Григорьевич Паймин зоотехник, колхозӑн главӑй инженерӗ Николай Иванович Моисеев, Вера Егоровна Алексеева бухгалтер, ферма заведующийӗ (вӑлах ветеринар) Александра Егоровна Соболева тата ыттисем те. Колхоз председателӗ Николай Геннадьевич Бондарев виҫӗмкунах машинине тракторпа сӗтӗрттерсе “пысӑк ҫӗр” ҫине тухнӑ.

-Кӗрлӗ-ҫурлӑ ӗҫ тума пирӗн председатель виҫӗ-тӑватӑ куна пуҫтарӑнса тухать. Шӑмӑрша та, Шупашкара та, Чулхулана та кайса килет, кирлӗ пулсан, Мускава та ҫитсе ҫаврӑнать, - ҫурри шӳтлесе те ҫурри чӑнласа калаҫҫӗ колхозниксем.

Яблоновкӑра 70 кил шутланса тӑрать, пурӗ 180 ҫын пурӑнать. Колхозра ӗҫлекенсем вара 40 ҫынран та ытла мар. Улмаллӑсен тӑхӑр ҫул вӗренмелли шкул (унта 14 ача, 6 учитель), клуб, библиотека, медицина пункчӗ, магазин пур. Хуҫалӑх унччен

бригада пулса "Волга" колхоза кĕнĕ, 1990 ҫулта уйрăлса тухнă. Чукалсем улмаллăсене трактор-машина, ытти ялхуҫалăх техники, 300 ытла пуҫ măйракаллă шултра выльăх парса кăларнă.

Выльăх ферми правлени ҫуртĕнчен икҫĕр-виҫҫĕр утăмран та ытла мар. Хĕрлĕ кирпĕчрен купаланă самаях капмар витесенче пăрусемпе ĕнесем усраҫҫĕ. Пурĕ 287 пуҫ кунта. Ĕнесем тенĕрен, Космовский ячĕпе хисепленекен колхозра вĕсене сумаҫҫĕ. Дояркăсем ҫуккипе, малтан ĕнесене наряд парса сутаркаланă, кайран пăрахнă. Ҫамрăк пăрусем амăшĕсемпе выртса тăраҫҫĕ. Вĕсене уйрăм апат ҫитерес "хуйхă" та ҫук: пăрушкасем амăшĕсене ĕмнипех пурăнаҫҫĕ. Апат тенĕрен, хуҫалăхра văл питĕ те кăрăс. Эпир пынă чухне валашкасене типĕ улăм хурса тухнăччĕ. Унсăр пуҫне, сенаж параҫҫĕ, кăштах концентрат лекет. Сĕтеклĕ апатсем пирки калаҫмалли те ҫук. Выльăхсем таса мар, имшер. Александр Паймин - аслă пĕлӳ илнĕ специалист. Ҫапах та кунта ĕне-выльăха рационпа тăрантарас, ăратлăх енĕпе ĕҫлес туртăм курăнсах каймасть-ха. Выльăх уйăхра е кварталта мĕн чухлĕ ӳт хушни те паллах мар: văхăтра виҫсе тăмаҫҫĕ. Ҫавна пулах самăртмалли сроксем тăсăлса каяҫҫĕ, ҫавна пулах колхозра какай туса илесси тупăш памасть. Ферма территорийĕ тислĕк ăшĕнче ҫăрăлать. Сенажĕ-силосĕ те тислĕкпе явăшса кайнă. Витесен ҫывăхĕнчех темиҫе ҫĕр кубометр вак чул купаланса выртать. Ăна вите таврашĕсене сарса тирпейлес тĕллевпе илсе килнĕ пулмалла. Вăхăт шунă, ал ҫитереймен: ҫулсем иртнĕ майăн чул купи тăррине курăк шăтса тухма та ĕлкĕрнĕ. Кунта колхоз выльăхне кил тăрăх валеҫсе парса самăртас ĕҫе йĕркелесе янă. Ҫапах та ку йыш пысăк мар: пурĕ те 20 пуҫ кăна. Илес текенсем тата та пур, анчах скотниксем килĕшмеҫҫĕ, хăйсем укҫа сахал илме пуҫласран хăраҫҫĕ. Укҫи чăн та хĕсĕкрех ĕнтĕ. Колхозăн сутса тупăш курмалли нимĕнех те ҫук. Тырă пĕлтĕр гектартан пурĕ те 13 центнер кăна туса илнĕ. Ҫĕрулми тухăҫĕ 33 центнертан та иртеймен. Ҫĕт ҫук, ҫăм ҫук, какай сахал! Колхоз касси пушă, кивҫен памалли чылай. Ҫынсем виҫҫĕмĕш уйăх кĕтмелле ĕҫлеҫҫĕ.

-Патшалăх ҫуракине хатĕрленме ҫĕр аллă пин кивҫен пачĕ. Запаслă пайсем те, топливо-бензин та питĕ хаклă. Ку укҫана урăх тĕллевпе салатма пултараймастпăр, - тет колхозăн главнăй бухгалтерĕ Вера Алексеева.

Яблоновка - вырăс ялĕ. Вера Егоровна Алексеева - чăваш хĕрĕ. Колхоз уйрăлнă хыҫҫăн ăна кӳршĕ ялтан чĕнсе килнĕ. Урам тăваткалĕнче лартнă шурă ҫуртран пĕри - унăн валли. Лайăх специалистсене хаклаҫҫĕ кунта. Алексеева хваттерĕпе юнашарах - колхоз правленийĕ валли ҫĕнĕрен тума пуҫланă ҫурт. Ăна хăтласа ҫитереймен–ха. Укҫа ҫук, материалсем ҫитмеҫҫĕ, айккинчен килсе кĕрĕшекен строительсем питĕ хаклă ыйтаҫҫĕ. Хуҫалăхра ҫĕнĕрен пăру витти тума пуҫланă. Халлĕхе

арккӑсене кӑна ҫӗкленӗ-ха. Хӑҫан туса пӗтересси пӑхса та курӑнмасть. Ӑҫтан тупмалла укҫа, кам парать ӑна? Никам та парасшӑн мар. Хуҫалӑхӑн 1300 гектар сухалакан ҫӗр, улӑх–ҫарансемпе вӑрмансем 600 гектара яхӑн. Акӑ ӑҫта вӑл пуянлӑх, акӑ ӑҫта вӑл укҫа ҫӑлкуҫӗ! Халлӗхе вӑл ҫӑлкуҫ пулса тӑрайман–ха. Колхозниксем каласа панӑ тӑрӑх, председатель кӑҫал вӑрлӑх пахалӑхне лайӑхлатас енӗпе "лава" вырӑнтан хускатнӑ. Пысӑк репродукциллӗ тӗштырӑ вӑрлӑхӗсем илсе килнӗ, ҫӗрулми вӑрлӑхӗ шыраҫҫӗ. Чӑнах та, килсерен пуҫтарса лартнӑ вӑрлӑхпа ӑҫтан тухӑҫлӑ ҫӗрулми туса илӗн?

Улмаллӑн чи пысӑк инкекӗ - ҫул ҫукки. Тухса ҫӳреме кансӗрри панулми тути мар, шарак тӑвар тути калаттарнӑ кунти ҫынсене. Колхозниксем унччен республикӑра Министрсен Совечӗн Председателӗн заместителӗнче ӗҫленӗ В.Агафонова ырӑпа аса илеҫҫӗ. Вӗсем каланӑ тӑрӑх, Валентин Алексеевич ку хуҫалӑхра ҫулталӑкне иккӗрен кая мар пулнӑ. Ахӑртнех, вӑл пуҫарнипе Улмаллӑна Тутар республикин ҫӗрӗсем урлах асфальт ҫул тутарма пуҫланӑ. Ӗҫсене "Таджикводстрой" трест пурнӑҫлать. Кӑҫалхи ӗҫсен калӑпӑшӗ паллӑ мар-ха. Хаксем урсах кайрӗҫ: укҫа тупма та, строительство материалӗсем хатӗрлеме те ҫӑмӑл мар. Валентин Алексеевич Агафонов та Мускавра ӗҫлет ӗнтӗ. Ан манса кайтӑрччӗ вӑл Чӑвашъенӗн чи аякри пӗчӗк ялӗнче хӑй чӗртсе янӑ пысӑк пуҫарӑва. Ҫакӑн пирки хамӑр республика руководителӗсем те шухӑшласа пӑхсан аван пулмалла.

Кунти тӗлпулусенчен мана ҫитес ҫул пенсие тухма хатӗрленекен Анна Николаевна Алексеева колхозницӑпа курса калаҫни асра тӑрса юлчӗ. Анна Николаевна ӗмӗрне колхозра ӗҫлесе ирттернӗ: тырӑ та вырнӑ вӑл, выльӑх та пӑхнӑ, утӑ ҫулнӑ, вутӑ ҫурнӑ. Тӑван ялне Алексеева тӑван амӑшне юратнӑ пек юратать.

-Ҫулла килӗр пирӗн пата, панулмисем пыл тути каланӑ чухне килсе кайӑр, - терӗ вӑл ӑсатса янӑ май. Тавах ӑна, панулми мӗн тути каланине манман-ха вӑл, анчах та улмаллӑсем халлӗхе панулми мар, тар тутине ытларах тутанаҫҫӗ пулмалла-ха. Йывӑр вӗсен пурнӑҫӗ.

Каялла Пӑчӑрлӑ Пашьелне ҫитиччен Анатолий Бондарев тракторпа лартса тухрӗ. Бензовозсем райцентра топливо илме кайнӑ та (ҫул лайӑх тӑнӑ чухне хатӗрлеймен), вӗсене асфальт ҫине тухса кӗтсе илмелле. Анатолий кӑҫал хӗрӗх тултарать, вӑйпитти ҫын, хӑех тракторист, комбайнер, шофер, платник, каменщик (хӗрӗх те пӗр ӗҫ пӗлет, теҫҫӗ ун пек этем пирки). Инкеклӗ ҫула тракторпа чавтарса та иштерсе тухнӑ чухне ӑшша пиҫрӗ вӑл. Ӳт тарӗ штормовка витӗр тапса тухрӗ.

Хӑйне ӗмӗрлӗхе усӑ курма ҫӗр, ӗҫлесе хатӗрлеме техника, вӑрлӑх тата ытти хатӗрсем парас-тӑк фермер пулма килӗшӗ-и е.килӗшмӗ тесе ыйтса тӗпчеме тытӑнтӑм эпӗ унран.

-Ма килӗшес мар. Ялхуҫалӑхӗнче пӗлмен ӗҫ ҫук манӑн.

4-37216

НАЦИОНАЛЬНАЯ

Сывлăх лайăх. Килĕшмелле, - терĕ вăл.

Унăн сăмахĕсене итлесе савăнса та ĕлкĕреймерĕм, Анатолий урăхла çавăрса хучĕ:

-Ытла та ответлă вăл çĕре алра тытса тăрасси. Панкрута тухма пулать. Колхозрах лайăх, - çапла пулчĕ унăн юлашки сăмахĕ.

Калаçу малалла та тăсăлатчĕ-тĕр, анчах манăн Анатолий Бондаревпа уйрăлмалла пулчĕ.

1994 ç.

УЛТАВЛĂ ВАУЧЕР

Канашран Комсомольски районĕнчи Хирти Сĕнтĕр ялне каякан автобус çинче Анна Федоровна Ивановăпа юнашар ларса пыма тӳр килчĕ. Анна аппа çамрăк мар ĕнтĕ, çитмĕлтен те тахçанах иртнĕ. Килте йăмăкĕпе иккĕшех пурăнаççĕ, ватлăх çитнипе паракан пенси илеççĕ. Мăшăрланмасăрах пурăнса ирттерме тивнĕ Анна Ивановăна. Йăмăкĕ те, вăтăр çул ытла шкул ачисене вĕрентнĕскер, çемье çавăрайман. "Пус çумне пус хушса ĕмĕрĕпе пуçтарнă çирĕм çичĕ пин тенкĕ тăватăмçул укçа улшăннă чухне йыт çӳппине тăрса юлчĕ. Йăмăк тахçанах çурта çĕнетесшĕнччĕ, тăррине çут тимĕр виттересшĕнччĕ. Пулмарĕ. Халь мана "вĕреннĕ çын вĕренмен çынна итлесе мăшкăл куртăм" тесе вăрçать. Ман мĕн винавачĕ? Патшалăхĕ винават, çав тĕп турĕ!" - тарăхать Анна аппа. Хăй калана тăрăх, ваучер текен "хут таткипе" чеерех пулнă-мĕн вăл. Ялтан яла йывăр кутамккасем çĕклесе çӳрекен чикансенчен пĕр ваучерта пилĕк мăшăр тарăн калушпа улăштарса юлнă. "Виличчен тăхăнсан та тăхăнса пĕтерес çук. Кӳршĕ, Санькка кума, улталанчĕ, ав. Ваучер парса "Селен" текен акцисем туяннă çавскер. Иккĕмĕш çул укçа килессе кĕтет. Пĕр пус та илеймен-ха. Тарăхать кума, "Селен" мар, çĕлен пулчĕ-тĕр ку" тесе ятлаçать - хăй пăшăрханăвне те, хĕпĕртĕвне те пытармасть кинемей.

Сахал-и Анна аппа пек улталанса юлнисем Чăваш тăрăхĕнче? Кашни ялтах вуншарăн та, çĕршерĕн те вĕсем - хăй вăхăтĕнче патшалăха тăрантарса пурăннă çынсем. Паян та çавсемех юлашки вăя пухса выльăх усраççĕ, кĕркуннесенче вăкăрĕсемпе сыснисене çурма хакпах вырнаçтарас тесе ĕштеленсе çӳреççĕ. Чиновниксем, тӳре-шара, тĕрлĕ йăх-ях вĕсем умĕнчи парăма ĕмĕр тӳлесен ĕмĕр парса татас çук. Приватизаци тĕлĕшĕнчен тунă тепĕр пысăк ултав, çарату пулса тăчĕ. Комсомольски районĕнче, акă, 29 пин çынна яхăн пурăнать. Патшалăх программине пурнăçласа, хистесе тата пусахласа тенĕ пекех районти халăха (25-шер тенкĕ кашнинчен илсе юлса) 28 пин ваучер салатса панă. Райцентрта тĕрлĕрен фондсен виçĕ представительстви ĕçлет. Администраци çуртĕнче, перекет банкĕнче тата почтăра вырнаçнă вĕсем. Салатса панă 28 пин ваучертан 8 пинне кăна акцисемпе улăштарса илнĕ. Ăçта ытти

çирĕм пинĕ? Паллах, ваучерсене хуласенчи фондсене вырнаçтаракансем те пулнах ĕнтĕ, çак "хаклă хута" аякра пурăнакан ывăл-хĕрĕсене, тăванĕсене "парнеленĕ" ват çынсем те сахалах пулман тейĕпĕр. Чылайăшĕ (Анна аппа хăраххисем) чикансенчен ваучерпа япала улăштарса юлнă е ăна спекулянтсене сутса янă. Çапах та акцисемпе улăштарма "ăс" çитернисем те сакăр пин çын-çке-ха районта. Вĕсен акциййĕсен шăпи еплерех, миçешер пин тенкĕ дивиденд илнĕ çак тапхăрта "телейлĕ" акционерсем?

Районти почта çыхăнăвĕн кантурĕнче кун пирки мана фондсен представителĕ Лариса Александровна Гордова лайăх ăнлантарса пачĕ. Вунпилĕк акционерлă обществăн акциййĕсене çынсем хушшинче салатнă вăл çак тапхăрта. Акцисене (свидетельствăсене) ваучерпа улăштарнă чухне кашнинех тăватçĕр тенкĕрен пуçласа пин тенкĕ таранччен укçа тӳлеттернĕ (йĕрке тăрăх çапла тумалла). "Нефть-алмаз-инвест", "Московская-инвест" тата ытти нумай-нумай обществăсен акциййĕсемпе тивĕçтернĕ Лариса Александровна халăха. Пурĕ виçĕ пине яхăн ваучер пухăннă. Халĕ çав çынсем дивиденд ыйтаççĕ (пĕлтĕрхи пĕрремĕш, виççĕмĕш кварталсемшĕн). Анчах та халлĕхе пĕр çын та пĕр тенкĕ тытса курайман-ха. Тытса курасси те паллă мар. "МММ-инвест" акционерлă общество, хăй типшара лекиччен кăшт çеç маларах, темиçе çынна пилĕкшер пин тенкĕ куçарса панă ĕнтĕ. Дивиденд тӳлес тĕлĕшпе халлĕхе урăхла улшăнусем çук-ха.

Хăй вăхăтĕнче халăха ваучерсемпе тивĕçтерес енĕпе ĕçленĕ, халĕ фондсен представителĕ шутланакан Валентина Ивановна Ласточкина та хавасах мар. Çынсем унран та дивиденд хăçан пуласси пирки ыйтаççĕ. Мускаври тата ытти аякри хуласенчи акционерлă обществăсем пирки В.Ласточкина нимех те калаймасть. "Селен" тата "Надежда" обществăсенче лару-тăру еплерехрине вăл аванах чухлать. Мĕншĕн тесен вĕсем "Шупашкарти керамика" (керамблоксен завочĕ) тата "Çĕнĕ Шупашкарти строительство материалĕсен завочĕ" (силикат кирпĕч кăларакан завод) акционерлă обществăсем çинче никĕсленсе тăраççĕ. Кунта та лару-тăру чаплах мар. Виçĕмçул пĕрремĕш кварталта "Селен" малтанхи акционерсене (вĕсем ун чухне питĕ сахалăн пулнă) кăштах укçа парса пăхнă. Ун хыççăн нимĕнле сас-хура та пулман. "Надежда" иртнĕ çулхи май уйăхĕнче акционерсен пухăвне ирттернĕ, 1993 çул итогĕсемпе 15 миллион тенкĕ дивиденд пама май пурри çинчен пĕлтернĕ. Анчах та акцисене тытса тăракансем пайласан, çак суммăран кашнине пин тенкĕ те лекмест-мĕн. Вара темиçе миллион тенке обществăна аталантармалли фонда хывма калаçса татăлнă.

Кăçал та акционерлă обществăсенчен пысăк дивидендсем илес шанчăк çук. Статистика органĕсем пĕлтернĕ тăрăх, республикăра халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсенче 623 предприятие приватизациленĕ. Халĕ вĕсем патшалăхăн мар

ĕнтĕ, халĕ вĕсенче акционерсем хуҫа пулса тăраççĕ. Патшалăх алли пусса тăмасть: ĕçле, пуçаруллă пул, пысăк тупăш илме тăрăш! Тупăшĕ те, укçи те çав-çавах çук. Вуншар предприяти панкрута тухса пырать. Лайăх ĕçлекеннине те налук чăпăрккипе ăшалантарсах тăраççĕ. Çич-сакăр тĕрлĕ налук тӳлемелле, пенси фондне укçа хывмалла, ĕççĕррисене тытса тăма куçармалла, тата ытти, тата ытти те...

Мĕнле дивиденд кĕтме пулать, сăмахран, “Канашри сыркомбинат” акционерлă обществăран. Вăл чăннипех те панкрута тухнă, унăн парăмĕсем виçĕ миллиард тенкĕрен иртсе кайнă. Дивиденд мар, ĕçлекенсене те темиçе уйăх шалу тӳлеймест. Республикăра приватизациленĕ çакăн пек предприятисем вуншарăн шутланаççĕ. Кун пек лару-тăрура, паллах, ваучер парса калуш туянса юлнисем дивиденд кĕтсе лараканасенчен телейлĕрех.

1994 ç.

АН ЯР, ТЫТ ХЫТĂРАХ, ЯРГУНОВ!

Пуçласа ăна тăватă-пилĕк çул каялла Чăваш писателĕсен Союзĕнчи парторганизаци секретарĕн пӳлĕмĕнче курнăччĕ. Вăтам пӳллĕ чипер кăна арçын, куçлăхпа. Пĕрре пăхсах вăл хут ĕçĕпе пурăнни сисĕнет, сăнĕ-пуçĕпе “Арçури” балладăн авторне Хурапха Хĕветĕрне - Михаил Федорова аса илтерет. Хушамачĕ Яргунов иккен, чĕнессе Герман тесе чĕнеççĕ. Парти обкомĕн идеологи пайĕнче творчество союзĕсемпе ĕçлекен сектора ертсе пырать-мĕн. Партсекретарьпе вăл ун чухне писатель-коммунистсен творчествăри тата пурнăçри активлăхне ӳстересси пирки сăмахларĕ, нумаях пулмасть иртсе кайнă черетлĕ пленум решенийĕсене аса илчĕ.

Перестройка текен тапхăр та çитсе çапăннăччĕ ĕнтĕ. Пĕр вăхăт манăн та райком секретарĕнче ĕçлесе пăхмалла пулчĕ. Обкомăн идеологи пайĕн пуçлăхĕн çумми, правур та ĕçшĕн хыпса çунакан хĕрарăм, пирĕн района эрнелĕхех командировкăна килсен, пĕррехинче эпĕ унран Герман Алексеевич Яргунов пирки ыйтса пĕлтĕм.

-Кайрĕ вăл пирĕн патăртан. Обком урлă виçĕ пӳлĕмлĕ пысăк хваттер илнĕ хыççăн та ĕçлемерĕ. Пырасса та чаплă хваттерлĕ пулас ĕмĕтпе кăна пынăччĕ пулмалла та, малтанах сиссе илеймерĕмĕр çав, - яланхи пекех тӳррĕн хуравларĕ командировкăри хĕрарăм.

Перестройка хыççăнах путч анри-сухри пурнăçа тăр-тăр чĕтрентерсе илчĕ. Партаппаратчиксемпе партноменклатурщиксем, урăх тĕспе сăрланма ĕлкĕрнĕскерсем, патшалăх влаçĕн органĕсене те, идеологи учрежденийĕсене те çĕнĕрен кĕрсе ларчĕç. Вăл вăхăталла Герман Яргунов ячĕ те ян-ян! янăрасах тăратчĕ ĕнтĕ. Ăна Пичет ирĕклĕхĕпе сыхлакан инспекци начальникне лартса хучĕç. Сыхламалла-и демократи

çунат панă хаçат-журнала, радиопа телевиденине унтан-кунтан тапăнасран? Сыхламалла! Сыхласси пулчĕ-ши пичет ирĕклĕхне Яргунов енчен - çавна пĕлместĕп, илтмен. Анчах та "Хресчен сасси" редакцине вăл: "Апла çырма юрамасть те капла тума юрамасть", - тесе пĕр-икĕ хутчен те асăрхаттарнине лайăх астăватăп.

Мĕн вăл пичетленсе тухнă хыççăн вăл е ку пирки асăрхаттарни? Мĕн усси ун пек тунинчен? Пичетлемелле е пичетлемелле марри çинчен малтан хушу парасчĕ те - аласем кĕске, ун пек тума юрамасть, закон хушмасть. Пичет ирĕклĕхне сыхлакан инспекци начальникĕн те çук ун пек право. Ăçта кăтартма пулать-ха ху влаçра тăнине ытти çынсене? Пур-и ун пек должнăç хаçат-журнал, радио-телевидени таврашĕнче? Шутланă-ши кун пирки Георгий Яргунов те шутламан - çакăн пирки татăклă калама йывăр, анчах та телерадиокомпанин пуçлăхĕн радио енĕпе ĕçлекен заместительне лартнă (халĕ вăл унта ĕçлет) хыççăнах вăл хăйĕн аллинче пысăк влаç пуррине лайăх кăтартма тытăнчĕ. Унчченрех радиопа кашни ирех хаçатсене тишкерсе тухнине астуса юлнах ĕнтĕ эсĕ, хаклă вулаканăмăр. Г.Яргунов пуçлăх çумминче ĕçлеме пуçланăранпа çакăн пек тишкерӳсем эфира тухма пăрахрĕç. "Хресчен сасси" мĕн çинчен çырни те, редакци хатĕрленĕ тишкерӳ тексчĕ те Герман Алексеевичăн кăмăлне каймасть. Çук-çук, чĕлхе шăйрăкĕсемпе стиль çитменлĕхĕсем çинчен сăмах пымасть кунта. Яргунова содержани çырлахтармасть. Хаçат министра критиклет - ун пирки радиопа сăмах кăларасран турă сыхлатăр, хаçат хресчен хăйĕн нушипе пĕччен тăрса юлни çинчен пăшăрханса çырать - калама юрать-и вара çĕр-çĕр пин радио итлекене çакăн пек "çылăхлă" шухăша. Тишкерӳре район пуçлăхĕсенчен пĕрне ĕçрен хăтарнин сăлтавĕсем пирки пичетленнĕ статьясем çинчен темиçе сăмах пур - кăлармалла мар вĕсене эфира. Указран та ăнланмалларах кам каласа пама пултартăр çакăн пирки? Указ пур - çителĕклĕ! Çапла вара, малтанах укçа куçарса хунă пулсан та (хаçат тишкерĕвне радиопа панăшăн укçа тӳлемелле). Яргунов кăмăлне çырлахтарайман обзор эфира тухаймасăрах пăчланать.

Хаçат тишкерĕвĕсем çапла пăчланни - çур инкек. Чăвашрадиора политика кăларăмĕсем, ялхуçалăх аталанăвĕпе çыхăннă передачăсем ан вăйсăрланччăрччĕç.

Герман Яргунов - ученăй-филолог. Вăл Константин Ивановăн "Нарспине" тишкерсе кĕнеке те кăларнă теççĕ, аппа-тăк хăй те поэмăна пăхмасăрах калама пĕлет-тĕр.

"Хĕне, хĕне, Тăхтаман,
Санран çамрăк ан култăр!
Асаплантар, Тăхтаман,
Нарспи часрах ватăлтăр", - тенĕ поэмăра.

Герман Алексеевича эпир çапла сĕнсе каласшăн: хытăрах тыт, ан яр аллунтан радио тилхепине (держи и не пущай)! Ирĕк

шухăш ан пултăр унта. Официаллă установка текен ăнлану картăнчен иртекен пĕр сăмах та ан янратăр эфирта. Хăйне евĕр шухăшлакан, калаçакан çынсене ан çывхарт радиотавраршне!

ПИРĔН ПАТĂРТИ АФГАНИСТАН

Ирхине 8 сехетре редакци телефонĕ шăнкăртатса кайрĕ.

-Судмедэкспертизăн республикăри бюровĕн начальникĕ Миронец калаçать. Эпĕ "Хресчен сасси" хаçат редакцинче Афган вăрçинче пулнă çынсем ĕçлеççĕ тенине илтнĕ. Халех, пĕр тăхтаса тăмасăрах килĕр-ха пирĕн пата. Хамăр республикăри "Афганистана" кăтартасшăн эпĕ сире. Кĕтетĕп...

Пирĕн редакцинче ĕçлекенсенчен Афган вăрçине никам та хутшăнман пулсан та, чĕннĕ çĕре кайса килме шутларăмăр. Судмедэкспертизăн республикăри бюровĕ тата унăн Шупашкар хулинчи уйрăмĕ Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультечĕн корпусĕсенчен пĕринче, пĕрремĕш хутри пысăках мар пӳлĕмсенче вырнаçнă. Хуйхăллă сăн-питлĕ çынсен ушкăнĕ патĕнчен иртсе (кунта вĕсем хăйсен вилнĕ тăванĕсене кастарма илсе килнĕ), сывлăха сыхлас ĕç министрĕн заместителĕпе Николай Николаевич Николаевпа судмедэкспертиза бюровĕн начальникĕн кабинетне кĕретпĕр. Евгений Никитич Миронец сĕтел хушшинче пĕччен мар, çакăнтах медицина работникĕсен профсоюз рескомĕн председателĕ Владимир Александрович Светлов ларать.

Врач-экспертсем ĕçлекен çĕре кĕретпĕр. Юнланса пĕтнĕ халат тăхăннă çынсем тимĕрпе витнĕ сĕтелсем çинче пӳкле вилнисене касаççĕ. Кушеткăсемпе сĕтелсене, урайне çĕр тĕсĕ çапнă сăнсем, çара урасем йышăнса илнĕ. Йĕрки-йĕркипе хурса тухнă вилесем хушшипе утма та, малалла иртме те кансĕр. Шурă пӳспе те, çивиттипе те витмен вĕсене, айĕсенче наçилкке-мĕн çук. Сисмесĕрех шутлама тытăнатăп: пĕрре, иккĕ..., çиччĕ, саккăр..., вун иккĕ, вунвиççĕ... Пурĕ вун пиллĕкĕн вĕсем кунта - хăйсен "черетне" кĕтсе выртакансем. Кун тин çеç пуçланать-ха. Кăнтăрла иртиччен çак çĕрме тытăннă ӳтпе юн шăрши çапнă пӳлĕме тата миçен килсе выртасси те паллă мар. Мĕншĕн тесен ку уйрăма пӳкле вилнисен ӳчĕсем тĕп хуларан, Шупашкар тата Муркаш районĕсенчен килсе тăраççĕ-çке-ха. Хулапа унăн йĕри-тавраршĕнчи ялсенче пурăнакансем те, вилекенсем те йышлă.

Больницăсемпе медицина учрежденийĕсем чылай çĕрте (судмедэкспертиза бюровĕн уйрăмĕсем те медицина учрежденийĕсемех: вĕсене укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен те, кадрсем енĕпе те сывлăх министерстви тытса тăрать) йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкнине пĕлместпĕр мар-ха, анчах та çӳç-пуç вирелле тăмалла çакăн пек хăтсăрлăхпа, чуна ыраттаракан чухăнлăхпа тата тăварлăхпа тĕл пуласса тĕлĕкре те тĕлленмен. Судпа медицина тĕпчевĕн бюровĕ пирĕн республикăра 1947 çултанпа ĕçлет. Хĕрĕх пилĕк çул хушшинче ятарлă çурта та тивĕçеймен

вăл, хваттерте тăракан хăрхăм пек, унта-кунта хĕсĕнкелесе ĕçлесе пурăнать. Бюро начальникĕпе сывлăха сыхлас ĕç министрĕн çумми каланă тăрăх, ятарлă çурт-йĕр лартма проектпа смета документĕсем хатĕрлесе çитернĕ. Строительство ĕçĕсене çитес çул пуçласа ямалла. Кун пирки Аслă Советра та, правительствăра та йышăнусем пур. Пуçлас пулсан та, объекчĕ чылаях пысăккине кура, ăна часах ĕçе кĕртейес çук. Тăватă-пилĕк çул та иртсе кайма пултарать. Эрех ĕçсе, çакăнса-чикĕнсе, наркăмăшланса пĕтекенсен, сасартăк вилекенсен, преступниксен тискерлĕхне пула çут тĕнчепе сывпуллашакансен йышĕ ӳссех пырать. Виçĕ çул каялла республикăри судмедэкспертиза специалисчĕсем 2686 вилнĕ çынна касса тĕпченĕ. Кăçалхи вунă уйăхра ку цифра 3600 çитнĕ. Çулталăк вĕçлениччен тăватă пинрен кая пулмасть тесе пăшăрханаççĕ бюро начальникĕпе уйрăмсен ертӳçисем. Ик-виçĕ çул хушшинче сасартăк тата пӳкле вилекенсен йышĕ пĕр пин çурра яхăн хутшăннă. Обществăри лару-тăру йывăрланса, тĕнче пăсăлса пынине кăтартмасть-и-ха çакă? Паллах, кăтартать. Статистика цифрисене илсе кăтартма йывăр мар. Йывăрлăхĕ пĕтĕмпех эксперт-врачсем çине тиенет. Унччен хи штатсемпех, унччен хи тăвăрлăхрах калăпăшĕ нумай пысăкланнă ĕçе туса пыма тивет вĕсене.

Тăвăрлăх тенĕрен, судмедэкспертизăн хăш-пĕр районсенчи уйрăмĕсенче лару-тăру Шупашкартинчен те йывăртарах. Акă, мĕн каласа парать çакăн пирки пай заведующийĕнче ĕçлекен Татьяна Антоновна Аникина:

“Лару-тăру уйрăмах Етĕрне, Çĕрпӳ, Улатăр районĕсенче япăх. Экспертсем мунча пек çуртсенче ĕçлеççĕ. Хĕлле хăйсем ĕçлекен вырăнсене хăйсемех хутса ăшăтаççĕ, хăйсемех ăшă шыв хатĕрлеççĕ. Водопровод пирки шутламалли те çук. Шыва куркапа ярса тăраççĕ. Черет пулсан та, çурта вилнĕ çынсенчен пĕрне кăна илсе кĕме пулать. Ытти сем вырнаçмаççĕ. Çакăн пек условисенче пилĕк-ултă çынна касни те час-часах пулать. Патăръелĕнчи моргăн пĕр енче çӳп-çапă тăкмалли вырăн, тепĕр енче - сысна вити”.

Светлана Васильевна Хромовăна итлесе пăхар-ха:

“Бомжсен, тăван-хурăнташ çук çынсен виллисем те пирĕн пата лекеççĕ. Хамăр шăтăк чавтарса хамăр мĕн чухлĕ пытарнă вĕсене. Юрать, ку ĕçе халь вилнĕ çынсене тирпейлесе пытаракан бюро хăй çине илчĕ. Кашни кун пирĕн витĕр темиçе çын вилли те тухать. Чуна хускатмасть-и, чĕрене ыраттармасть-и çакă? Ыраттарать, питĕ ыраттарать. Хăшĕ-пĕрисем, уйрăмах ĕçе нумай пулмасть килнисем чăтаймаççĕ. Тухса каяççĕ. Ĕçке ернĕ тĕслĕхсем те пулнă”.

Судмедэкспертиза бюровĕн чылай уйрăмĕсенче икĕ е виçĕ çын пурнăçламалли ĕçсене пĕр çын туса пырать. Ĕç укçине икĕ-виçĕ çыншăн илеймест, паллах. Сывлăха сыхлас ĕç министерстви штатсене ӳстерме чармасть. Анчах тăвăр

лабораторисемпе хĕсĕк пӳлĕмсенче ăçта вырнаçтарса пĕтерĕнха çĕнĕрен илнĕ çынсене? Тĕпчевсем ирттерме çĕнĕ оборудовани, материалсем кирлĕ. Çук вĕсем, хăçан пуласси те паллă мар. Çакăн пирки физикотехнически уйрăм заведующийĕ Геннадий Петрович Петров тарăхса каласа пачĕ:

"Экспертсем 12 ставкăллăх ĕç туса пыраççĕ, вĕсене сакăр ставка çурăшăн тӳлеççĕ. Вунă уйăхра 20038 объекта (вилнĕ çын ӳчĕ-тирĕ, шăмми, ăшĕ-чикки) тĕпчесе тĕрĕсленĕ. Оборудовани кивĕ, ĕçлеме тата та тăвăрланчĕ, кун пек условисенче йăнăшсем пулма пултараççĕ.

Судмедэкспертиза, паллах, сывлăха сиплекен учреждени мар. Çапах та унта та врачсем, специалистсем ĕçлеççĕ. Хăйсене вĕсем шанчăка çухатнă çынсем пек тыткалаççĕ. Ĕç условийĕсене лайăхлатас енĕпе пулăшу парайманнипе-и е урăх сăлтавсемпе - кунта профсоюз организацийĕ те саланса кайнă. Врачсемпе санитарсем, ытти специалистсем профсоюзран тухнă. Хăйсен ĕçĕпе пурнăçĕнче лайăх улшăнусем пуласса вĕсем кĕтмеççĕ те, шанмаççĕ те. Вилĕ ӳт, юнпа пӳр, сирсе сирĕлми лĕклентерекен йывăр шăршă вĕсене тахçанах йăлăхтарнă. Çапах та ĕçлемелле: çак ĕçе вĕсем тумасан кам тăвать?

Йывăр шухăшсемпе, пусарăнчăк кăмăлпа, урăх кунта килсе курма Турă ан хуштăр тесе тухрăм эпĕ çак çуртран.

ХИСЕПЛĔ РЕТРЕН - МАСАР ХĔРРИНЕ

Шупашкарăн çĕнĕ масарĕ. Йĕрки-йĕркипе вилтăприсем, вилтăприсем... Вун-вун çын пурнăçран уйрăлса кунта яланлăх канăç тупнă. Палăксем çинчи сăнӳкерчĕксем çеç ку этемсем нумаях пулмасть кăна-ха çĕр çинчи мĕнпур çынсем пекех савăнма та, хурланма та, юратма та пултарнине ĕнентерсе параççĕ. Çăван леш енче, вăрман хĕрринерех, палăксем хушшинче паллă мар вилтăпри пур. Ăна хальхаççăн анчах тирпейлени çывăха пырсассăнах курăнать. Тĕмеске çинчи чечек кăшăлĕсем те пĕтĕмпех юрпа витĕнеймен-ха, ылтăн шывĕпе çырнă хура хăю çил çинче вĕлкĕшет. Тăпра çинче шалча вырăнне лартнă акаци турачĕсĕр пуçне урăх нимĕн те çук. Гранитран, мрамортан, тимĕртен тунă палăксем, вăхăтлăх вырнаçтарнă йывăç хĕрессем хушшинче ытла та тăлăххăн, ытла та хисепсĕррĕн курăнать-çке ку вилтăпри. Кунта Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ культура ĕçченне, чăвашсен паллă критикне тата ученăйне Ипполит Иванович Иванова (Ипполит Шордана) пытарнă. Ватти çитнĕ çын теме те çукчĕ ăна, чир-чĕрпе хăшкăлни те сисĕнсех каймастчĕ-ха. Нарăсăн тăваттăмĕшĕнче выртрĕ те вилсе кайрĕ. Уçă кăмăллă та ырă çынччĕ Ипполит Иванович, тимлĕхĕ пысăкчĕ, ĕçлеме юрататчĕ. Ăслă кĕнекесем чылай кăларчĕ, журналсенче çапăнсах тăратчĕ. Хăй вăхăтĕнче хаçат редакцийĕсемпе кĕнеке издательствинчи тата наукăпа

тĕпчев институтĕнчи самаях пысăк вырăнсенче ертӳçĕ пулса ĕçлени пирки кунта калама кирлех те мар-тăр.

Ипполит Ивановăн ăслăлăхпа творчествăри пурнăçĕ, чăнах та, ăнăçлах пулчĕ, анчах çемье телейĕ тени ун тĕллĕн хăй тупанне кăтартнипех çырлахрĕ. Ун пек чухне вилнĕ çынна тирпейлесе пытарас ĕç-пуç ытларах вăл ĕçленĕ коллектив çине тиенет. Ипполит Шордан ĕçленĕ организацисем вара Шупашкарта тăваттă-пиллĕк. Вăл нумай çул хушши чăваш çыравçисен творчество союзĕн членĕ пулнине шута илсе, пытару комиссийĕ Писательсен çуртĕнче йĕркеленет. Комисси председателĕ Республикăри Министрсен Совечĕпе çыхăнать, Ипполит Иванова Карачурари кивĕ масар çинчи Хиселлĕ рете пытарма ирĕк илет. Транспорт пирки те, музыкантсене чĕнесси çинчен те вăхăтра калаçса татăлаççĕ. Вилнĕ писателе хунă тупăка Писательсен çурчĕн иккĕмĕш хутне вырнаçтараççĕ.

Ĕç-пуç пытарас кун ыран тенĕ чухне чĕрре кĕрсе чăлханма пуçлать. Чаплă писательсемпе ăслăлăх çыннисене пытарнă Хиселлĕ ретре шăтăк чавмалли ятарлă машина çĕмĕрĕлсе кайнă иккен, оркестр пуласси те паллă мар, палăк хатĕрлессин уççи-хуппи çук. Пытарас ĕçе йĕркелеме уйăрнă укçа-тенкĕ сахалраххи палăрать. Ăна-кăна туянмалла, асăннă чухне те укçа чылаях кирлĕ пулать. "Хыпар" хаçат редакцийĕ, Чăваш кĕнеке издательстви, наукăпа тĕпчев институчĕ, Писательсен Союзĕ укçа хывни чылаях пулăшать-ха ĕнтĕ. Анчах çак укçа ăçта кайнă-ши?

Пытару комиссийĕн сапаланчăклăхĕ, çине тăманни, ĕçе пĕр-пĕрин çине йăвантарни Ипполит Ивановича пытарнă кун уйрăмах вăйлă палăрать. Комисси членĕ председателе ирхине шăтăк халĕ те хатĕр марри çинчен пĕлтерет. Оркестр тытас шанчăк çук ĕнтĕ. Палăкне кайран хатĕрлесе лартма калаçса татăлаççĕ.

Министрсен Совечĕн йышăнăвне пурнăçламаншăн, паллах, масарсем енĕпе ĕçлекен нумай отраслĕ предприяти руководителĕ айăплă. Анчах мĕн туса ларнă-ха çав вăхăтра писательсен Союзĕнчи, издательствăри, наукăпа тĕпчев институтĕнчи вун-вун вăйпитти арçын. Мĕншĕн тытас мар алла кĕреçе е лум? Тирпейлĕн ĕçлесен те виле шăтăкне тăххăрăн хĕллехи шартламара икĕ сехетре алтса хума пулать. Ялта пулнă пулсан, кам экскаватор е бульдозер кĕртнĕ пулĕччĕ масар çине?

Карачура масарĕ çинчи Хиселлĕ рете ятарласа кĕрсе тухмалла пулчĕ. Кунта питĕ тирпейлĕ те хăтлă. Республикăн нумай чаплă çыннисемпе иртнĕ çулсенче пиртен уйрăлса кайнă Василий Алакĕр, Александр Кăлкан писательсен вилтăприсем пур. Ипполит Шорданăн та çакăнтах выртмаллаччĕ. Этем явапсăрлăхĕпе тимсĕрлĕхĕ, тĕр-тĕр самана апла тума памарĕç.

Нарăсăн улттăмĕшĕнче вара событисем малалла çапла аталаннă. Вилнĕ юлташне хăвăртрах пытарма васкакан ушкăн ирхине вунă сехетрех ӳте Писательсен çуртĕнчен илсе тухас

пирки ăшталанма тытăнать. Ипполит Ивановича çĕнĕ масарти пĕр кĕтесри шăтăк патне илсе пыраççĕ. Унтах ăна хурлăхлă музыкăсăр, шăппăн та васкаса пытараççĕ.

Пумилкки виçĕ куна пыни çинчен хыпарлакансем те пулчĕç. Тĕрĕс тесе татса калаймастăп. Эпĕ унта пулман, манăн çирĕплетсе калама сăлтавăм çук. Çыравçăсем Ипполит Иванович Иванов умĕнчи хăйсен çылăхне каçарттарас тесе асăнса ĕçессине вăраха тăснă пулсан кăна.

ТАЙЛĂК ÇУРТРИ ТĂЛĂХ УЧИТЕЛЬНИЦА

Шкул çурчĕсенчен кивĕрех, япăхрах çурт-йĕр Юманкассинче урăх пĕр урамра та çук. "Кив кирĕке" саланса каясран тытса тăракан тĕревсемпе чараксене, ишĕлчĕк хуралтăсене курсан, чун сӳлетсе каять, кăмăл хуçăлать. Шкул картишĕнчи çĕрсе тĕссĕрленнĕ лапчăк пӳртĕн пĕр пӳлĕмĕнче кунта вунвиççĕмĕш çул математика вĕрентекен Елизавета Ивановна Иванова учительница пурăнать. Эпир пынă чухне вăл шăпах "килĕнчеччĕ". Тăрăхла çуртăн варринчи класĕнче - унăн хваттерĕ. Ытти иккĕшĕнче пĕрремĕш-иккĕмĕшне çӳрекенсем вĕренеççĕ. Такана пек авăннă урайсене хăçан сăрланине те пĕлме йывăр, тахçантанпах хутман кăмакапа çĕрĕшнĕ пĕренесенчен йывăр шăршă перет. Елизавета Ивановнан "кил вучахĕ" - кивелсе çитнĕ электроплитка. Унпа вăл чей вĕретсе ĕçет, апат хатĕрлет. Кашни кĕтесрех - чухăнлăх, чĕрене хĕссе ыраттаракан сăнсем. Ĕмĕрĕ иртнипе кăвак-симĕс тĕс илнĕ кантăкран кĕрекен хĕвел çути, аякра та мар сарăлса выртакан сарă тулă уйĕ кăна халлĕхе тĕнче пĕтменнине, çывăхрах ырă çутçанталăк пуррине пĕлтерсе чуна лăплантарать.

Иванова учительница хăй кунтисем мар. Трак тăрăхĕнчи Кушкă ялĕнчен вăл. Çамрăклăхĕ те тахçанах иртсе кайнă ĕнтĕ: пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ виçĕ теçеткерен ытларах. 1967 çулта Чăваш патшалăх педагогика институне пĕтернĕренпех ялти шкулсенче математика вĕрентет Елизавета Ивановна. Учитель ĕçне чи малтан Вăрнар районĕнче пуçланă. Мăшăрланнă хыççăн хăйĕн тăван ялне - Кушкăна - куçса килнĕ. Кунтах унăн ывăл çуралнă, анчах çемье пурнăçĕ ăнман. Тăван тăрăхра ултă çул ĕçленĕ хыççăн Хĕрлĕ Чутай уçлăхĕнчи Тури Çĕрпӳкасси ялне куçма тивнĕ. Сакăрвуннăмĕш çулсем ялсенче ачасен йышĕ чакнипе та палăрса юлчĕç. Вĕренекенсен шучĕ пĕчĕк - сехетсем те сахал, классем те нумай мар. Елизавета Ивановна - килнĕ çын, турищĕрпӳкассисем мар. Килнĕ çыннăн - кайни паха. Учительница каллех малашне ăçта ĕçлесси пирки пуç çĕмĕрме пуçлать. Çутĕç министерствинче ăна района кайма сĕнеççĕ, роно Юманкассинче ĕçлеме направлени парать. Ку вăхăтăлла Ивановăн ывăлĕ те кĕçĕн классене çӳреме пуçланă ĕнтĕ.

Учительница ялти пӗр килте кӗтес тупса вырнаҫать, шкулта ӗҫлеме тытӑнать. Часах ӑна директор ҫумми туса хураҫҫӗ, пилӗк ҫул хушши ҫак чӑрмавлӑ тивӗҫе те пурнӑҫласа пырать вӑл.

Ҫын патӗнче ачапа пурӑнасси пӗрре те ҫӑмӑл мар. Хӑвна ху ларсан лашман, тӑрсан тӑшман пек туятӑн. Ытти шкулсенче учительсем валли хваттерсем лартаҫҫӗ. Юманккассинче ун пек йӑла ҫук. Сурнаев директор хӑй те Канашран Юманкассине ҫӳрет, вӑхӑтне ҫул ҫинче кашни кун икӗ сехетрен кая мар ирттерет. Тӑлӑх учительницӑн хутне кӗрес, пулӑшас тесе никамах та тӑрӑшмасть. Ивановӑна шкулти пӗр класра вӑхӑтлӑха вырнаҫса пурӑнма ирӗк параҫҫӗ. Вӑхӑтлӑх тенӗ япала темиҫе ҫула тӑсӑлса каять, Иванова ҫав-ҫавах хваттерсӗр шараҫланать, часах унӑн пенсие каймалли вӑхӑт та ҫитсе тӑрать.

Учительницӑра, директор ҫумминче ӗҫлесе самаях укҫа илнӗскерӗн, хӑйӗн ҫурт лартмалла пулман-и вара унӑн теме пултараҫҫӗ вулакансем. Ҫапла, хӗрарӑм пуҫпах пӳрт-ҫурт ҫавӑракансем те пур ял-ялӗнче. Елизавета Ивановна ҫакӑн пирки ӗмӗтленмен тесе калама пултараймастпӑр. Йӳҫҫи-тутти хыҫҫӑн хӑваламасӑр тирпейлӗ пурӑнса, вӑл ватлӑх кунсем валли майӗпен укҫа хывса пынӑ, кооперативлӑ хваттер туянмалла-и унта е ҫурт лартмалла - куҫ курӗ тенӗ.

Темиҫе ҫул каялла Раҫҫей ҫӗрӗ ҫинче Сармантей самани пуҫланса кайни, перекетленӗ укҫа пулӑ хуппи вырӑнне тӑрса юлни ҫак ӗмӗте ҫурмаранах татнӑ. Ватлӑх та ҫывхарса килет, кил-ҫуртлӑ пулас шанчӑк та ҫук - мӗн тумалла.

Шанчӑк ҫухалса пынине кура, Иванова хваттер ыйтӑвне районти инстанцисенче те, Вӗрентӳ министерствинче те хускатма пуҫлать. Вӑл ҫырнӑ хутсене Министерствӑран ронона ярса параҫҫӗ. Хӑйӗн черечӗпе роно Министерствӑна хуравласа хут ҫӳретме тытӑнать. Анчах та шурӑ хутран шурӑ пӳрт лартса хураймастӑн-ҫке-ха. Районти халӑха вӗрентес ӗҫ пайӗн унччченхи ертӳҫи Ивановӑна вӑл ӗҫлекен ялта ҫурт туянса парас пирки шантарма тытӑнать. Коллективлӑ хуҫалӑх тата ял администрацийӗ Елизавета Ивановнӑна ҫур гектар таранччен ҫӗр уйӑрса параҫҫӗ. Шаннӑ йӑвара кайӑк ҫук тенӗ евӗр, ҫурт туянса парас “план” пурнӑҫланмасӑрах пӑчланать. Учительница каллех Министерствӑна хутсем ҫӳретме пикенет, ӗҫлӗ ҫынсен пӳлӗмӗсене кӗре-кӗре тухать. Роно пуҫлӑхӗсем ку хутӗнче Ивановӑна Шӑхасанта пая кӗрсе тӑвакан ҫуртра хваттер пама май пурри пирки Министерствӑна хурав параҫҫӗ. Елизавета Ивановнан ывӑлӗ техникумран вӗренсе тухса ҫарта пулма ӗлкӗрнӗ ӗнтӗ. Халӗ вӑл республикӑри пӗр хуҫалӑхра шоферта ӗҫлет, ҫынсем патӗнче кӗтес йышӑнса пурӑнать. Вӗрентӳ министерствипе ронора та пуҫлӑхсем халӗ - урӑххисем. Шӑхасанти “сухаллӑ” стройка хӑҫан вӗҫленессин, ҫурта хӑҫан хута ярассин палли-тӗлли те ҫук. Ҫурчӗ хатӗр пулсан та унта Елизавета Ивановна валли пӗр пӳлӗмлӗ хваттер пулать тесе паян татӑклӑн шантарса калакан никам та ҫук.

-Роно валли унта пилĕк хваттер пулмалла. Черетре тăракансем йышлă. Иванова вĕсем хушшинче вунпĕрмĕш шутланать. Татăклăн нимĕн калама та пултараймастăп, - тет халăха вĕрентес ĕç пайĕн пуçлăхĕ.

Ишĕлчĕк çуртри тĕттĕм кĕтесре пурăнакан мĕскĕн учительница кăçал президент администрацийĕнче те пулнă, министр кабинетне те кĕрсе курнă. Президент администрацийĕ çакăн пек "вак-тĕвекпе" чăрманас темен, министр Ивановăна Шăхасанти çурта хута ярассине тимлĕн "сăнаса" тăма хушнă.

Паян влаçра ларакан демократсем мĕскĕн çын ыйтăвне çав çын майлă татса парасса шанма йывăр.

ИШĔЛЧĔК АЙĔНЧЕ

Унăн ишĕлчĕк çурчĕ ялти клуба юнашарах ларать. Çурт теме те çук пулĕ ăна: тăрри йăтăнса аннă, пĕренесем тăнчах çĕрĕшсе хуйăрланнă, урамалла тата пахчаналла тухакан чӳречисене çĕтĕк-çурăкпа чиксе питĕрнĕ. Сивĕрен хӳтĕленес тесе-ши е урăх сăлтавпа - çурт йĕри-тавра тăпрас вырăнне кивĕ кирпĕч катăкĕсем купаласа хунă. Ытти хуралтăсем те ишĕлнĕ.

Çенĕк евĕрлĕ хушлăх витĕр шалалла кĕретпĕр. Йĕклентерекен йывăр шăршă кăмăла пăтратать, сывлăша пӳлет. Урайĕ тахçантанпах кусар та, шăпăр е мунчала та курман-тăр: талккăшпех тусан, кĕл, хăрăм. Пӳртре кăмака вырăнне вучах çавăрнă. Кил хуçи хĕрарăмĕ кутник сакки евĕрлĕ кравать çинче тĕршĕнсе выртать.

Анна Андреевна Боровская çитмĕл çулсене çитсе карчăкланнă ĕнтĕ. Инвалид пулнă май, тухсах та çӳреймест. Алли-урин тĕрекĕ çук. Çапах та калаçма ухата. Хăй ытла чухăн та тирпейсĕр пурăнни мана тĕлĕнтерсе те пăшăрхантарса пăрахнине вăл куçран пăхсах сисрĕ пулмалла: "Шанчăк тахçанах пĕтнĕ, пурнăç тĕрекне çухатнă эпĕ. Паян - пур, ыран - çук", - терĕ вăл. Май килнĕ чухне эрехне те тĕксех ямасть пулмалла: унта-кунта пушă кĕленчесем курăнкалаççĕ, сĕтел пекки çинчи куркара та çав шĕвекех-тĕр, хытса кайнă çăкăр таткисем тата çисе пĕтереймен чăх тукмакĕ те кунтах.

Урапакассинче Анна Боровскаян çывăх тăванĕсем никам та çук. Хăй вăл ĕмĕрне çак çуртрах, ашшĕ-амăш килĕнче ĕмĕрленĕ. Çамрăк чухне шкула чупнă, 1944 çулта Етĕрнери педагогика училищине пĕтерсе тухнă. Вăрçă хыççăн тăхăр çул хушши тăван тăрăхри тата Айкăри шкулсенче ĕçленĕ.

Хушамачĕ чăвашла марри пирки вăл çапла ăнлантарса пачĕ. Аллăмĕш çулсен вĕçĕнче Анна Андреевна пĕр вăхăт Свердловск хулинче пурăннă. Кунта вăл Леонид Павлович Боровскойпа пĕрлешет. Анчах телей вăрахах пымасть. Анюкăн каялла яла таврăнма тивет. Хăйĕнчен е упăшкинчен килнĕ-и çакă - анчах унăн çемьеллĕ пурнăçĕ арканать, вăл пĕччен хĕрарăм пулса юлать.

Иртнĕ кунăн çути çук, теççĕ те, çапах та çамрăк чухне çанталăкĕ те ăшă, кунĕ те яланах ырă пек туйăнать. Çавăнпа та-и Анна Андреевна вăл вăхăтсене савăк кăмăлпа аса илчĕ. Тен, пулни-иртнине илемлетме, чăнлăха пăсса калама та именмерĕ пулĕ. Уншăн турă каçартăр ăна, паян нишлĕхпе асап тӳсекен хĕрарăма. Хăй каланă тăрăх, асапĕсем унăн пĕр вăтăр çул каялла пуçланнă. Пĕррехинче, çуркунне, Урапакасси сыннисем, пĕр вагон çĕрулми тиесе, кăнтăралла çул тытаççĕ. Вĕсен хушшинче Анна Боровская та пулнă. Таса та сывă тухса кайнă вăл инçе çула. Каялла вара имренсе-сусăрланса таврăннă. Асăрханма пĕлменнипе-ши е телей çапла пулнă - Анюк вакун кустăрми айне пулса аманать. Ăна пенси памалла тăваççĕ. Пенси - куççуль укçи, асап укçи. Унпа туяннă çăкăр та тăварлă, тăварĕ те шарак.

Тахçантанпах йĕркеллĕ тухса çӳреймест ĕнтĕ. Анна Андреевна, çапах чул хушшине хурса пулин те, чунне усрасшăн тапаçланать. Вучах вутти уншăн - пахчари чиепе улмуççи турачĕсем. Виçĕ-тăватă чăх тата пĕр качака усрать. Темиçе çул каялла унăн килĕпе юнашарах Тимирязев ячĕпе хисепленекен колхоз клуб туса лартнă. Тăвăр пирки, килĕшсе татăлсах, Анюк аппан пахча çĕрне касса илме тивнĕ. “Уншăн мана пӳрт лартма çичĕ пин кирпĕч уйăрма пулчĕç. Кирпĕчне паян тесен паян параççĕ-ха, анчах мĕнпе турттарса килес манăн ăна? Кама пуç çапса пӳрт ларттарас?” - тет Боровская.

Унран начартарах пурăнма май та çук пек туйăнать çĕр çинче. Çапах: “Манран япăхрах пурăнакансем те пур”, - терĕ Анюк аппа.

Терт-асапа кашни кун курса тăнă чухне кирек мĕнле сыннăн та чĕри хытать, чунĕ чулланать. Ку тăрăхра çакна хăнăхнă пулмалла. Колхоз та, ял администрацийĕ те инвалидсемпе пенсионерсене ниĕнпех те пулăшма пултараймаççĕ имĕш. Чăнах та, кашни карчăка ăçтан çурт лартса парăн? Çапах та Анна Андреевна Боровская хăй те, унăн ишĕлчĕк çурчĕ те темиçе кун куç умĕнчен кайма пĕлмерĕç.

ЛЕНЯ БОРИСОВ
САЛТАКĂН ПУРНĂÇĔПЕ ВИЛĔМĔ

Ĕнер Çĕнĕ Мăрат çийĕн ăшă çумăр çуса иртрĕ...

Типсе ĕлкĕреймен тумламсем халĕ июнь курăкĕ çинче чĕркĕмĕл пек çиçсе йăлтăртатаççĕ. Аслă масар варринчи çĕнĕ вилтăпри çине лартнă чечек калчисем те шыв сыпса тăраннă, пуçĕсене çӳле çĕкленĕ, кашни-пĕр хĕвел патне туртăнасшăн. Таврари çăка вăрманĕ те талккăшĕпех çеçкере. Пуç çаврăнса каймалла ырă шăршă сăмсана кăтăклать. Сикет, вылять, савăнать çутçанталăк. Йывăç–курăк турат çумне турат, çулçă çумне çулçă хушасшăн.

Вилтăпри айĕнче выртакан Леня Борисов çеç çак илеме курмасть те, туймасть те. Ытла та ир, вунтăххăр тултармасăрах пурнăçран уйрăлмалла пулчĕ çак тин çеç çитĕнсе çитсе салтак тумне тăхăннă каччăн.

Ăна вĕлернĕренпе паян тăххăрмĕш кун. Ашшĕ-амăшĕ, тăванĕ-хурăнташĕ, тантăшĕсем, ял çыннисем Леньăна асăнма масар çине пуçтарăннă. Ашшĕ - Петр Владимирович - "Заря" колхозра автомеханикре ĕçлекенскер, кăçал аллă çул тултаракан çирĕп арçын, чăтаймасть - çынсенчен аванмарланнă пек çаврăнса тăрса куççульне çăтать. Амăшĕн - Елена Тимофеевнăн пуçĕ çинче пуçа çĕклеме паман пысăк хуйхă, кăкăрта - чĕрене кăшлакан хура асап. Леньăпа пĕртăван Сашăна та çăмăл мар. Пĕлтĕрсенче кăна салтак тивĕçне пурнăçласа таврăннăскер, паянхи çар çыннин пурнăçĕн синкерлĕхне вăл аван ăнланать.

Виçĕ ывăл - ашшĕ-амăшĕн виçĕ тĕркĕччĕ. Кĕçĕнни çук ĕнтĕ халь. Пӳрт алăкне уçса: "Анне, эпĕ таврăнтăм", - теес çук хăйĕн тарават сассипе. "Шыв ăсса килсе парам-и, урай çуса тухам-и, апат лартса ярам-и?" - тесе шăкăл-шăкăл калаçас çук. "Лар-ха, аннем, туххăм сан сăнна ӳкерсе паратăп", - тесе хутпа кăранташ та тытас çук халь тин. Хупăнчĕç ĕнтĕ тĕнчене савакан, çынсене юратакан çăлтăр пек çутă куçсем.

Тепĕр çын çитмĕл çула çитсе те çĕр çинче çынна юрăхлă ĕç туса хăвараймасть. 1976 çулхи октябрĕн пĕрремĕшĕнче çуралнă Леня, пĕлтĕр кĕркунне çар ретне тăма тивĕçлĕ пулнăскер, Çĕнĕ Мăратра вунсаккăра çитсе ял çинче ырă ят хăварнă. Кунти вăтам шкулта вăл ӳкернĕ картинăсемпе портретсем упранаççĕ.

-Пултаруллă ачаччĕ. Лайăх вĕренетчĕ. Унăн аллинче сăрăпа кăранташ та, пăчкă-сава та пĕр пек вылянатчĕç. Борисовсен ачисем пурте ĕçлесе ӳсрĕç. Кĕçĕнни тата та хĕрӳрехчĕ, аллине мĕн тытни пĕтĕмпех пулса пыратчĕ, - каласа парать шкул директорĕ Клавдия Владимировна Жестянкина.

Борисовсен килĕнче кĕçĕнни ăсталанă сĕтел-пукан асăнмалăх тăрса юлнă. Иртнĕ çулсенче вĕсем пӳртне аслăлатса çĕнетнĕ, ытларах çемьепе ĕçленĕ. Ун чухне те Леня чи пуçарулли пулнă.

Шкул пĕтерсе тухнă хыççăн Леня Борисов Шупашкара, Чăваш патшалăх педагогика институчĕн ӳнерпе графика факультетне çул тытнă. Унăн этючĕсемпе портречĕсем экзамен тыттаракансен кăмăлне кайнă. Ахăртнех, кăмăла каяканнисем ыттисен ытларах та пулнă-тăр: пединститутра Леня валли вырăн тивĕçмен, вăл каялла киле таврăннă, колхозри столяр мастерскойĕнче ĕçлеме пуçланă.

Вунсаккăр тултарнă чухнехи яш ĕмĕр... Хамăртанах пĕлетпĕр - çак ӳсĕмри çын нихăçан та вилĕм çинчен шухăшламасть.

Самана пуçхĕрлĕ çаврăннă самант ытларах ашшĕ-амăшне сехĕрлентерет. Пулас салтак шăпи пирки Борисовсем

те шухăшламан мар ĕнтĕ, унта-кунта чупма та тивнех-тĕр вĕсене. Çавăнпа-и е унсăрах - иртнĕ кĕркунне Леня Шупашкарти çар чаçĕнче служба срокне пуçласа ярать. Комсомольски районĕпе Шупашкар хушши 120 çухрăм, атте-аннепе, тăвансемпе тĕл пулма майсем пур. Кунта тӳлек, анчах çĕршывра лăпкă мар. Унта та кунта пăшал переççĕ, вут çĕкленсе тухать. Шутланă-ши Шупашкар салтакĕсенчен хăшĕ те пулин Çĕнĕ çула уявланă чухне кăçал Чечняри вăрçă вутĕнче пуçне çухатасса? Шухăшламан та пуль? Чăваш Президенчĕ те вĕсене хӳтĕлет-çке-ха. Анчах мĕн ку? Президент Чăвашьенрен çара кайнă салтаксене хӳтĕлесси çинчен Указ кăларнă хыççăн Шупашкарта службăра тăракансене урăх çар округĕсене куçарма тытăнчĕç. Паян пĕрисемпе, ыран теприсемпе сывпуллашмалла. Леньăсен подразделенине те Киров облаçне илсе каяççĕ. Мĕн сăлтавпа Кировочепецка куçарнине лере пытарса тăмаççĕ: часах Чечняна ăсанмалла. Çакăн пирки çыру çырса пĕлтерет Леня хăйĕн ашшĕпе амăшне. Хавшак чĕреллĕ амăшĕ - Елена Тимофеевна - тăхтаса тăмасăрах çула тухать. Ӳкĕтлени те, куççуль те пулăшмасть: Леня Чечняна кайма сăмах панă, арçын сăмахĕ çирĕп - каялла çул çук.

Çакă - амăшĕпе ывăлĕн чĕрĕ чухнехи юлашки курнăçăвĕ.

Цинк тупăк яла çитсе кĕриччен Леньăран тата виçĕ çыру килнĕ. Кĕске вĕсем, сăмахĕсем вырнаçуллă. Килтисене килĕштерсе, тату пурăнма сĕнет. Хăй таврăнасса шанать, суран е вилĕм пирки шухăшламасть. Вăрçă мĕн тути каланине туйса пыни те сисĕнет çырусенче. Юлашки çырăвĕнче, майăн 29-мĕшĕнче, Леньăн тараватлăхĕ, ырă кăмăлĕ, пархатарлăхĕ тата та лайăх курăнать. Сывпуллашу çырăвĕ пекех вуланать вăл.

Июнĕн 5-мĕшĕнче унăн кăкăрне çурăлакан пуля аркатса тăкнă.

Халь тин Леня Борисова никам та чĕртсе тăратас çук. Ырă ячĕ ял çинче, çынсем хушшинче ан çухалтăр кăначчĕ. Раççейĕн панкав правительстви паян ытти çамрăксем валли вилĕм хатĕрлет. Хальхи пурнăç вăл - хăрушă тĕлĕк пек. Çак тапхăр - иртсе каймалли тапхăр. Çамрăксем пурнăçшăн пыракан ырă ĕç валли кирлĕ пулĕç.

Ырă амăшĕсем, ывăлăмăрсене ыран валли упрар!

ÇОТ ШЕТМĔРИ ЮМĂÇ КАРЧĂК

Ку киле кĕрсе курма пире Мартынкассинчи шкулта истори вĕрентекен Аркадий Иванович Иванов канаш пачĕ. Хăй те вăл Çот Шетмĕре пурăнать. Анни мăнаккана (хут çинчи пек каласан, Анна Захаровна Захаровăна) питĕ лайăх пĕлет. "Таврара çук чаплă юмăçчĕ, ун патне çынсем таçтан-таçтан килсе çӳретчĕç, халĕ ватăлчĕ ĕнтĕ, тăхăрвунна çывхарса пырать", - кĕскен çапла каласа пачĕ вăл хăйсен ялĕнчи чи ватă хĕрарăмсенчен пĕрин пирки.

Чăннипе Анни мамак (асаннене Элĕк хутлăхĕнче çапла

калаççĕ) сакăрвун саккăрта пырать. Вăрăм ĕмĕрне пурăнса ирттернĕ кил-çуртĕнче тĕтĕм сӳннĕ ĕнтĕ унăн. Пӳрчĕ кивелсе ăшша тытми пулнă, хуралтăсем çĕрĕшсе йăваннă. Юмăç пăхса пухнă укçи те йӳнелсе юрăхсăра тухнă. Хевти чакнă карчăка сивĕ пӳртре хăварам мар, пăхса пурăнам тесе Анни мăнаккана кӳршĕ хĕрарăмĕ Тамара Сергеевна Дмитриева хăй патне кĕртнĕ. Унăн çуртĕнче те "çилхи витĕр çил вĕрме" пуçласан, вĕсем иккĕшĕ те Тамара инкен ывăлĕ Саша патĕнче хӳтлĕх тупса çырлахнă. Александр Григорьевичăн пӳрчĕ кирпĕчрен, темиçе пӳлĕмлĕ. Эпир пынă чухне вĕсенчен пĕринче Анна Захаровна шăпах канма выртнăччĕ. Кăнтăрлахи апата ăна çăмарта ăшаласа çитернĕ-мĕн те, Анни мăнакка çатмине пуç айне чиксех çывăрать. Ыйхи унăн çăмăл пулчĕ: вăл сас-чӳ илтнипех вăранса кайрĕ, пуçелĕк вырăнне хунă çатмана вăш-ваш туртса кăларчĕ.

-Çутатрăм. Питĕ тутлă пулчĕ. Эс шарнăй-парнăйсем хатĕрлесех тăр, эп çиекенни пулам, - сăмах выляткаласа илчĕ вăл Тамара Сергеевнăпа

-Эккей, çакăнпа! Тимĕр тирĕк-и унта, шăвăç курка-и е çатма - пурне те пуç айне чиксе хурать. Çынран аван мар, йӳтенĕ тесе калĕç тата хăвна, - ӳкĕтлесе те ӳпкелешсе тĕртсе хучĕ лешĕ.

-Йӳтенĕ мар-и вара? Йӳтенĕ! Сакăрвун саккăрта пыратăп. Э-эх, пĕр çирĕм çул каяллахи пулсан. Çĕрле хăй çутмасăр йĕп куçне тиреттĕм. Çын ăраскалне тĕкĕр витĕр курса та, юн тымарне перĕнсе те, ал лаппине пăхса та пĕлеттĕм. Тимĕр тирĕкпе çатмана вара пуç айне ахальтен хумастăп: вăй параççĕ вĕсем мана, - хуравлама ӳркенмерĕ карчăк.

Ирĕксĕрех Константин Ивановăн "Нарспи" поэминче юмăç пирки каланă сăмахсем аса килчĕç: "Ури айне шăрт (шăрт - акапуç тимĕрĕ, авт.) хурса укçа хучĕ хăй умне". Тимĕртен вăй илеççĕ-ши вара юмăçсем?

Хăлхи витĕрех мар пулсан та, халапланса ларма ухута иккен Анна Захаровна. Çот Шетмĕне (халĕ ку яла ытларах Шапкин теççĕ) вăл 60 çулсем каялла Анаткас Шетмĕрен качча килнĕ. Упăшкин - çурт та, выльăх-чĕрлĕх те пулман. Чĕлхе-çăварĕ япшар, ĕçĕпе маттур хĕрарăм хăйсен ялĕнчен пӳрт куçарса ларттарнă, упăшкине киле кĕртнĕ çынна пăхса пурăннă пек усрама тытăннă. Çапах та лешĕн пархатарĕ сахалтарах пулнă-мĕн: ĕçрен пăрăнса çӳреме пуçланă, ют хĕрарăм патне чупма та ӳркенмен. "Энтри-Сентри - йĕм кантри терĕм те килтен самантрах хăваласа кăларса ятăм. Куçăм ан куртăр. Урăхран кĕртмен вара эпĕ ăна", - асаилӳ çăмхине сӳтме пуçлать Анни мăнакка.

Хăçан тата ăçтан пуçланнă Анна Захарован юмăç пăхасси?

Вăрçă вăхăтĕнче Аннана, вăтăр урлă каçнă вăйпитти хĕрарăма, пĕччен пурăнать тесе, вăрман касма илсе каяççĕ. Нумай-нумай çынсем хушшинче вăл кунта пĕр çамрăк арăма асăрхать. Лешĕ сăмаха питĕ маçтăр. Ĕçрен лĕштĕрех ывăнса

таврăнаççĕ пулсан та, хăйсем ялта мĕнлерех пуян пурăнни, ӳт-пӳре пĕчĕк айăп пулнипе вăрçа каймасăр юлнă упăшки хăйне мĕнле юратни çинчен кала-кала тĕлĕнтерет хĕрарăмсене. Пĕррехинче, иккĕн кăна юлсан, Анна çакскерĕн аллине хăй сисмесĕрех тытса илет. "Алă тупанĕ çинче хĕрарăмăн пĕтĕм пурнăçĕ, малашне мĕн пуласси тĕкĕр çинчи пек курăнса кайрĕ. Пурнăçĕ унăн пĕрре те хăй каласа панă пек тулăх мар иккен. Упăшки те килте мар, фронтра. Çитес вăхăтрах чи çывăх çыннине çухатас инкекĕ те пур. Чĕре патĕнчи çынни - упăшкиех-мĕн. Йăлтах тăкса патăм. Хĕрарăм чĕлхесĕр пекех нимĕн те чĕнмест. Хамран-хам тĕлĕнетĕп. Мĕнле пулчĕ-ха ку тетĕп. Икĕ эрнерен çак арăма килне чĕнтерсе илчĕç. Мăшăрĕ вăрçăра вилни çинчен хут килнĕ иккен. Çакăн хыççăн майĕпен-майĕпен çыхăнса кайрăм юмăç ремеслипе".

Анни мăнакка ман аллăмри йĕрсене пăхсан нӳмай сăмахласа тăмарĕ. "Кăмăлу аван санăн, телейӳ пур. Кĕпепе çуралнă çын эсĕ. Ĕненĕвӳ çирĕп мар вара. Малашне мĕн пуласси пирки шарламастăп", - терĕ. Манпа пĕрле кĕнĕ фотокорреспондента юмăç пăхса яма вара вăл ратах пулчĕ. "Полусирота иккен эсĕ, ачам (çынни аллă тăваттăра, ашшĕ вăрçăра вилнĕ). Аннӳ-аçу тăватă ывăл çуратса çитĕнтернĕ-мĕн (чăнах та çапла). Эс çул çӳреме юрататăн, таçта та пулса курнă (чăнах та çапла). Хăв ик ача çуратнă иккен, халĕ килӳнте пĕри кăна (чăнах та çапла). Тата темтепĕр, тата темтепĕр. Юлташăм: "Пĕлчĕ! Пĕлчĕ!" - тесе çаврăнкаласа çӳренĕ вăхăтра пирĕн Анни мăнаккапа пуçланă калаçу малалла тăсăлчĕ.

-Пин-пин çынна юмăç пăхса панă пуль ху ĕмĕрӳнте. Ылтăну та, кĕмĕлӳ те çук-çке хăвăн.

-Ман пата ĕмĕрĕпех ытларах нушаллă çын çӳрерĕ. Вĕсенчен пайта курма, пуйма шутламан. Пурлăх пултăр тесе тăрăшман. Мĕн пуррине пĕтĕмпех хампа пĕрле илсе каятăп.

Юмăçа кама та пулсан вĕрентсе хăвармарăн-и, тесе ыйтатăн-ха эсĕ, шăллăм. Юмăç вăл платник мар, тухтăр та мар. Ăна вĕрентес çук. Турă пани кирлĕ. Вăл пулсан, никам пулăшăвĕсĕрех, хăйĕн çулне хăех тупать юмăç.

-Халиччен курман-пĕлмен çыннăн иртнĕ пурнăçĕпе малашлăхĕ пирки пĕлме пултарнине ĕненес килмест. Юптарса памастăн-и эсĕ, Анни мăнакка?

-Этем ăраскалне ахаллĕн пĕлес çук ăна. Ăш-чикпе ăс-пуç, сисĕм вăйне пĕтĕмпех хускатмалла. Юмăç пăхнă чухне чун кисренĕвне пула хăш чухне çамка çине сив тар тапса тухатчĕ. Ман килĕме кунсерен 10-15 çын пыни те пулнă. Ăçтан кашнинех каласа парас тĕрĕссине? Суя суйса ярасăн ун пек чухне. Хăшĕ ют арçынна çавăрса илесшĕн, теприне кӳрши лайăх пурăнни кĕвĕçтерет. Пăсташ тăвас текенсем те пыман мар. Йывăр инкек çапнине пула ман патăма çул шыраса тупнисене çеç ахаллĕн кăларса ямастăмччĕ. Çак енĕпе пĕр чĕптĕм çылăхăм та çук манăн.

-Сывлăху еплерех, пурăнас килни пысăк-и?

-Ăшăма-чиккĕме ыран çиес çăкăршăн кулянса çунтарас йăлам пулман. Турă мĕн панипе çырлахнă. Кама та пулин вĕчче хывса, тарăхса юнăма-чунăма пусмăрламан. Çавăнпах-ши тĕнче халĕ те хитрен курăнать. Пурăнăттăм тепĕр вунă-вунпилĕк çул. Куç-пуç витĕр мар та, çапах сывлăхăм пур тетĕп-ха. Калаçса çӳремелли сăмах мар, сана пĕлтерем: пĕр чей курки шур эрехе ним мар хаплаттарса хуратăп (çакна Тамара Сергеевнăпа Александр Григорьевич та çирĕплетрĕç). Иккĕмĕшĕн тăррине татса парсан тин ват шăмшак çăмăлланнине туятăп.

...Çот Шетмĕрен хускалса тухни те тахçанах ĕнтĕ. Çула май икĕ-виçĕ яла та кĕрсе тухрăмăр. Анни мăнаккай тĕлĕнтермĕшĕсем пирки пирĕн хушăмăрта хускалнă калаçу кашнинчех çĕнелсе те çĕнелсе пычĕ.

ХУРА-ХУРА ВĂРМАН, ĂРАСНА ЙЫВĂÇ

Эпир ларса пыракан автобус Канаш хулине кĕнĕ чухне хыр пĕренесем тиенĕ машина пысăк мар хăвăртлăхпа пире хирĕç Çĕрпӳ еннелле иртсе кайрĕ. Çук, сарă çуртана аса илтермерĕç кузоври хыр касăкĕсем. Хуппи те вĕсен темле тĕксĕм тĕслĕскер пулчĕ, варри те услам çу евĕрлĕскер мар, - кăвакарса тăраканскер. Тӳрех тавçăрса илтĕм: çак хырсене Сăр, Кĕтне, Хĕр, Хырла шывĕсен çыранĕсенчи хăйăрлă вăрмансенче мар, кăвак тăпра çине лартса ӳстернĕ кварталсенче касса хатĕрленĕ.

Çапларах çав! Чăваш вăрманĕсенче хурăнпа ăвăс, вĕренепе çăка, чăрăш пăлассисене касса йывăçне турттарса тухнă хыççăн çав вырăнсенче хырсем лартса ӳстерме пуçланăранпа 40-50 çул та иртсе кайрĕ пулмалла. Йывăç - этем пекех: кашнин хăйĕн юратнă вырăнĕ пур. Хăй кăмăлланă çĕр çинче вăл хăвăрт ӳсет, яштака пулать. Вулли çирĕп, варри те сăсăллă мар унăн.

Этем пиркиех калар-ха. Куçарса кай-ха тундрăри эвенка Хура тинĕс хĕррине! Пурăнма пурăнĕ-ха вăл субтропик тăрăхĕнче те. Çапах та хăйне çак лару-тăрура калама çук телейлĕ тесе шутлĕ-ши? Мĕн кĕçĕнрен Каспи-Кавказ таврашĕнче çитĕннĕ этеме Якути тĕнчине кайса ярсан мĕнлерех тыткалĕ вăл хăйне? Тăван çĕршывĕшĕн тунсăхлĕ, кăнтăр хĕвелĕ çуккишĕн кулянĕ, пач урăх условисенче пурăнма пуçланăскер, чире кайма та пултарĕ. Куçса пынă вырăна кăмăлламасан, çын урăх çĕре те тухса кайма пултарать. Лартнă йывăçăн вара - çĕрĕ килĕшет–и е килĕшмест-и - çав вырăнтах ӳсмелле.

Пуриншĕн те паллă, пирĕн республикăра вăрмансем пĕтĕм территорин виçĕ пайĕнчен пĕрне йышăнса тăраççĕ. Калама çук пысăк пуянлăх! Хĕрĕх çула та çитмен çамрăк вăрмансен лаптăкĕ кăна 103,3 пин гектар йышăнать. Пĕтĕмпех пулса çитнĕ, паян касмасан ыран ватта тухакан вăрмансем те пур. Вĕсем нумаях мар, 9 пин гектара яхăн. Ытти - 400 пин гектар ытла - вăтам ӳсĕмри вăрмансем. Йывăç кашни çулах сахал мар

касӑлать. Пӗр-икӗ ҫултан, каснӑ вырӑнсенчи ҫӗре хатӗрлесе ҫитерсе, ҫамрӑк калчасем лартаҫҫӗ. Тӗпрен илсен - хыр калчисем. Кӑвак тӑпра, кӗллӗ тӑпра - пӗтӗмпех хыр. 1999 ҫулта кӑна 2500 гектар ҫине вӑрман лартнӑ. Юлашки вӑхӑтра юман лартнӑ лаптӑксем те курӑнкалаҫҫӗ. Вӗсем нумай мар, мӗншӗн тесен вунпилӗк ҫула яхӑн юмансем йӗкел ӳстермесӗр ларчӗҫ. Вӗсем халӗ те типсе хӑрма пӑрахмаҫҫӗ-ха. Имшерленнӗ юмансен йӗкелӗсенчен калчасем хӑвӑрт ҫитӗнеймеҫҫӗ.

Вӑрман лартса ӳстересси - пархатарлӑ ӗҫ. Ҫак енӗпе республикӑри Вӑрман департаменчӗ (мӗншӗн министерство мар-ши вӑл?), лесхозсем ытти регионсенчи вӑрман отраслӗсем хушшинче малти вырӑнсенчен пӗрне йышӑнаҫҫӗ. Юлашки ҫулсенче Тӑвай, Комсомольски, Патӑръел районӗсенче ҫӗнӗрен лесхозсем тунӑ, Шӑмӑршӑ тӑрӑхӗнче наци паркӗ йӗркеленӗ. Вӑрмансене пӑхса тӑрасси, сыхласси, касса тирпейлесси тата вӑрман продукцине хатӗрлесси, ик-виҫ ҫул хушшинче йывӑҫ япаласем ыйтакансен шучӗ чакрӗ пулсан та, тивӗҫлӗ шайрах пулса пырать темелле.

Рынок йӗрки ҫине куҫса пынӑ май ҫӳлтен аяла плансем антарасси чылай йӑвашланчӗ. Ӗҫе халӗ ҫӳлтен план панине пурнӑҫлас тесе мар, вырӑнта шухӑшласа тума май пур. Сӑмахран, вӑрмансенчи каснӑ лаптӑксене мӗншӗн пӗтӗмпех хырпа юман лартса хӑвармалла-ха. Кашни йывӑҫ паха! Ӳсчӗр хурӑнсемпе ӑвӑссем те, вӗренесемпе хурамасем те. Ҫӑка пирки уйрӑм сӑмах. Унӑн лаптӑкӗсем пирӗн вӑрмансенче ҫулран-ҫул сахалланса пыраҫҫӗ. Ӗлӗк чӑваш ҫуртӗнче ҫӑка ҫур пурнӑҫа ҫавӑрса пынӑ. Унран пӳрт пураланӑ, савӑт-сапа ӑсталанӑ, ҫӑка хуппине ӳкерсе пушӑт тунӑ, шыва хутса кӑларса мунчала хатӗрленӗ. Халӗ вӑл япаласенчен чылайӑшӗ кирлӗ мар. Ҫапах та мунча маччине хыр хӑма юрӑхсӑр, ҫӑка кирлӗ. Ҫӑкаранах уйранҫӳпҫи, чӗрес ӑсталаҫҫӗ. Вӗсем те паянхи пурнӑҫран тухса ӳкмен-ха. Курӑсӗ-мунчали те кирлӗ. Ҫӑка пылне активсе курнӑ ҫын унӑн тутине нихӑҫан та манас ҫук. Ҫӑка пирки сӑмах пуҫарсан, вунпилӗк-ҫирӗм ҫул каялла пулнӑ пӗр ӗҫ аса килет. Йӗпреҫри вӑрман хуҫалӑхне пӑхӑнса тӑнӑ Ҫӗнӗ Мӑрат лесничествинче (Тукайпа Ҫӗнӗ Мӑрат ялӗсен хутлӑхӗнче) ҫитӗнсе ҫитнӗ ҫӑка вӑрманӗ пурччӗ. Ӑна Чулхула облаҫӗнчен килсе касса кайрӗҫ. Сеченово таврашӗнчи алӑстисене тавар кӑларма ҫӑка кирлӗ пулнӑ-мӗн. Ӑна шыраса вӗсем Чӑваш тӑрӑхне ҫитнӗ, ҫӑка вӑрманне пысӑк хак парсах сутӑн илнӗ.

Ҫак йывӑҫ тункатаранах хӑвӑрт хунать, васкавар ӳсет. Тукай ҫывӑхӗнчи ҫӑкалӑха каснӑ хыҫҫӑн тункатасене тӗплерӗҫ те хыр лартса хӑварчӗҫ. Пӗлтӗр ҫак вырӑна ятарласа кайса килтӗм. Ӳсеҫҫӗ ҫамрӑк хунавсем. Ҫирӗм ҫулта вӗсем ҫын ҫӳллӗш ҫӗкленнӗ. Ҫӑка пулнӑ пулсан, сайралатмалӑхах ҫитӗннӗ пулӗччӗҫ, тесе шухӑшларӑм хам ӑшӑмра.

Ҫӑки-хурӑнӗ - куҫран ҫӗтнӗ йывӑҫсемех мар-ха. Йӗлме, каврӑҫ, ҫирӗк йывӑҫҫисен ячӗсене ҫамрӑксем пачах та

пĕлмеççĕ. Хăйсене курасса та курман. Çакна çырма хатĕрленнĕ май çак йывăççем пирки тĕрлĕ ўсĕмри тăхăр çынпа калаçрăм. Вĕсенчен иккĕшĕ кăна йĕлмепе каврăç пирки тĕплĕн каласа пама пултарчĕç. Шыв хĕррисенче ўсекен çирĕке те чылай çĕрте касса пĕтернĕ. Çыран çаралать, шывĕ типет. Йĕлмепе каврăç хăминчен мĕн тĕрлĕ паха сĕтел-пукан тума май пуррине вара никамах та пĕлесшĕн мар.

ИКĔ ТĔНЧЕ - ИКĔ ПУРНĂÇ

Çу уйăхĕн вĕçĕнче Мускаври Раççейри творчество интеллигенцийĕн конгресĕ пулса иртрĕ.

Пире, Чăваш Республикинчен конгресс ĕçне хутшăнма пырса çитнĕ сакăр çынна, пурăнма Мускаври Лихачев ячĕпе хисепленекен автозаводăн хăна çуртне вырнаçтарчĕç. Тупăкри пек шăплăхпа кĕтсе илчĕ хăнасене пилĕк хутлă çурт. Унччен тĕнче чапĕпе кĕрленĕ ЗИЛ халĕ йĕркеллĕ ĕçлеймест. Пĕр вăхăт вăл тăнчах хупăнса та пăхнă. Халĕ те аран–аран сывлать. Ытти хуласенчен специалистсем кунта командировкăсене çўреме пăрахнă. Хăна çуртĕнче ĕçлекенсем пиллĕкмĕш уйăх шалу илеймеççĕ. Выçă хырăма лăплантарас тенĕн, эпир пырса вырнаçнă чухне вĕсем типĕ çу ярса шўрпе пĕçеретчĕç.

Урамсенче çын сахал çўрет. Магазинсен çўлĕкĕсем апат–çимĕç, тĕрлĕ йышши тавар пусса тăнипе авăннă. Суту–илў залĕсем пушă, тавар туянакансем вĕсенче çукпа пĕрех. Заводăн культура çурчĕ те, музейĕ те хупă. Хветĕр Агиверпа Иван Лисаев çак районăн аслă пасарне кĕрсе тухнă–мĕн те, иккĕшĕ те хамăр пурăнакан пўлĕмре тĕлĕнсе лараççĕ.

-Мĕн тĕрлĕ кăна аш çук-ши пасарĕнче? Йўнни те, хакли те. Суйла та туян. Туянакан никам та çук, тарăхса, пăшăрханса сăмахлать Лисаев.

Лихачев заводĕнчи рабочисен укçа çук. Укçа çук этем килте, хваттерте ларать. Мускав та тĕрлĕрен иккен. Çупа пыл çинче ишекенсем те, типĕ тытакансем те пур иккен кунта. Буржуази тата пролетариат... Икĕ тĕнче - икĕ пурнăç. Çак чăнлăх конгресс ĕçленĕ вăхăтра тата та лайăхрах курăнчĕ. Наци культури хăрушлăхра, ăна хăтармалла - çакăн пек девизпа иртрĕ конгресс. Унăн ĕçне икĕ пине яхăн çын хутшăнчĕ. Мускавра пурăнакан литература, культура, искусство деятелĕсем кăна мар, Раççейĕн 67 регионĕнчен килнĕ 700 ытла çын вĕсем хушшинче.

Виктор Розовăн конгреса уçнă чухнехи сăмахĕсем асран тухмаççĕ. "...Пире кунта пурне те чун ыратăвĕ пуçтарчĕ. Пире çĕнтерчĕç. Çĕршывăмăр чĕркуççи çинче ларать. Çапах та эпир мар вăл вăйран кайнисем. Апла пулсан, хамăр чăнлăхшăн, хамăр культурăшăн кĕрешĕве тухмалла".

Раççейри писательсен союзĕн председателĕн Валерий Ганичевăн, халăх артисчĕн Николай Губенкăн, Владимир

Смирнов профессорӑн, Патшалӑх Думин депутачӗн Иван Мельниковӑн сӑмахӗсенче те (вӗсем докладсем туса пачӗҫ) ҫӗршыв культури арканнишӗн пӑшӑрханни, катастрофӑран тухмалли ҫул-йӗре шырани, пуласлӑха шанни-ӗненни палӑрчӗ. Вӑтӑра яхӑн ҫын сӑмах тухса каларӗ конгресра. Вӗсем хушшинче - Халӑхӑн патриотла вӑйӗсен союзӗн лидерӗ Геннадий Зюганов. Ырӑ вӑйсем ҫӑлӑнӑҫ шыраса пӗрлешеҫҫӗ. Ҫакна ларусем иртнӗ чухне конгресра Елисей архимандрит Мускав тата Пӗтӗм Раҫҫей Патриархӗн иккӗмӗш Алексийӗн саламлӑ сӑмахне вуласа пани те, Раҫҫейӗн Вӑтаҫӗр Европин муфтийӗ Равиль Гайнутдин шейх тухса калаҫни те яр-уҫҫӑн кӑтартса пачӗҫ.

Елена Драпеко артисткӑн, Василий Белов, Валентин Распутин, Вячеслав Дегтев, Юрий Поляков ҫыравҫӑсен, Владимир Страхов академикӑн хӗрӳллӗ сӑмахӗсем ҫынсен чӗрин варрине кӗрсе вырнаҫрӗҫ.

"Кунта эпир чӗре хушнипе килтӗмӗр. Никама та ирӗксӗр илсе килмен. Хамӑрӑн нимӗнпе те танлаштарма ҫук ҫӗршывӑмӑра сыхласа хӑварасчӗ. Эпӗ сире пурне те пуҫаруллӑ, активлӑ пулма сӗнетӗп. Тӗнчере лайӑх ҫынсем япӑх ҫынсенчен нумайрах. Парӑнас марччӗ кӑна..." - ҫакӑн пек сӑмахсемпе хупрӗ конгреса Виктор Розов.

Документсем, документсем... Конгресс хальхи ҫивӗч ыйтусемпе темиҫе резолюци тата заявлени йышӑнчӗ. Раҫҫей культурине ҫӑлса хӑварас тӗллӗшпе ятарласа комитет ӗҫлеме пуҫламалла. Пирӗн республикӑран комитет составне Мариъел республикин тава тивӗҫлӗ артистне, республикӑри вырӑс драма театрӗн артистне Олег Блинова кӗртрӗҫ.

Конгесс ӗҫне ҫӗр-ҫӗр профессор, академиксем, артистсемпе писательсем, журналистсем, врачсемпе учительсем, библиотекарьсемпе клуб работникӗсем хутшӑнчӗҫ. Кӑнтӑрлахи апата Парламент центрӗн анкарти пек пысӑк буфетӗнче ҫирӗмӗр. Халӑх майлӑ ӗҫлекен творчество интеллигенцийӗ питех те чухӑн иккен пирӗн. Чей, кофе, сосиска-сарделька... Ҫакна та пурте туянма пултараймарӗҫ. Сӗтел ҫине сарса хунӑ хаҫат ҫинчи ҫӑкӑрпа сухана тӑварпа пуҫса ҫиекенсене те курма тиврӗ апат вӑхӑтӗнче.

Конгресс хыҫҫӑн Мускавӑн тӗп урамӗсемпе ҫуран нумай утрӑмӑр. Ресторансемпе казиносем, грильбарсем симӗс, кӑвак, сарӑ ҫутӑсемпе ҫиҫетчӗҫ. Пирӗн унта кӗрес мехелӗмӗрпе терменӗмӗр те ҫукчӗ, кӗрес те килместчӗ. Унта "ҫӗнӗ вырӑссем" савӑннине кӑна лайӑх пӗлеттӗмӗр.

СИКРӖ - ТУХРӖ ҪЫРМАРАН...

Этем нимӗн чухлӗ те йытӑ мар. Йытӑпа танлаштарма та пултараймастпӑр ӑна. Анчах та Патшалӑх Думин депутачӗ, либерал-демократсен партийӗн лидерӗ, Раҫҫей президенчӗн кандидачӗ Владимир Жириновский Мускавра Думӑн пӗчӗк

залĕнче журналистсемпе тĕл пулнă чухне пĕр вĕçĕмсĕр вăрçнине зала кĕрсе итленĕ хыççăн ирĕксĕрех пĕр вĕçĕмсĕр вĕрекен йытă манăн куç умне тухса тăчĕ.

Пресс-конференци кăнтăрла вуникĕ сехетре пуçланмаллаччĕ. Владимир Вольфович зала шăпах пĕр сехет те вунă минут каярах юлса çитрĕ. Сĕтел хушшине кĕрсе ларнă-ларманах вăл Думăн спикерне ларусене йĕркеллĕ ирттерме пĕлменшĕн вăрçма пуçларĕ. Вăл пресс-конференцие вăхăтра килейменшĕн Дума ертӳçисем айăплă имĕш. Ун хыççăн правительство тата Президент адресĕпе ӳпкев сăмахĕсем пуçланчĕç. Жириновский июль уйăхĕнче Раççейре выçлăх пуçланасси çинчен пĕр иккĕленмесĕр пĕлтерчĕ. Вăл пĕлнĕ тăрăх, апат-çимĕç резервĕсем пирĕн çĕршывра пĕтĕмпех хухса çитнĕ. Апла пулсан та правительство Польшăна тырă ăсатма хатĕрленет-мĕн. "Хамăрăн нимĕн те çук. Çав вăхăтрах правительство Польшăпа тырă сутас енĕпе килĕшӳ тунă", - терĕ Владимир Вольфович, хăйĕн умĕнче выртакан папкăран туртса кăларнă тап-таса хут листине сиплесе.

В.Жириновский - вырăс хĕрарăмĕпе юрист ывăлĕ (çут тĕнчере пилĕк пине яхăн тĕрлĕ халăх хушшинче "юрист" нацине уçнăшăн вăл чăннипех те тĕнче наградине тивĕçлĕ) - чи пысăк шайри должноçсене йышăнса ĕçлекен пĕр наци çыннисене (сăмах еврейсем пирки пычĕ пулмалла) "шĕкĕлчеме" пуçланă хыççăн малти ретсенче ларакан журналистсем пуçĕсене пĕкрĕç, креслăсем çине тĕршĕнерех ларчĕç.

Пăскăртасси иккĕмĕш ăстрăмпа правительство çине куçнă хыççăн журналистсенчен нумайăшĕ (вăл шутра эпĕ те) залран тухса кайма çĕкленчĕç. "Акă вĕсем - Америка капиталисчĕсен тарçисем. Вĕсем хăйсен агенствисене ман çинчен элек пама васкаççĕ", - пире те вăрçмасăр хăвармарĕ Владимир Вольфович.

АЛĂКСЕНЧЕ - АМБАЛСЕМ

Пухăннă-ши хăçан та пулсан тăр кăнтăр кунĕнче кремене çакăн чухлĕ халăх, тăнă-ши хăçан та пулсан кермен умĕнчи тӳремлĕхре çакăн чухлĕ çăмăл машина, автобуссемпе микроавтобуссем, тата тем-тем тĕрлĕ автотранспорт? Çакăн пекки халиччен пулнă е пулман тесе çирĕплетсе калама йывăр, анчах та çакăн пек мероприяти керменте нихăçан та иртменни пирки татăклăнах çирĕплетме пулать.

Çапла, ĕнер кунта ĕмпĕве суйлама кандидата тăратас шухăшлă пуçару ушкăнĕ пуçтарăнчĕ. Ушкăн темелле-ши ăна, е çар тесен тĕрĕсрех пулать-ши? Çак "ушкăна" пĕр пин те çĕр аллă тăвату çын пухăнчĕ пулсан та, ĕмпĕве суйласси пирки калакан саккунпа килĕшӳллĕн, эпир те ăна çар тесе мар, ушкăн тесех калăпăр.

Пуçару ушкăнĕн пухăвĕ, тĕпрен илсен, пĕтĕмĕшлех унчченхи ырă вăхăтри облаçри партконференци евĕрлĕ иртрĕ.

Мероприятие çак ĕçре йытта кăна мар, кашкăра та çисе ярса курнă Васливанчсемпе Михалванчсем йĕркелесе ирттерсе янине шута илес пулсан, урăхли-тăрăхли пулма та пултарайманни те паллă-ха ĕнтĕ.

Ыррăн тĕлĕнтерекенни, чуна савăнтараканни кунта çакă: малтан палăртса йыхрав хучĕпе "хĕçпăшаллантарнă" çынсемсĕр пуçне пуху ирттерекен зала шăна та вĕçсе кĕме пултарайманни.

Керменĕн аялти хутĕнчи алăкĕсенче те, çӳлти хутĕнче те икĕ метр çӳллĕш, хĕртнĕ кирпĕч тĕслĕ питсемлĕ, вĕрсе хăпартнă пек курăнакан бицепссемлĕ амбалсем тăчĕç. Вĕсене курнă хыççăнах залра вĕçĕмсĕр пĕршухăшлăх пулас е пулас мар пирки иккĕленӳ пачах сĕвĕрĕлчĕ. Кунта урăх нимĕн те мар - пĕршухăшлăх анчах пулма пултарать!

Пухăва пыма мана никам та йыхăрманччĕ. Йыхравсăр пынисем тата та пурччĕ. Рабочисен пĕр пĕчĕк ушкăнĕ шала кĕрес тесе нумай талпăнчĕ. Патшалăх Канашĕн депутачĕ хăйĕн прависем пирки хĕрсе кайса ăнлантарчĕ. Çук, зала кĕме вĕсене телей пӳрмерĕ. Ман тĕллĕн турри çывăх пулчĕ-тăр, пуху иртекен "çăтмаха" эпĕ кĕтĕм-кĕтĕмех.

Акă вĕсем - залри çемçе пукансем çинче ларакансем, эпĕ паллакан çынсем: районсемпе хуласен ашшĕсемпе вĕсен çумĕсем, паян министрта ĕçлекенсем, ĕнерхи министрсем, ыран министр пулас çынсем, ĕç сĕтелĕсем хушшинче кунĕ-кунĕпе хутсене пĕр енчен тепĕр енне, тепĕр енчен пĕр енне куçарса ларакан чиновниксем, хырăмламасланма пуçланă çĕнĕ вырăссемпе çĕнĕ чăвашсем, рабочисем выçă ларнă чухне уйăхсерен вуншар пин тенкĕ шалу илекен АОсемпе ООсен директорĕсем. Кур-ха, çавсем кăна-и? Çук, вĕсем кăна мар! Авă, унта та кунта тутăр çыхнă, саппун çакнă чăваш хĕрарăмĕсем, леререх тӳпеттей тăхăннă ватă тутар ларни курăнать. Епле-ха тата вĕсемсĕр! Вĕсене илсе килес мар-тăк, Васливанчсемпе Михалванчсем те пулас мар. Пĕлеççĕ вĕсем мĕн çисен шыв ĕçмеллине.

Хăйĕн ĕмĕрне унччен обком секретарĕсем тавра, халĕ ĕмпӳпе премьер тавра хĕвĕшсе ирттерекен этем сцена çине хăпарчĕ те пухăва пуçласа ячĕ. Президиум суйлаççĕ. Çапла, пурнăç çыннисем те нумай иккен залра. Акă, президиумрах - ĕç геройĕ, тава тивĕçлĕ артистка. Мĕн тăвăн: этем хăй тĕнчине парăнатех çав!

Кун йĕркине çирĕплетнĕ хыççăн ĕçлĕ калаçу пуçласа ячĕç: çĕнĕрен ĕмпĕве суйлама хальхи ĕмпĕве тăратмалла. Трибуна умне çынсем пĕрин хыççăн тепри тухаççĕ. Вĕсен сăмахĕсенче-мухтав юрри! Вăл Мускавран пенси укçи илсе килсе тăрать, чиркӳсен тăррисене ылтăнпа çиçтерчĕ, учительсемпе врачсене çывăх курать, газ кĕртнĕ чухне пирĕн яла пырса курчĕ, кӳлнĕ ута кĕпер тĕлне çитсен тăвармаççĕ, тата ытти те, тата ытти те... Пуху иртекен керменĕн стенисен леш енче оçмушкă чухлĕ хăватпа ĕçлекен завод та, уйăхĕ–уйăхĕпе ĕççĕр ларакан

рабочисем те, пушанса юлнă чăх–чĕп фабрикисем те, кĕрхи çил туланипе лăсканакан вырман уй та, пĕлтĕрхи раштавранпа укçа илсе курман колхозниксем те çук тейĕн.

Çапах та совĕçе çухатман çынсем те пур–ха çĕр çинче. Акă, трибуна умне кăмăллă та ăслă тутар тухать. Мухтама хушнă. Анчах çакăншăн çеç халăх умне тухрĕ–ши–ха тава тивĕçлĕ ветеран. Çук, уншăн çеç мар. Акă, вăл паянхи синкер режима хупласа тăракан атлас та пурçăн чаршавсене туртса антарма пуçлать. Ялсенче ĕçлекен çынсем ĕçлейми пулнă пенсионерсен укçипе пурăнаççĕ-мĕн. Унăн ялĕнче колхозниксен вăтам ĕç укçи уйăхра 180 тенкĕ çеç иккен. Ватлăхра пĕччен тăрса юлакан çынсем питĕ нумай. Мĕншĕн вĕсен ывăл–хĕрĕсем вăхăтсăр çĕре кĕреççĕ. Кур–ха, хăлхана ыррăн кăтăклантаракан сăмахсемсĕр пуçне йўççĕн тухаканнисем те пурмĕн ку чухне. "Çитет!"- теççĕ ятарласа йĕрке тытса пыма лартнă çынсем унтан та кунтан. Аксакал ерипен сцена çинчен анать. Хăй калас сăмаха вăл каланă.

Е тата тава тивĕçлĕ артистка. Ăна та ĕмпĕве мухтама хушнă. Пытармасть. "Ĕнер хушрĕç", - тет. Ан мухта–ха! Мĕн курассине хăв пĕлен. Залра, куçĕсемпе пăраласа, театр директорĕ хăй ларать. Артистка "мухтать". Çĕкленсе, патетикăпа: "Ĕмпу пирĕнсĕр пурăнĕ, эпир вара унсăр пĕтетпĕр!!!"-тенĕ чухне пичĕсене виçĕ хут кĕççе çĕленĕ чиновниксем те вăтанчăклăн, аванмарланса пуçĕсене чикеççĕ, шĕпĕр–шĕпĕр алă çупаççĕ. Пуçланă ĕç - вĕçленĕ ĕç. Самант ĕмпĕве суйлама тăратасси пирки сасăласси патне пырса тухать. "Кам та кам тăратас тет, алă çĕклĕр!" Кăшăл çĕкленеççĕ алăсем. "Кам хирĕç!" Йăлишĕн тенĕ пек кăна пуçне çĕклесе зала пăхса илнĕ председателĕн куçĕсем тĕлĕннипе пысăкланса каяççĕ. Хирĕçлисем пур! "Камсем вĕсем? Кам апла тума хăять?" - илтĕнеççĕ унтан та кунтан сасăсем. Йăлишĕнех пуху председателĕ шут комиссине ĕç умне тăратать. Иккĕн–виççĕн йăлишĕнех пин ытла çын ларакан зала ик–виç минут хушшинче "шутласа" тухаççĕ. Комисси пуçлăхĕ протокол вулама пикенет. "Пуçару ушкăнне пĕр пин те çĕр аллă тăватă çын çырăннă. Пĕр пин те çĕр хĕрĕх çиччĕшĕ ĕмпĕве суйлама кандидата тăратас тесе сасăланă. Пиллĕкĕшĕ хирĕç пулнă. Иккĕшĕ сасăлава хутшăнман", - пĕлтерет вăл.

Пуху вĕçленет. Председатель залра ларакансем "ыйтнипе" ĕмпĕве чĕнсе илме хушу парать. Çынсем нумайăшĕ тулалла тухаççĕ. Эпĕ те, ĕмпў мухтаннине итлесе хăлхамсене тахçанах йўçĕхтерсе çитернĕскер, пăчă зала урăх кĕрес мар шухăшпа урама тухакан алăка уçатăп.

ЮЛТАШСЕМПЕ ЮНАШАР

Райхаçат редакторĕ каласа парать

Электрике шыраса - тĕпсакайне

Ун чухне редакципе типографи райцентрти кивĕ йывăç çуртра вырнаçнăччĕ. Линотипсемпе пичетлекен машинăсем ĕçленĕ чухне пӳртĕн урай-маччи, стенисем халь-халь ишĕлес пек чĕтренсе тăратчĕç. Эрнере виçĕ хут, хаçат тухнă кунсенче, çав шăв-шав çурçĕр çитмесĕр те лăпланмастчĕ. Лăпланас пулсан та, электроэнерги пама пăрахнă пирки машинăсем чарăнса ларсан кăна лăпланатчĕ. Энерги паракан подстанци кивелсех çитнĕччĕ ĕнтĕ. Çĕннине лартас пирки райĕçтăвкомра темиçе хут калаçсан та усси пулмарĕ. Каçхине çичĕ сехет-и унта, саккăр-и - çутă лап! сӳнсе ларать, çуртра тупăкри пек шăп пулса тăрать. Хăпăл-хапăл подстанци патне чупатпăр, "жучок" - мĕн лартса, электроэнерги памалла туса хуратпăр. Çакă электриксен кăмăлне каймарĕ пулмалла, подстанцие çăрапах питĕрсе илчĕç. Çутă çав-çавах сӳнме пăрахмасть. Пĕррехинче, çуллахи каç, тăхăр сехетсем çитеспе, машинăсем тăпах чарăнса ларчĕç. Утрăм Комсомольски ялĕн урамĕпе электрик шыраса, Морозов пурăнакан килĕн чӳречинчен шаккарăм. Урама арăмĕ тухрĕ.

-Морозов пыраймасть, тĕпсакайĕнче-ха вăл, - тет хĕрарăм.

-Мĕн тума кĕрсе ларнă вăл унта? - ыйтатăп хайхинчен.

-Çĕрулми хума шăтăк чавать. Унăн ир те, каç та халăх ĕçĕ. Килти урлă выртана та тăрăх çавăрса пăрахми пулчĕ. Кăлармастăп эпĕ ăна тĕпсакайĕнчен, ан та ӳкĕтле, - çавăн пек пулчĕ хурав.

Хĕрарăма йăпаткаласа хам та тĕпсакайне кĕрсе кайрăм. Йĕп чиксен те куç курмасть. Ал сĕмĕпе Морозова хыпашлакаласа тупрăм. Калаçатпăр. "Кĕçĕр шăтăка чавса пĕтермесĕр те тĕпсакайĕнчен тухмастăп. Трансформатора тахçанах улăштармалла. Çитмĕл тенкĕшĕн кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме чура мар эпĕ", - сассине хăпартсах калаçать кил хуçи.

-Атя-ха, майлаштаркаласа ярар. Ху пыраймасан çăра уççине парса яр эппин. Ху пырас пулсан, каялла иксĕмĕр килсе тĕпсакайне туххăмрах чавса хурăпăр", - апла та капла та ӳкĕтлетĕп электрике. "Иксĕмĕр чавса пĕтерĕпĕр" тесен, кăмăлĕ уçăлчĕ Морозовăн. Çирĕм минут иртрĕ-и, иртмерĕ-и - çутă памалла туса та хучĕ. Ĕç пĕтерсен эпĕ те унпа пĕрлех хускалтăм. "Эсĕ пирĕн урамра пурăнмастăн-çке. Ăçта каятăн?" - ыйтать хайхискер. "Ара, тĕпсакайне иксĕмĕр чавса пĕтерме килĕшрĕмĕр-çке-ха", - хуравлатăп эпĕ.

Сайра кулакан салху электрик йăл-л! çиçсе илчĕ. "Ан çӳре. Хамах чавса пĕтеретĕп. Ыр сăмахушăн тавтапуç" - тесе уйрăлчĕ.

Трансформатор "ыйтăвĕпе" тепĕр кунне райцентрти виçĕ хутлă çуртăн виççĕмĕш хутĕнчи чи пысăк кабинетах кĕмелле пулчĕ. Икĕ эрнерен çĕнĕ подстанци лартрĕç.

Утне ҫитмен - туртине

Университет пĕтернĕ хыҫҫăн редакцие ҫамрăк каччă Владимир Рыбкин ĕҫлеме килчĕ. Малтанласа вăл радиокорреспондент пулчĕ, пĕр вăхăт яваплă секретарь ĕҫĕсене пурнăҫларĕ, кайрантарах ăна ялхуҫалăх пайĕн ертӳҫи пулма ҫирĕплетрĕмĕр.

Кĕркуннехи пĕр тĕксĕм ир Володя ман пата кабинета кĕчĕ.

-"Восток" колхоз фермисене ҫитсе килесшĕн. Машина паян ниҫта та каймасть-и? - "вăкăра" тӳрех мăйракинчен тытрĕ вăл.

Эпĕ ăна путевка ҫыртарма хушрăм. Тăхăр сехет ҫитеспе Рыбкинпа тепĕр ҫĕнĕ корреспондент машина ҫине ларса "Востокалла" кĕрлеттерчĕҫ. Кайнăранпа пĕр сехет те иртмерĕ пуль, эпĕ ларакан пӳлĕме каллех Володя Рыбкин кĕрсе тăчĕ. Хăй йăлтах сăнран ӳкнĕ, кăвакарса кайнă, пăшăрханса ӳкнипе калас сăмахне те йĕркеллĕ калаймасть.

Вĕсем "Восток" колхозăн ĕне фермине аванах ҫитнĕ-мĕн. Витене кĕнĕ-кĕменех Володьăна пĕр тĕреклĕ арҫын, самаях хĕрĕнкĕскер, кăкăртан ҫулса илнĕ, чутах лутăркаса пăрахман, темĕн те пĕр каласа вăрҫса пĕтернĕ. "Сана пыршу-пакартупах ҫисе яратăп, пирĕн колхоз тĕлне мантаратăп. Сан пирки нарастаран начет тӳлемелле пулчĕ тесе хирĕлешрĕ ҫав арҫын", - каласа парать Рыбкин. "Кам пулчĕ вара вăл ҫын? Палламастăн-и?"- ыйтатăп унран. Рыбкин та, тепĕр корреспондент та ку ҫынна палламаҫҫĕ иккен. Редакци шоферĕ Слава Игнатьев районти ҫынсене лайăх пĕлет, ăна чĕнсе кĕртме хушрăм.

-Кам-ши? Ферма заведующийĕ хăваласа чупатчĕ вĕсем хыҫҫăн. Ҫавă пуль, - тет Слава.

Вăл кун "Восток" колхоз правленине пилĕк-ултă хутчен те шăнкăравларăм. Каҫ енне кайсан ҫеҫ колхоз председателĕпе Алексей Деомидович Ятмановпа ҫыхăнса калаҫма май килчĕ. Председатель ĕҫ мĕнле пулса иртнине тĕпчесе пĕлме сăмах пачĕ.

Тепĕр ирхине служба пуҫланнă пуҫланманах редакцие Ятмановпа Бегунов (ҫынни тӳрленнĕ те пулĕ-ха, чăн хушаматне кăтартар мар) ҫитсе кĕчĕҫ. Эпĕ вĕсене Рыбкинпа курса калаҫма сĕнтĕм. Ҫур сехетсем-мĕнсем иртсен, кабинета Володя Рыбкин кĕчĕ.

-Утне ҫитмен - туртине теҫҫĕ-и-ха ҫав. Ялхуҫалăх управленийĕнче ĕҫлекен Чернов контролер-ревизорпа пăтраштарнă мана. Лешĕ фермăри йĕркесĕрлĕхсем пирки акт ҫырнă, документсене халăх контролĕн районти комитетне тăратса ферма заведующине начет партарнă. Чернов килчĕ тесе мана кăкăртан ярса илсе силленĕ вăл. Халĕ хăй йăнăшне сисрĕ, манран каҫару ыйтрĕ, - хыпарлать редакцин ялхуҫалăх пайĕн заведующийĕ.

Мишер ачи

Мана паспорт улăштарма хушрĕç. Çийĕнчех сăнÿкерчĕксем хатĕрлесе районти паспорт сĕтелне кайса патăм. Нумай та вăхăт иртмерĕ, кунти ĕçченсем çĕнĕ паспорта кĕрсе илме йыхăрчĕç. "Ятарласа сана валли асра юлмалли ансат цифрăллă бланк суйласа илтĕмĕр. Ĕмĕрлĕхе илетĕн-çке паспорта, лайăх упра ăна", - тесе "пил парса" ăсатса ячĕç тарават хĕрарăмсем.

Ĕçе çитсен, çĕнĕ паспорта тепĕр хут кăларса пăхрăм. Эпĕ мĕнле хушаматли, ăçта çурални тата паспорта кам пани пирки вырăсла та, чăвашла та çырнă-мĕн. Чăвашла çырнине те вуласа тухас терĕм. Ак тамаша! "Çуралнă вырăн - Комсомольски районĕнчи Тукай Мишер ялĕ", - вулатăп ăшăмра. "Мишерсемпе туслă-ха, анчах çураласса Тукай Мишерĕнче мар, Тукай ялĕнче çуралнă-çке. Мĕнле аплах йăнăшма пултарнă вара паспорт паракансем", - шухăшсем хускалчĕç пуçра.

Çав самантра пÿлĕме редакцин яваплă секретарĕ Владимир Давыдов пырса кĕчĕ. "Эсĕ паян çĕнĕ паспорт илнĕ теççĕ, эпир ăна çума пĕр кĕленче çуттине хатĕрлерĕмĕр. Ĕç вĕçленсен тÿрех тухса ан кай вара", - çурри шÿтлесе, çурри чăнласа калаçать Давыдов. "Илме илтĕм те-ха, анчах ăнăçлах пулмарĕ: паспорт паракансем манран мишер ачи туса хунă", - сăмах хушрăм эпĕ те.

Яваплă секретарь манăн паспорта тытса пăхсах "тĕпчерĕ". "Эй, пулать те япала!" - тесе кабинетран тухса кайрĕ. Вунă-вунпилĕк минут иртрĕ-ши, иртмерĕ те-ши - ман пата Володя районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн çумне Матросов капитана (ун чухне майор марччĕ-ха вăл, Володя Давыдовпа Валентин Гурьевич Матросов вăхăтсăр пиртен уйрăлса кайрĕç. Ыр вырăнта выртчăр вĕсем) ертсе кĕчĕ. "Валентин Гурьевич, эпĕ - мишер ачи. Иксĕмĕр пĕр ялта çуралса ÿснĕ. Апла пулсан, эсĕ те мишерех", - йĕкĕлтесе илтĕм пĕр кана.

Вăл сăмах вакласа-туса тăмарĕ. Манăн миçе сăнÿкерчĕк юлнине ыйтса пĕлчĕ. Вĕсене çĕнĕ паспортпа пĕрле пуçтарса илсе тухса кайрĕ. Çак ĕç пулса иртнĕ хыççăн сехет çурăран каллех çĕнĕ паспорт илме чĕнсе илчĕç.

Каçхине вара паспорта çуса пĕр кĕленче çуттине пушатмаллах пулчĕ.

Чернов хÿри

Пенсие кайнă хыççăн икĕ-виçĕ çултан тахçан пирĕн редакцире нумай вăхăт хушши ĕçленĕ Василий Николаевич Чернов вăхăтлăха корреспондента пырса вырнаçрĕ. Хăй вăл Канаш районĕнченччĕ. Автобуспа калла-малла кашни кун сакăрвунă çухрăм хутлатчĕ. Дежурнăй пулнă вăхăтсенче редакцирех выртса тăратчĕ. Хаçат тухнă кунсенче килте вулама тесе типографирен çĕнĕ номере илсе каятчĕ. Ватă пулсан та тухăçлă ĕçлетчĕ, статйисене Чернов-Хури тесе алă пусатчĕ.

Типографире вăл вăхăтра Ефросиния Ивановна Квасова бригадирччĕ, печатниксем отпуска-мĕне кайсан, хаçата та хăех çапатчĕ. Ун чухне линотипсем те çукчĕ-ха: полосасене наборщицăсем алăпах пуçтаратчĕç.

Явраç аппа шӳт тума юрататчĕ, Василий Николаевич шӳте çĕклеме пĕлместчĕ. Çавăнпа та вĕсем иккĕшĕ килĕштерсех каймастчĕç.

Çуллахи пĕр хĕвеллĕ кун, пилĕк сехет иртсен, Василий Чернов типографирен тин çеç çапма тытăннă хаçатăн çĕнĕ номерне илчĕ те автобус чарăнакан вырăна васкарĕ.

Икĕ сехет иртрĕ-и е иртмерĕ те-и - Василий Николаевич типографине каялла таплаттарса пырса кĕчĕ. Пичĕ-куçĕ калама çук çилĕллĕ, тутисем чĕтреççĕ.

-Явраç, эсĕ мана мĕншĕн мăшкăлатăн? - тет вăл.

-Мăшкăламан-çке! - хуравлать Явраçĕ.

-Мĕнле мăшкăламан? Пĕлсе тăрсах паянхи хаçатри ман статья айне Чернов-Хури вырăнне Чернов хӳри тесе подпись туса янă! - хирĕлешет Василий Николаевич.

Явраç аппа хаçат çапмалли машинине чарчĕ. Çĕнĕ номерĕн пĕр экземплярне илсе Василий Николаевича тыттарчĕ те: “Куçупа лайăххах пăх. Нимĕнле “хӳри” те çук, “хури” анчах”, - терĕ. Василий Николаевичпа иксĕмĕр кăсăклансах хăй çул çине илсе чикнĕ хаçатпа хальхи хаçата танлаштаратпăр. Малтанхинчи статья айĕнче чăнах та “Чернов хӳри” тесе çапăннă, халь алла тытнинче тĕрĕс - Чернов-Хури.

-Хаçата редактор к печати париччен “хӳри” те “чури” те, “ури” те пулма пултарать. Эсĕ хаçат çапма пуçличченех антăратса çӳретĕн. Çав усал йăлуна пăрахмасан, тепрехинче “Чернов-Сенкерри” тесе пуçтарса парасшăн-ха эпĕ сана”, - пăсăрлантарать Явраç аппа.

Василий Николаевич хăйĕн çурăмĕ çинчен йывăр çĕклеме илсе пăрахнă евĕр хаш! сывласа илчĕ те редакци диванĕ çинче çывăрма ăсанчĕ.

ТĂВАН КИЛ - ÇĂХАН ЙĂВИ

Атте-анне килĕнччен пахараххи мĕн пур тата çĕр çинче! Йыхăрать вăл хăй патне. Инçе çула çывăх туса, килсе-кайма хистет. Çуралнă килте хура çăкăр кулач тути калать, пусă шывĕ те шерпет пек. Тăван кил-аннемĕр - пуриншĕн те пĕртенпĕр анчах... тепĕр чухне атте-анне килĕ те çăхан йăвине çаврăнать-мĕн. Пĕр варта выртнă тăван-пĕтен пĕр-пĕрне курайми пулаççĕ, ашшĕ çĕçĕпе ывăлне чиксе вĕлерет, упăшки хăйĕн арăмĕнне-е арăмĕ упăшкинне ĕмĕрне вăхăтсăр тататъ. Кун пек преступленисене, саккун йĕркипе, çÿлерех тăракан судсенче пăхса тухаççĕ. Пирĕн республикăри Аслă суд членĕсене те çакăн евĕрлĕ ĕçсемпе сахал мар паллашма тивет. Çак тапхăрта пулнă виçĕ йывăр преступлени пирки - кĕскен анчах. Виççĕшĕ те çын пурнăçĕпе, телей-инкекĕпе çыхăннă. Çемье пуçĕ пăшалпа персе арăмне вĕлернĕ, хĕрне амантнă. Упăшки арăмне тискеррĕн хĕненĕ, лешĕ ир енне ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупнă. Киле кĕнĕ арçын усрав хĕрне мăшкăл тунă... Мĕншĕн çакнашкал усал та сипетсĕр, хĕрхенÿсĕр те ерĕнкесĕр эпир - çынсем.

ПИТРАВ УМĔН, ÇУРÇĔР ТĔЛĔНЧЕ...

Пулхашра Касинсен кил-йышĕ ыттисенчен нимĕнпех те уйрăлса тăман. Çемье пуçĕ, утмăл ултă çулхи Тихон Лукич, çамрăк чухне самаях шухă пулнăскер, пенсие тухнă хыççăн тăруках лăпланнă: килкартинче тата сад-пахча ĕçĕсене тунă, хушăран сунара тухса кĕнĕ. Арăмĕ те, Люда, килте алă усса ларман. Сахал-и çуртра куллен тупăнакан ĕçсем. Хĕрĕсем - Клавăпа Лера - ашшĕ-амăш патне сайра-хутра кăна килсе çÿренĕ. Ахаль чухне мар, уяв е ĕçкĕ тунă чухне анчах леккеленĕ вĕсем Пулхаша.

Питрав ыран тенĕ чухне, Касинсен çурчĕ ача-пăча сассипе тулнă. Кукашшĕпе кукамăшне курма аслисемпе пĕрле мăнукĕсем те килнĕ. Мунча кĕрсе тасалнă хыççăн хăнасем ашшĕ-амăш кĕрекине кĕрсе ларнă. Апат-çимĕçпе, эрех-сăрапа тулăх пулнă уяв сĕтелĕ. Тихон Лукичпа унăн кĕрÿшĕ Яша Мирюшин черкке хыççăн черкке пушатнă. Лерăпа Клава тата вĕсен амăшĕ те арçынсенчен юлсах кайман. Эрех пăсĕ часах пурне те ярса илнĕ. Хĕрĕсем кĕрекерех, ним çукшăн нимĕр пĕçерсе, хирĕçсе-тавлашса кайнă, пĕр-пĕрне çÿçрен çавăрса тытнă. Тĕркешĕве ыттисем те хутшăнмасăр юлман. Чашăк-тирĕк чанкăртатнă, такам аллине лекнĕ эрех кĕленчи урайне вăркăнса чăл-пар саланнă. Пÿртре пуçланнă шăв-шав çĕрле, вунпĕр сехетсем тĕлнелле, килкартине “тухнă”. Тăвансем кунта та пĕри-тепĕрне ăçтан килнĕ унтан çапнă, чышнă, кÿпкенĕ.

Ашшӗпе хӗрӗ ҫапӑҫнинчен чыссӑртараххи тата мӗн пурши ҫӗр ҫинче? Клавдия Зокуркина ашшӗне арҫынла тӑрӑст! кӑна ҫӗклесе ҫапнӑ. Тарӑхса ҫитнӗ Касин хӗрӗн аллисене пӑрса лартнӑ, хӑйне витене тӗртсе кӗртнӗ, алӑка тултан ҫаклатса ҫенӗке чупса кӗнӗ те пӳрт маччи ҫине улӑхса кайнӑ. Мачча ҫинче унӑн 1990 ҫултанпа сакӑр патрснлӑ "Парабеллум" пистолет хӑйӗн вӑхӑтне "кӗтсе" выртнӑ.

Кунта ҫакна каласа хӑварас пулать. Шкулта пӗр кун та вӗренсе курман, вулама-ҫырма пачах та пӗлмен Касин тӗрлӗрен пӑшалсемпе кӑсӑкланнӑ. Унӑн килӗнче пӗр кӗпҫеллӗ ИЖ-К пӑшал (регистрациленӗскер), вӑрттӑн тытса усракан икӗ кӗпҫеллӗ обрез пулнӑ. "Парабеллум" пистолета ӑна Василий ятлӑ пиччӗшӗ хӑй вилес умӗн 1983 ҫулта парса хӑварнӑ. Граждан вӑрҫи хыҫҫӑн Василий Касин шурӑ ҫарсен юлашкийӗсене, бандитсен ушкӑнӗсене пӗтерес енӗпе йӗркеленӗ отрядра тӑнӑ, киле ҫирӗммӗш ҫулсен варринче кӑна таврӑннӑ. Хӑйпе пӗрле вӑрттӑн илсе килнӗ хӗҫпӑшала вилмелле чирлесе ӳкиччен пытарса усранӑ.

Шӑпах ҫак пистолет пулнӑ та ӗнтӗ Тихон Касин аллинче. Урамра, чӳрече умӗнче, Лера ятлӑ хӗрӗ тата кӗрӳшӗ Яков Мирюшкин тӑнине асӑрханӑ вӑл. Тискер шӑв-шава пула вӑраннӑ мӑнукӗсем те пасӑрах урама чупса тухнӑ ӗнтӗ. "Ну, калӑр, камран пуҫламалла?! - кӑшкӑрса янӑ ӗҫкӗпе минренӗ, ҫиллине шӑнараймасӑр шӑлне шатӑртаттаракан килхуҫи. "Пуҫла эппин манран", - сасӑ панӑ кӗрӳшӗ. "Мӗншӗн манӑн сана вӗлерес!" - кӗскен хуравланӑ пистолетлӑ этем. Тӗллесе кӑларнӑ пульӑ хӗрӗн сылтӑм тӑнлавне лексе иртнӗ, юн юхтаракан Лера кӑшкӑрса ярса чӗркуҫленсе ларнӑ. Хаярланса кайнӑ этем курока татах туртнӑ, анчах куннинче "Парабеллум" персе ярайман.

Амӑшӗннинчен ытларах камӑн чӗри ыраттӑр ачисемшӗн? Людмила Касина аманнӑ хӗрӗ умне пӗшкӗннӗ. "Вӗлерчӗ! Хӑйӗн тӑван хӗрне вӗлерчӗ! Халех милиције чӗнсе килмелле!" - ҫакӑн пек сӑмахсем пӑвӑнса тухнӑ амӑшӗн кӑкӑрӗнчен.

Ӑҫтан шӑнкӑравламалла, кам патне кӗмелле ҫӗр варринче? Касинсенчен инҫе мар ял администрацийӗн пуҫлӑхӗ пурӑнать, унӑн килӗнче телефон пур. Кӑштах тӑна кӗнӗ пек пулнӑ хӗрне ҫавӑтса, амӑшӗ тӑкӑрлӑкалла пӑрӑнса кӗрет, телефонлӑ киле шаккаса уҫтарать, унтан районцентр хулине шӑнкӑравлаҫҫӗ. Лерен васкавлӑ пулӑшу инкек пулнӑ ҫӗре часах ҫитесси пирки шантарса хураҫҫӗ.

Урса кайнӑ упӑшка пӗр кӗпҫеллӗ ИЖ-К пӑшала ярса илсе арӑмне "кӗтсе илме" тӑкӑрлӑка тухать. Акӑ вӑл, хӗрӗх ҫул ытла пӗрле пурӑннӑ, пӗр вырӑн ҫинче выртса тӑнӑ арӑм! Паян упӑшкишӗн вӑл тӑшман пекех. Милиције шӑнкӑравлать, тыттарса ярассипе хӑратать. Перес ӑна!

Ҫӗрлехи шӑплӑха хускатса пӑшал сасси янӑрать. Хӑвӑрт авӑрласа, Касин тепӗр хут тӗллесех перет. Татах пӗр ӑстрӑм кӗрлесе илет Пулхашӑн лӑпкӑ тӑкӑрлӑкӗ. Аманса пӗтнӗ

Людмила Касина вилес умӗнхи хавалпа ултӑ-ҫичӗ утӑм малалла чупса каять те касса янӑ йывӑҫ пек тӗшӗрӗлсе анать. Кӳршӗ ҫынни Титушинпа кӗрӳшӗ пӑшал авӑрласа тӑракан Касин патне ҫитсе тӑнӑ чухне утмӑл тӑватӑ ҫулхи хӗрарӑмӑн чӗри тапма чарӑннӑ пулнӑ ӗнтӗ. Титушин урмӑшса кайнӑ преступника чарса лартма, хӗҫпӑшалсӑрлантарма хӑтланса пӑхать - анчах кӑлӑхах. Кӑтӑрса кайнӑ этем пӑшал кӳпчекӗпе Титушина тӑрӑслаттарать. Иккӗн - иккӗнех ҫав. Халь-халь вут кӑларма пултаракан пӑшала преступник аллинчен туртса илеҫҫӗ.

Хӗрӗ аманнине, арӑмӗ вилсе выртнине курнӑ Касин, эрех пӑсӗ ерипенех сирӗлсе пынӑ май, шикленсе-хӑраса ӳкет. Ӑҫта тарса пытанмалла? Вӑл Пулхашран ҫичӗ ҫухрӑмра вырнаҫнӑ утара тухса сулланать. Пӗр талӑк ҫурра яхӑн пурӑнать ҫын вӗлерекен вӑрман варринче. Кӑнтӑрла ҫитерехпе яла таврӑнса хӑй пирки милицине пӗлтерет.

Пулхашри Советски урамӗнче вунвиҫҫӗмӗш ҫурт хапхинчен ҫулталӑк ытла ӗнтӗ ирсерен Людмила Касина анлӑ улӑхшӑн тӗмсӗлекен выльӑха кӗтӗве хӑваламасть. Килкартинчен Тихон сасси те илтӗнмест. Ашшӗ-амӑш килӗ хӗрӗсемшӗн ҫӑхан йӑвине ҫаврӑннӑ. Хӑнана мар, амӑш вилтӑпри ҫине ҫӳреҫҫӗ вӗсем. Ашшӗ тӗрмере ларать. Унтан тухнӑ ҫӗре ҫитмӗл пилӗк ҫулта пулать.

...Тахҫан-тахҫан, пӗр хӗрӗх пилӗк ҫулсем каялла, Тихон Касин Люда ятлӑ хӗре юратса мӑшӑр тунӑ. Кил-йышӗнче Юрату, Ӗмӗт тата Ӗненӳ ҫирӗп пултӑр тенӗ ҫемье пуҫӗ. Пурнӑҫӗ вара урӑхла ҫаврӑнса тухнӑ. Юратӑвӗ те, шанчӑкӗпе ӗненӗвӗ те чи кирлӗ япаласем пулма пӑрахнӑ. Чи кирли эрех пулса тӑнӑ. Ӑҫта эрех, унта ҫапӑҫу, курайманлӑх, вилӗм. Кам айӑплӑ ҫакӑншӑн?

ПУРТӐ-ҪӖҪӖ ХӐЙ ТӐРШШӖ ВИҪҪӖ ТӐСӐЛАТЬ

Хӗрӗх-хӗрӗх пилӗк ҫул каялла пирӗн ялти пуҫламӑш шкулӑн пуҫлӑхӗ пулма вӑтам ҫулсенчи тӗреклӗ хура чӑваша ярса панӑччӗ. Тукайсен кӑмӑлне кайрӗ вӑл. Ҫын хушшинче тӑтӑшах пулатчӗ, калаҫма юрататчӗ. "Хӑш ял ҫынни эсӗ? Кам пулатӑн?"- тӗпчетчӗҫ тӑпрас ҫинче ларакан карчӑксем унран. "Вӑрӑ Вӑтаел", - кӗскен хуравлатчӗ уҫӑ кӑмӑллӑ учитель. "Ялӗпех вӑрӑсем пурӑнаҫҫӗ-ши вара Вӑтаелӗнче. Ма апла калать-ха директор?" - тӗлӗнетчӗҫ учитель кинемейсемпе мӗн калаҫнине хӑлха тӑратса итлекен вӗтӗр-шакӑрсем.

Кайран пӗр хут анчах мар пулнӑ эпӗ Вӑтаелӗнче. Ялӗ ял пекех. Ҫыннисем те аванах. Вӑрӑпа-мӗнпе хӑтланнине те илтсех кайман. Тӗне кӗмен чӑвашсем чылай унта. Хушамачӗсем те чӑвашла янӑраҫҫӗ. Республикӑн Аслӑ судӗнче пӑхса тухнӑ уголовнӑй ӗҫсемпе паллашнӑ май, аллаппи хулӑнӑш ӗҫе тӗплӗн вуласа тухма лекрӗ. Икҫӗре яхӑн тӗрлӗ документ унта. Ӗҫӗ

шăпах Вăтаелĕнче пурăннă Сачеевпа çыхăннă. Пăшăрхантаракан, чуна хускатакан, шухăша яракан ĕç. Кил-йыш иртнĕ çулхи декабрьте типшар курса ларни, çитĕнсе çитмен ачасем (Сачеевсен ывăлĕсемпе хĕрĕсем пиллĕкĕн) ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлни чĕрене хĕссе ыраттарчĕ.

Çемье пуçĕ пулнă Иван Сачеев ватă мар-ха, хĕрĕх виçĕ çулта кăна. Çирĕм çулсем-мĕнсем каялла вăл хăйпе пĕр тантăшлă Ларуç ятлă хĕрпе пĕрлешсе пурăнма пуçланă. Арăмĕ Ванюша кашни çул тенĕ пекех ача çуратса савăнтарнă. Сачеев колхозра шоферта ĕçленĕ. Ачисене лайăх çитĕнтерес шухăш та, çĕнĕ пӳрт лартас ĕмĕт те пулнах ĕнтĕ çак мăшăрăн. Йывăр ĕçрен иккĕшĕ те хăраса тăман. Йывăр ĕç шăмшака çĕмĕрет, вăя пĕтерет, халтан ярать. Kaçхине пĕр-икĕ черкке эрех-и унта е сăмакун ĕçсен, ирхине тăма çăмăл пек. Уйăх иртет, çулталăк, виçĕ-тăвата çул... Сачеевсем ерипенех ĕçке вĕренсе кайнă. Уйрăмах ачасен амăшĕ хытă аптăранă, юлашки вăхăтсенче унăн ĕçки, пĕр пуçлансан, эрнене те тăсăлма пултарнă. Ваньккана та черкке тĕпне пăхма юратман теме çук.

Сăлтавсăр ĕçкĕ нихăçан та ырри патне илсе çитермест. Çавна пулах Сачеевсем килте час-часах "çил-тăвăл" хускатма пуçланă, вăрçăннă, çапăçнă. Çемье пуçне судпа айăпланă, чылай пысăк срок панă. Иван Сачеев аякра нумаях пурăнман. Ирĕке тухса киле таврăннă.

Ĕçме пăрахасси çĕтĕк калуша урама кăларса пăрахасси мар: эрех этеме хăй аллипе тыткалать. Пĕлтĕрхи август уйăхĕнче, пĕр кунхине, Иван килне ӳсĕр таврăннă. Арăмĕ вăл кун урах пулнă-ха. Хĕрĕнкĕ упăшка арăмне картишĕнчех çавăрса илнĕ, ачисен умĕнчех тискеррĕн хĕнеме тытăннă. Сачеевсен ывăлĕ, вунçичĕ çулхи Палюш, чăтса тăрайман, урса кайнă ашшĕне чарма пикеннĕ. "Э-э-э, эсĕ аçуна хирĕç тăма-и!" - тесе Сачеев-асли куç тĕлне пулнă кĕреплепе ывăлне пуçран, хуллуççирен çапма тытăннă. Палюш, суранланса пĕтнĕ пулсан та, сас-хурана милицие çитермен, ашшĕне хĕрхеннĕ.

Ку ĕç пулса иртнĕ хыççăн икĕ уйăхран, октябрь варринчи пĕр тĕксĕм кун, каç еннелле кайнă вăхăталла, Сачеев Иван пӳртне кикириккине хĕртсе пырса кĕнĕ. Малтан - урлă-пирлĕ сăмах, кайран - кăшкăрашу тата çапăçу. Талăрса кайнă арçын тултан пуртă йăтса кĕнĕ. Юрать килте пур амăшне хӳтĕлекенни. Амăшĕ те урă мар та: мĕн тăвас тетĕн - анне вăл аннех. Хăйне хăмсарнине пăхмасăрах, ывăлĕ ашшĕн аллинчен пурттине туртса илме мехел çитернĕ.

Раштав уйăхĕн çиччĕмĕшĕ... Шухăшланă-ши Мария Сачеева çав ир юлашки кун пурăнатăп тесе. Çук-тăр! Эрех пирки шухăшлама пултарнă. Çав кун, ăнсăртран укçа илнипе усă курса, вăл сăмакун туяннă. Килте ĕçни çитмен. Унта та, кунта та пулнă килхуçи хĕрарăмĕ çав каçхине. Тăхăр сехетсем тĕлнелле хăй йышши тепĕр хĕрарăм ăна, атă-кăçатăсăр тата çиелти ăшă тумтирсĕрскере, хăйсен тĕлĕнчи карта çумне çунапа туртса

ăсатса хăварнă. Шăпах тата аслă ачисем те килте пулман. Палюшпа Ваçça клуба кино курма васканă, вунсакăр çулхи Ира амăшĕпе пĕртăван Лиза аппăшĕ патне çĕр каçма юлнă. Ывăлĕсем çĕрле те таврăнман. Килти яланхи шăв-шав йăлăхтарнипех пулĕ, çывăрма пускил патне кĕнĕ.

Ашшĕ те урах пулман, анчах - ураран ӳкмеллех мар, хаярланса çитмеллĕх çеç. Çапăçу тăхăр сехет çурăсем тĕлнелле пуçланнă. Иван Сачеев арăмне çапнă, тапнă, турчкапа тата патакпа хĕненĕ, çĕçĕ ярса илсе купарчинчен темиçе хут чикнĕ, каллех хĕненĕ. Арăмĕ юн юхтарни те, тăнсăр выртни те хĕрхенӳсĕр арçыннăн кăмăлне çемçетеймен. Ире хирĕç Ларуç тăна кĕнĕ, шыв ыйтнă, тула тухас килни çинчен пĕлтернĕ.

Те пĕр сехет, те ытларах та иртнĕ вăл картишне тухнăранпа - каялла кĕмен. Урăлас енне кайнă упăшки ăна тултан илсе кĕнĕ. Ирхине, пилĕк сехет тĕлнелле, юн нумай çухатнипе тата сурансене тӳсеймесĕр Ларуç вилсе кайнă.

Приговорта палăртнă вăхăта пĕтĕмпех ларас пулсан, Иван Сачеев киле тепĕр вунă çултан анчах таврăнма пултарĕ. Тен, маларах та килĕ-и? Çапах та вăл малашне çĕнĕ çемье çавăрасса, пурнăçа ăнтарса ярасса шанма хĕн. Арăмне те чĕртсе тăратаяс çук ĕнтĕ. Ачисем... Ăшă кăмăлпа атте тесе калĕç-ши вĕсем ăна? Темле çав. Иван Сачеев, эрехе ытараймасăр тата арăмне ĕçме вĕрентсе, хăй шăпине хăех татса пачĕ. Хăть ачисен телейĕ пулччăрччĕ. Йывăр самана, пуçхĕрлĕ тăнă пурнăç вĕсене хуçса, лутăркаса ан пăрахтăрахчĕ.

ЕРКĔНĔН АРĂМНЕ ВĔЛЕРМЕ МАЛТАНАХ МĂЙКĂЧ ХАТĔРЛЕНĔ

Тĕрмене ларнăранпа тăватă уйăх та иртрĕ ĕнтĕ. Алевтина Юванова хуйхине пусарма, ăшчикне лăплантарма çав-çавах пултараймарĕ-ха. Тăхăр çул хушши пĕлĕшсенчен, тăвансенчен уйрăлса пурăнмалла. Йĕри-тавра йĕплĕ пралуклă хӳме, зона. Яланах хурал аллинче, кунне виçĕ хутчен - техĕмсĕр, йӳççи-туттисĕр тĕрме апачĕ. Ывăлĕ - Володя - мĕнле пурăнать-ши килте? Çамрăк-çке-ха вăл, тата хевтесĕр: курăк кăна халь. Ашшĕ-амăш килне Володьăшăн хăех çăхан йăвине çавăрчĕ-мĕн те Алевтина, чавса çывăх та çыртма çук. Çăмăл шухăшлă пулни, ясарлăх лĕтерчĕ мар-и? А-а-ах, иртнĕ кунсене аса илсен, чĕре çурăлса тухать.

...Хăй вăл Хурчкакассинчен. Пĕлтĕр, раштавăн 14-мĕшĕнче, хĕрĕх улттă тултарчĕ. Пурăнасса Тутаркассинчи Октябрь 30 çул тултарнă ятпа хисепленекен урамри пĕр çуртра пурăнатчĕ. Иртнине халь ăçтан каялла тавăратăн? Шухă пулчĕ çав Алевтина, шухăшсăр çӳрессине ытларах кăмăлларĕ. Упăшки пур çинчех ют арçынпа çыхланса кайрĕ, сакăр çул хушши тăсăлчĕ иккĕшĕн хушшинчи çылăхлă юрату. Унпа пурăннă

вăхăтрах еркĕнĕ авланчĕ. Алевтинăн виççĕмĕш тăхăмри тăванне - Валентинăна - качча илчĕ. Çапах та Ювановăпа Тайцев тĕл пулма пăрахмарĕç. Пĕлтĕрхи ноябрьпе декабрь уйăхсенче еркĕнĕн тăван хваттерĕнче арлă-арăмлă пекех пурăнчĕç. Алевтинăн пуçне чун савнине Тайцева качча тухас шухăш сахал мар çавăрчĕ. Çав ĕмĕтпех вăл хăйĕн упăшкинчен уйрăлчĕ. Уйрăлнă пулсан та иккĕшĕ те пĕр хваттертех юлчĕç. Пурнăçĕ ăнманнипе-и е çемье арканнипе - Юванов унччензинчен те ытларах ĕçме пуçларĕ.

Тайцев та çав пĕрле пурăннă икĕ уйăхра Алевтина характер енĕпе мĕнле хĕрарăм пулнине лайăхрах туйса илчĕ-тĕр. “Санпа татăлатпăр, арăм патне каялла таврăнатăп”, - терĕ.

Мĕнле вĕçертĕн кăмăла каякан арçынна. Хут тутарса пĕрлешмех шухăшласа хунăччĕ-çке-ха Алевтина. “Мĕн пулать-ха капла? Юратнă арçын арăмĕ патне таврăнать. Манăн каллех хамăн хваттерте упăшка пулнă çыннăн кăмăла кайман сăнне кашни кун курса шараçланмалла-и-ха?” - пăраларĕç шухăшсем Алевтинăн пуçне.

Еркĕнĕн арăмне вĕлерес шухăш хăçан хускалчĕ-ха ĕнтĕ тата, кун пирки татăклăн калама йывăр. Ювановăпа Тайцев уйрăлнă хыççăн пилĕк кун иртсен пулчĕ çак ĕç. Ирхине Алевтинăн хваттерне пиччĕшĕн ывăлĕ Владимир пырса кĕчĕ. Çирĕм сакăр çулхи вăйпитти çын вăл, ниçта та ĕçлемест. Хулари пĕр общежитире пропискӑра тăрать, пурăнасса Хурчкакассинче пурăнать. Эрех тесен çунакан вутта та кĕме хатĕр. Çав кун ирирех виççĕн тан хваттерте эрех ĕçме пуçларĕç. Алевтина ялхуçалăх кооперативĕ чăх пусакан цехĕнче рабочи шутланса тăратчĕ те, унăн ĕçе каймалла пулчĕ. Вара вăл упăшка пулнă çынпа шăллĕне хăварса ĕçе ăсанчĕ.

Чăх фабрики Тутаркассинчен пурĕ те икĕ çухрăмра анчах. Ĕçе çитнĕ çĕре ирхине эрех ĕçни мухмăр енне кайрĕ. Ăш-чик кĕвĕлсе, кăмăл йӳçĕхсе тăрать Алевтинăн. Кăнтăрла иртсен Тайцевăн арăмне Валентинăна курни тата та вĕчĕхтерсе ячĕ ăна. “Епле савăнăçлă кăптăрмăш. Упăшкипе ваç-ваç пурăнаççĕ пулмалла. Ан хĕпĕрте, нихăçан та санăн пулмасть çак арçын. Мана анчах, урăх никама та юратман вăл. Савнă арçыннăм ман патăма чупса килесси нумаях та юлмарĕ пулĕ-те-ха...”, - кĕсйине таçтан кĕрсе ӳкнĕ улăм çыхмалли капрон кантрана хыпашласа çакăн пек шухăшсемпе пăтранчĕ Юванова. Кĕсйине таçтан кĕрсе ӳкнĕскерччĕ-и-ха çак капрон йăлмак? Хăй илсе чикнĕ марччĕ-и ăна Алевтина? Ун-кун пирки пуçа çавăрма вăхăт пулмарĕ, вăл ĕçрен киле кайма тухрĕ.

Декабрьте хăвăрт каç пулать. Автобус чарăнакан вырăнта Алевтина пиччĕшĕн ывăлĕпе каллех тĕл пулчĕ. Эрех ĕçсе тăранман-мĕн ханттар. “Манăн паян çуралнă кун. Эрех туянас тетĕп. Пар-ха пĕр çĕр тенкĕ”, - тет. Алевтина шăллĕне çĕр тенкĕ кăларса тыттарчĕ. Ытахальтен памастчĕ те пулĕ, лешĕ аппăшĕпе пĕрле Валентинăна хĕнеме пыма килĕшрĕ.

Уйрӑлмастчӗҫ те-и, тен, анчах Юванован ывӑлне киле леҫсе ямаллаччӗ. Тепӗр ҫур сехетрен Тутаркассинчи Кудряшов тӑкӑрлӑкӗнчи тӑваттӑмӗш номерлӗ ҫурт ҫывӑхӗнче тӗл пулма калаҫса татӑлчӗҫ. Алевтина ывӑлне васкатса килне уттарчӗ, Сандров магазина кӗрсе икӗ кӗленче шурӑ эрех туянчӗ, пӗрне ҫавӑнтах ӑнсӑртран тӗл пулнӑ ҫынсемпе пушатрӗ. Тӑватӑ сехет ҫурӑра Ювановӑпа Сандров малтан калаҫса татӑлнӑ вырӑнта тӗл пулчӗҫ.

Халӗ вӗсен иккӗшӗн те ҫуран чӑх-чӗп фабрикине ҫитмелле, хӳме урлӑ каҫмалла. Никам куҫӗ тӗлне пулмасӑр санпропускнике кӗмелле. Унта Валентина прачкӑра ӗҫлет, каҫхине улттӑ иртиччен пӗччен пулать. Малалли пирки калаҫмарӗҫ, пӗр-пӗрне ӑнланчӗҫ пулмалла.

Ҫапах та санпропускнике Алевтина малтан Сандрова кӗртсе ячӗ. Лешӗн сӑлтав та пур. Вӑл Валентинӑран кивҫен укҫа илнӗ. “Кивҫене пама килтӗм”, - теме пулать. Валентина ҫапах та укҫине илесшӗн пулмарӗ. Юванова, ҫакна вӑртӑн сӑнаса тӑраканскер, санпропускнике вирхӗнсе кӗчӗ. Тавлашу пуҫланса кайрӗ. Юванова Валентинӑн аллисене пӑрса лартрӗ. Сандрова хӑйне пулӑшма хушрӗ. Володя Валентинӑна алӑран тытса тӑнӑ вӑхӑтра Алевтина кӗсйинчи капрон кантрана хыпашласа тупрӗ, туртса кӑларма ӗлкӗрчӗ, еркӗнӗн арӑмӗн мӑйне йӑлмакласа та илчӗ.

Ҫын вӗлерекенпе ӑна пулӑшаканӗ ҫемҫелсе кайнӑ хӗрарӑм чӗлхине тӑсса кӑларсан ҫеҫ лӑпланчӗҫ. Алевтина “ӑс” парса пыраканӗ пулчӗ. Валентинӑна такам мӑшкӑланӑ пек кӑтартас тесе, вӗсем унӑн тумтирне хывса илсе унта-кунта ыткӑнтарчӗҫ, хӑшне-пӗрне ҫурса-чӗрсе сапаларӗҫ. Сандров вилнӗ хӗрарӑм аллинчен сехете салтрӗ, пӳрнинчен венчете тӑнӑ чух тӑхӑннӑ ылтӑн ҫӗррине кӑларса илчӗ.

Каялла йӑпшӑнса тухнӑ чухне те вӗсене пӗр чӗрӗ чун та курмарӗ.

Валентинӑна коллективра хисеплетчӗҫ. Ӗҫченччӗ вӑл, чухӑнччӗ тата... Тайцев уншӑн кил ҫынни пулаймарӗ. Пӳкле вилнӗ хӗрарӑма пӗрле ӗҫлекенсем тирпейлесе пытарма пулӑшрӗҫ. Тайцев ҫапах та куҫҫуль кӑларчӗ, ҫак ӗҫе кам тунине те сисрӗ пулмалла та вӑл, анчах шарламарӗ.

Атпӑрине михӗре пытарса усрама пулать-и-ха вара? Ҫын вӗлерес ӗҫе хутшӑннӑ Владимир Сандров ылтӑн ҫӗрӗпе сехете нумай тытса усраймарӗ: 2 пин тӑракан ылтӑна 300 тенкӗпех ярӑнтарса, ӗҫкӗ лачакине кӗрсе ӳкрӗ. Тепӗр талӑкранах урӑлтаркӑчра ҫӗр каҫмалла пулчӗ унӑн, ӑна арестлерӗҫ.

Преступлени тунӑ ҫынсен айӑпӗ пӗтӗмпех паллӑ пулсан та, следстви темиҫе уйӑх пычӗ. Ҫакшни версие, вак-тӗвеке тӗплӗн тӗрӗслерӗҫ следовтельсем. Ӗҫе Чӑваш Республикин Аслӑ судӗнче пӑхса тухрӗҫ. Алевтина Юванована 9 ҫуллӑха, ҫын вӗлерес ӗҫе хутшӑннӑ Владимир Сандрова 6 ҫуллӑха хупмалла турӗҫ.

Хăйне читлĕхри кашкăр ами пек туять халь Алевтина тĕрмере. Мĕн туса хучĕ вăл, мĕн туса хучĕ? Хăйĕн тăванĕн пурнăçне татрĕ-çке-ха вăл. Тăван пиччĕшĕн ывăлĕ те ун пиркиех тĕрмене лекрĕ. Ывăлне хăр тăлăха тенĕ пек хăварчĕ. Аслă ачисем (вĕсем иккĕн) мĕн калĕç тата? Тĕрмерен тухнă хыççăн тăвансене епле куçран пăхмалла?

Начар апата та, тĕрме режимне те чăтать-ха çак йывăр преступлени тунă хĕрарăм. Пуринчен те ытларах ăна ăшри çулăмсăр çунакан вут пĕр самантлăха та канăç памасть.

ПУÇ ÇИНЧИ ПУРТĂ

Июнь - çу пуçламăшĕ. Тавралăх емешĕл тĕспе витĕннĕ. Сывлăш уçă, таса. Хĕвел хăйĕн пайăркисене çĕр çине сапалать. Лăпкă çил чечек тăкакан садсен шăршипе Тӳлеккасси ялĕ çийĕн çӳрет. Урамалла тăвата-пилĕк чӳречеллĕ, тĕреклĕ хуралтăсемлĕ, ырă алăсем типтерлесе тăнипе ыррăн курăнакан сад-пахчаллă çуртсем, çутçанталăк илемĕпе пĕрлешсе, танлăн та мăнаçлăн курăнаççĕ. Пуян пурăнать кунти халăх. Халĕ те, акă, вырсарникун пулнине пăхмасăрах, çынсем ир-ирех килти ĕçе пуçăннă. Пĕри, шурă кирпĕчрен купаласа лартнă пӳртлĕ, чăх-чĕп вĕçсе каçайми хапхаллă та лупаслă килхуçи, çурт çине çурт туса лартасла хăма çуртарса килнĕ те, çавна купаласа майлаштарать. Тепри килĕ умне тирпей кĕртесшĕн: кĕреçепе те шăпăрпа тĕккеленсе çӳрет. Виççĕмĕшĕсем урам енчи кантăкĕсене яриех уçса янă: шалтан музыка сасси илтĕнет. Канмалли кун тĕлне кăмакине хутнă пулинех те, тулалла икерчĕ-кукăль тата шаркку шăрши тутлăн сарăлнă. Тĕл-тĕл кукăрăлса та пăрăнса ялăн пĕр вĕçĕнчен тухакан мăн урамăн пĕр çуртĕнче кăна хаваслăх та, савăнăç та çук. Ялти вăтам шкул директорĕн Яков Петрович Яновăн урам енне тăвата чӳречеллĕ, мансардăллă пӳрчĕн кантăкĕсене тачă хупса питĕрнĕ, чĕнтĕрлĕ хапхи сайра уçăлса хупăнать, гаражра ларакан çăмăл автомобиль хĕллеренпе пĕрре те тухса курман. Çук ĕнтĕ çĕр çинче паян Яков Петрович. Вилĕм çинчен шутламан çĕртех вилĕм илсе, хĕрĕх виççĕрех тăпра çĕклесе выртмалла пулчĕ унăн. Мăшăрне, Гальăна, унпа юнашарах пытарнă. Касса илемсĕрлетнĕскерсене, ял халăхĕ Çĕнĕ çул уявĕ хыççăн темиçе кунтанах юлашки çула ăсатнă. Яков ашшĕ Петри пичче картишĕнче выльăхсене вăрçса ĕрлешни, иртсе каякан çынпа пĕр-икĕ сăмах калаçса илес тесе хапха алăкĕнчен урама тухни те курăнмасть. Кăрлач хыççăн тăван кил урати урлă ура пусса курайман вăл. Ĕмĕр пурăнас ĕмĕтпе туса лартнă арча пек тăпăл-тăпăл кил–çуртра Яков Петровичпа Гальăн ачисем тăрса юлнă. Вăталăх ывăлĕн, Павликăн, иртнĕ кĕркунне салтака кайнăскерĕн, службăна вĕçлемесĕрех киле таврăнмалла пулчĕ. Чĕрĕ çынсен пурăнмаллах. Кил нуши халĕ пĕтĕмпех Павлик çине ӳкрĕ. Салатасшăн мар вăл ашшĕ çуртне. Йăмăкĕ Лена та пĕчĕк-ха,

ăна пăхса ўстермелле. Ял çинче Павлик авланать текен саскхура çўрет. Пуçтарăнса пурăнас тесен çемьеллĕ пулмаллах. Аслă ывăлĕ, Коля, Мурманск портĕнче матросра тăнă. Йывăр хуйхă ăна та вирлĕ пырса çапрĕ. Çапах та арçын вăл арçынах. Ывăлĕсем шăла çыртса пулин те тўсеççĕ çак синкере. Ленăн чĕри çинче вара çав асаплă кунранпах чул выртать, куççуль кăлармасăр кун ирттермест вăл. Ытла та юрататчĕç-çке ăна, пĕчĕк хĕре, ашшĕпе амăшĕ. Амăшĕ ачашланине, ашшĕ алран тытса çавăтса çўренине мĕнле манăн! Çунать пĕчĕк чĕре, çулăм тухни кăна курăнмасть.

Пилĕк уйăх ытла иртсе кайрĕ çав синкерлĕ каçранпа. Хĕл каçрăмăр, çуркунне иртрĕ, çăва та тухрăмăр. Çак вăхăтра Яков Петрович Янова ырă кăмăллпа сахал мар аса илчĕ. Уйрăмах ял çамрăкĕсем акатуя хатĕрленнĕ вăхăтра вăйлă палăрчĕ çакă. Яков ăста музыкант, хăй тĕллĕн вĕреннĕ композитор, кашни çулах художество пултарулăх коллективне акатуя хутшăнма хатĕрлетчĕ. Çамрăксем те, ваттисем те сахал мар юрланă, ташланă Яков Петрович баянĕн кĕввипе. Районти уявра вара - ялан тенĕ пекех пĕрремĕш вырăн.

Унсăр тăрса юлнă шкул та - тăлăх çемье пекех. Хальхи директор Валерий Иванович хăйĕнпе пĕрле нумай çул ĕçленĕ юлташне час-часах аса илет. “Çакна Яков Петрович мĕнле тунă пулĕччĕ-ши? Яков Петрович пулсан, мĕн каланă пулĕччĕ-ши кун пирки?” - çакăн евĕрлĕ ыйтусем сахал мар парать вăл хăйне.

Яланах уçă кăмăллă, калаçма юратакан, ялйыша та килйыша юрама пĕлекен Галя çуккипе тунсăхлакансем те сахал мар. Часах çур çул çитет вĕсем вилнĕренпе. Мĕнле килсе тухрĕха çак йывăр çухату? Мĕншĕн килсе тухрĕ-ши Яновсен тĕллĕн çав синкерлĕ каç? Сахал мар çыннăн чĕрине хускатнă çак ыйтусем.

Çĕнĕ çул Яновсемшĕн пăшăрхануллă та пăтрашуллă килсе тухнă. Галя ĕçлекен пысăках мар кĕнеке магазинне тупăш памасть тесе хупса лартаççĕ. Лавккара ревизи тума хушаççĕ. Йĕпе çине сапа тенĕ пек, праçник умĕн Яков Петрович çемйин çывăх çынни, вырăнти кирпĕч завочĕн директорĕ, пурте хисеплесе тăракан Алексей Николаевич Гизов йывăр чирлесе вăхăтсăр вилсе каять. Аслă юлташне юлашки çула ăсататссине йĕркелес ĕçе Яков хăй çине илет, хуйха-суйха вилнĕ çын килйышĕпе тата тăванĕсемпе пайлать. Виçĕ кун пĕр куççуль кăлармасăр чăтать вăл, чун ыратăвне шала, чĕре çумне, пухса пырать. Пытарнă каç, киле таврăнсан, Яков Петрович чăтса тăраймасть, вырăн çине выртса (кун пирки суд материалĕсенче свидетельсем каласа пани пур) йăваланса йĕрет. Тулса çитнĕ ăшчике куççульпе пушатас тенĕ-ши, е хăйĕн пуçĕ çине те пуртă çакса хунине чун тĕпĕнчи туйăмпа сиссе илнĕ - халĕ ĕнтĕ çакна никам та каласа парас çук.

Кăрлачăн иккĕмĕш кунĕнче кил-йыш тĕрлĕ çĕре саланать: Яков Петрович шкула тухса утать. Галя лавккана ревизи тума

хупать, Лена та килте ларса юлмасть. Петри старик çеç килкартинчен аякка васкамасть, яланхи йăлипе выльăх пăхма тухать, ытти вак ĕç патĕнче тĕрмешсе çӳрет. Кăнтăрла тĕлнелле вăл хăйсенчен пĕр кил урлă пурăнакан Падеева Зина патне каçать. Падеева (ялта ăна Зинкă тесе чĕнеççĕ) Петри старикшĕн ют çын мар. Пĕр çирĕм çул каялла, арăмĕ вилсен, Петр Янов Зинкăна киле илсе килсех икĕ çула яхăн унпа пĕрле пурăннă. Çапах та темшĕн пăтти пиçсех çитеймен вĕсен, уйрăлса кайнă. Иккĕшĕ те вĕсем пĕр çулта - çитмĕл тăххăрта пыраççĕ. Уйрăлсан та Петри старик Зинкă патне çӳреме пăрахман, кăнтăрла та кĕрсе тухнă, тепĕр чухне çĕр каçма та юлкаланă.

Ку хутĕнче Зинкăн хĕрĕпе мăнукĕ те килĕнчех пулнă. Петри пӳрт-çуртра ĕç нумайăйи, çемьере хисеп сахал пулни çинчен юншăхласа калаçкаласа ларнă та: “Мунча хутмалла”, - тесе хăвăрт тухса кайнă.

Мунча хутса кĕнĕ-и е кĕмен те-и вĕсем çав кун - халĕ кун пирки татăклă калама хĕн, анчах та çемье каçхине кая юлса, вунă сехетсенче кăна, пуçтарăнма тытăннă. Малтанах Галя лавкка ĕçĕпе татăлса килне ревизи комиссийĕн членĕсемпе Ирина Мочаловăпа тата Дина Горовăпа пырса кĕнĕ. Сĕтел хушшинче ларса вĕсем актсем çырнă, ытти документсене хатĕрлесе çитернĕ. Çав вăхăталла Яков Петрович та килсе çитнĕ. Упăшкине Галя ревизи аван иртни, растрата-мĕн пулманни çинчен пĕлтернĕ, çав ятпа пĕрер черкке сыпса илсен те пăсăклă пулмалла марри пирки систернĕ. Ку шухăша вăл хирĕçлемен. Сĕтел çине ĕçме-çиме тухса ларнă. Ирина Мочалова тытăнса тăман, килне тухса кайнă. Черккесем пушаннă май калаçу та хăй йĕрĕ çине ӳкнĕ, ашшĕн чĕрçи çинче ларакан Лена çывăрса кайнă, ăна диван çине илсе вырттарнă.

Ашшĕ хăйĕн пӳлĕмĕнче çывăрса кайманнине Яков Петрович сиснĕ. Ырă кăмăлпах вăл ăна пӳлĕмри сĕтел патне чĕнсе илнĕ, эрех тултарса панă. Вăхăт чылай çĕрлене кайнине пăхмасăрах, черкке тепĕр икĕ-виçĕ хутчен те çаврăнса илнĕ. Аванах хăналаннă Дина Горова кайма вăхăт çитнине пĕлтерсен, Яков Петрович ăна ăсатма тухать, алăк-хапхана питĕрсе кĕрет. Тăн-тăн утса çӳрекен ашшĕ, çийĕнчи тумтирĕпе мамăк хурса çĕлеттернĕ шăлаварне те хывмасăрах, картишне тухма ӳркенсе витрене шăма тытăннине курнă Яков Петрович ăна ӳпкев сăмахĕпе тĕртсе хурать, вăл пӳртре тула тухмаллах вăйсăрланса çитменни пирки калать. Петри старик хăй çуртĕнче хăй хуçа пулни, кирлĕ пулсан, витрене “пысăккипе” те лартса хума пултарни пирки аса илтерет. Сăмаха ĕçпе çирĕплетсех пама хăтланнă-и е хăтланман-и - çакна пĕлме йывăр (вилнĕ çын каласа параймасть), анчах та Яков Петрович çине тăрсах картишне тухма хистенине хирĕçлесе, ашшĕ кравать уринчен ярса тытнă, ăна вырăнтан хускатнă. Кравать айĕнче выртакан вĕренпе авăрлă çивĕч пуртă сасартăк Петри куçĕ тĕлне пулать. Унпа ăçта усă курма май пурри пирки старик пуçĕнче шухăш çиçсе илет.

Петр Янов унӑн ёҫне тӗпчекен следователе каласапанинчен: "Ҫӗнӗ ҫул умӗн елка лартма эпӗ пӳрте пуртӑ илсе кӗнӗччӗ. Ёҫне туса пӗтерсен те пуртта вырӑнне тухса хума ал ҫитерейменрӗм, хам пурӑнакан пӳлӗмри кравать айне пӑрахрӑм. Январӗн виҫҫӗмӗшӗнче, ҫӗрле, ывӑлӑмпа тӗркешнӗ чухне, кравать уринчен алӑпа ярса илсен, вӑл вырӑнтан хускалчӗ, вара эпӗ унта хам хунӑ пуртта куртӑм".

Шӑв-шава илтсе Галя та ваттин пӳлӗмне кӗрет. Кӑшкӑрашу диван ҫинче ҫывӑракан Ленӑна вӑратать. Пӗр вӑхӑт тӗр-тӗр хускатса илнӗ хыҫҫӑн кил-йыш лӑпланать. Ывӑлӗпе кинӗ ҫывӑрмалли пӳлӗме кӗрсе салтӑнса выртаҫҫӗ, Лена амӑшӗн ури вӗҫне вырнаҫать. Яновсен ҫурчӗн кантӑкӗсенче ҫутӑ сӳнет.

Тӗрткелешӳре вӗриленсе кайнӑ Петри старик ҫеҫ лӑпланма пӗлмен. Выртса та, тӑрса та пӑхнӑ вӑл. Уткаласа ҫӳренӗ. Ывӑлӗпе кинӗ тата мӑнукӗ ҫывӑракан пӳлӗм алӑкӗ умне пырса итлекелесе тӑнӑ. Тем вӑхӑтрах (шуйттанӗ илӗртнех пулмалла) вӑл пурттине кравать айӗнчен туртса кӑларать, спальнӑй алӑкне уҫса ярса ҫутӑ ҫутать. Тепӗр самантран пуртӑ ывӑлӗн пуҫӗ ҫийӗнче йӑлтӑртатса илет те аялалла анать.

Петр Янов унӑн ёҫне тӗпчекен следователе каласа панинчен: Малтан Яшӑна касрӑм. Вӑл хускалмарӗ те. Сас пулнипе арӑмӗ вӑранса кайрӗ, кӑшкӑрса ячӗ. Пуртта ун ҫине сулса ятӑм: иккӗ-виҫҫӗ каснӑ пулмалла. Хӗрӗ ыйхӑран вӑранчӗ: "Мана ан кас, асатте!" - тет. "Лена, сана тивместӗп. Эсӗ пӗчӗккӗ, пурӑн-ха", - терӗм.

Лена Янова следователе каласа панинчен. "Эпӗ вӑранса кайрӑм. Комнӑтӑра ҫап-ҫутӑ. Асатте мамине пуртӑпа касать. Хӑй: "Сапакӑсем, вилӗр, пӗтӗр! - тесе кӑшкӑрать. Мами хускалми пулчӗ. Эпӗ: "Асатте, мана ан кас!" - терӗм. "Сана шеллерӗм. Атя, пурӑн", - терӗ. Хӑй ҫавах лӑпланма пӗлмест: усал, хӑрушӑ. Папи вилменччӗ пулмалла. Вӑл вырӑнтан пӗрре те хускалмастчӗ. Папи чӗрӗ юлтӑр тесе эпӗ асаттене комнӑтӑран илӗртсе илсе тухма шутларӑм. Вӑл мана итлерӗ. Эпир вара унӑн пӳлӗмне кайрӑмӑр. Пурттине вӑл ҫула май лахана чиксе хӑварчӗ".

Эх, ырӑ чӗреллӗ шанчӑка ҫухатман Лена! Вӑл усал аслашшӗне спальнӑран ҫавӑтса тухнӑ вӑхӑтра унӑн ашшӗн чӗри тахҫанах тапма чарӑннӑ пулнӑ ёнтӗ. Яков Петровича касса имретнӗ пуҫӗ ҫинче кайран судпа медицина эксперчӗсем вунпӗр суран тупса палӑртнӑ. Вунпӗрӗшӗнчен кашниййӗ вилмелли суран пулнӑ. Старик лӑпланма пӗлмен: шуйхашнӑ, тулхӑрнӑ. Каллех те каллех лахханта выртакан пуртти патне туртӑнса, Ленӑн вырӑнтан сикнӗ чӗрине ыраттарса асаплантарнӑ. Таҫти вӑрттӑн кӗтесрен тупса кӑларнӑ эрех кӗленчине пушатнӑ хыҫҫӑн ҫеҫ Петри лӑпланнӑ пек пулать. Пӳртре нумай тытӑнса тӑмасӑр вӑл кӳршӗре пурӑнакан Зина (Зинкӑ) Падееван хапхине шаккама тытӑннӑ.

Зина Падеева каласа панинчен: "Пётр Янов маншӑн ют

çын пулать. Вăхăтĕнче эпир унпа арлă-арăмлă пек те пурăннă. Халĕ те вăл пирĕн патăмăра кĕрсе тухмасăр тăман. Пирĕн килте çитĕннĕ арçын çук. Пĕр пăта çапма та çын кирлĕ. Петри ывăлĕпе кинне ялан вăрçатчĕ. "Тытатăп та, пуртăпа майласа хуратăп", - тени те пулнă. Эпир: "Ун пек ан хăтлан", - тесе ӳкĕтлеттĕмĕр. Тепĕр тесен, вăл çакăн пек тискер туса хурасса шухăшламан та...".

Тухса уçнă хапхаран Янов Петри Падеевсем патне кĕрет, хăй ывăлĕпе кинне вĕлерни пирки пĕлтерет. Хăвăрт, тухса кайма васкамасть вăл кунтан. Татах та хăйĕн тискерлĕхĕ пирки паттăр ĕç тунă пек каппайланать.

Яновсен çуртĕнче Лена вилнĕ ашшĕ-амăшĕпе тăрса юлать. Пӳртре - йывăр инкек, тулта - çĕрлехи хура пĕркенчĕк. Шиклене-шикленех Лена чи çывăх кӳрше Гизовăсем патне каçать. Кӳршĕ хĕрарăмĕ Яновсен килĕнче синкер ĕç пулса иртнине курнă хыççăнах Тамарккинсене шаккаса вăратать. Милицин участокри инспекторĕ Николай Супов патне çын яраççĕ. Участковăй районпа çыхăнать. Ирхине çичĕ сехет тĕлнелле яла прокуратурăпа милици сотрудникĕсем пырса çитеççĕ. Ку вăхăталла хăйĕн "паттăрлăхĕ" пирки кӳрше евитлеме кайнă Петри старик те киле кăштăртатса çитет.

Тискерлĕхе нимĕнле сăлтавсемпе те тӳрре кăларма çук. Тăнне çухатнă, ăсран тайăлнă çын кăна хăй мĕн тунишĕн явапла мар. Следстви пынă вăхăтра Янова темиçе хутчен те медицина комиссийĕ витĕр кăларнă. Опытлă врачсемпе психиатрсем вăл 79 çула кайнă пулсан та ăс-тăн тĕлĕшĕнчен улшăнманнине, хăйĕн юнлă ĕçне ăспа-пуçпах тунине палăртса панă. Прокуратура следовательне Суражникова допроссенче Янов хăй ывăлĕпе кинне вĕлернишĕн пачах та ӳкĕнменни çинчен пĕрре çеç мар каласа панă. Следователь çак тискерлĕхĕн сăлтавĕсем çинчен ыйтса тĕпчеме пуçласан, Янов: "Эп вĕлермен пулсан, вĕсем хăйсем мана пĕтеретчĕç", - тесе ответленĕ. Çапах та чылай вăхăт хушши Петр Янов ывăлĕпе кинĕ хăйне мĕншĕн вĕлерме пултарнине сăлтавласа парайман. Изоляторта чылаях ларнă хыççăн çеç, - те хăй ăсĕпе, те пĕрле ларакансенчен кам та пулин канаш панипе, - Янов çав сăлтавсене хут çине çырсах ăнлантарма хăтланнă. Ун шучĕпе çамрăксем çуртпа хăйсем пĕлнĕ пек усă курасшăн имĕш. Килтисем çавăн пекех пуяс çул çине тăнă, анчах ватти кун пирки ял çине сăмах кăларать. Çавăнпа çамрăксем ваттине "леш тĕнчене" ăсатасшăн иккен. Тата та, тата та çакăн пек "сăлтавсем". Тĕпрен илсен - пĕтĕмпе тенĕ пекех пӳрнерен ĕмсе кăларнă фактсем кусем. Пӳрт-çурт, килкарти, ырлăх-пурлăх пирки калаçас пулсан, пĕтĕмпех ĕлĕкхине, иртнине аса илес пулать.

Тӳлеккассинче Петри Яновсен пысăк çемйинчи юлашки ывăл шутланнă. Кĕçĕнни пулсан та, ачашланса ӳсеймен вăл. Çамрăклах алла ĕç тытнă. Шкула мĕнпурĕ те виçĕ хĕл кăна

çӳренӗ. Ун ырӑнне ачаллах каскалама ӑста пулнӑ, выльӑх пӑхнӑ, тырӑ вырнӑ, вӑрман турттарнӑ. Пӗр сӑмахпа каласан, килте вӑл туман ӗç те пулман. Вунçиччӗре каччӑ шутне кӗрет, çирӗм çула çитсен авланса ярать. Хӑйсен ялӗнчи сӑпай та ӗçчен хӗре Урине ятлӑскерне качча илет. Часах вӗсен хӗрача çуралать. Ӑна Ульха ятлӑ хураççӗ. Çамрӑк çемье ӑнтарсах пурӑнма тытӑнать. Темиçе çултан вӑрçӑ пуçланать. Хӗрӗх пӗрремӗш çулхи август уйӑхӗнче Янова салтака илсе каяççӗ. Фронтра нумаях çапӑçма тивмен ӑна, тепӗр темиçе уйӑхран вӑл тыткӑна лекет. 1942 çулхи июльтен пуçласа 1945 çулхи майӑн 7-мӗшӗччен Петр Янов Италире лагерьсенче пурӑнать. Вӑрçӑ вӗçленнӗ чухне Америка çарӗсем ӑна ирӗке кӑлараççӗ. Тепӗр икӗ çултан çеç вӑл тӑван ялне çаврӑнса çитет.

Килне таврӑннӑ тӗлелле Петр Янов ӗнтӗ унчченхи Петри пулман: чылаях хаярланнӑ, арӑмне те хытӑ тыткаланӑ, ӗçкине те тӗртсе яман. Салтакра тата тыткӑнра пурӑнни çинчен каласа пама юратман вӑл. Вӑрçӑ хирӗнче тата тыткӑнра унпа пӗрле пулнӑ çынсем ялта та, районта та тупӑнман. Петри чунпа та, юнпа та хытса пынӑ, арӑмӗпе хӗрне каçса кайсах юратнине палӑртман. Вӑрçӑ вӗçленнӗ хыççӑн виçӗ çултан ывӑлӗ Яша çуралсан та, кил-йышра пулса тӑнӑ лару-тӑру улшӑнсах кайман. Янов вербовкӑпа чылай вӑхӑта тухса кайса çемьерен татӑлса пурӑнни те час-часах пулкаланӑ. Хӗр чухнех ялта Урхи Урини ят илнӗ мӑшӑрӗ çав-çавах Петри арӑмӗ пулса тӑрайман-ха. Ялта ӑна хӗр чухнехи пекех чӗннӗ. Упӑшки сахал сӑмахлӑ та кӑра пулни, килтен тухса кайса чылай вӑхӑт таврӑнманни Уринен çемçе кӑмӑлне чылай татнӑ. Майӗпенех вӑл ӗçме тытӑннӑ, пурӑна-киле эрех тыткӑнне лекмеллипех лекнӗ.

Петри мӑнукӗ Павлик следователе каласа панинчен: “Асаннене эпӗ астумастӑп. Вӑл эпир ӳссе çитиччен вилнӗ. Асаттерен хӑраттӑмӑр. Вӑл мана хӗрхеннине, ачашланине аса илейместӗп. Вӑрçӑра пулни çинчен каласа паратчӗ. Пленра пурӑнни пирки аса илме юратмастчӗ. Тыткӑнра чухне вӑл тискер пулнӑ тесе ялта вӑрттӑн калаçкалатчӗç пулмалла: анчах та те тӗрӗс ку, те çук - калама пултараймастӑп”.

Ывӑлӗ, Яша, кӑмӑлӗпе амӑшне хывнӑ, характер çирӗплӗхӗпе ашшӗ евӗрлӗ пулнӑ. Ачаллах вӑл купӑс калама вӗреннӗ, кӗнеке енне туртӑннӑ, алла пӑчкӑ-пуртӑ, сава тытма юратнӑ. Виççӗн анчах пурӑннӑ пулсан та, (вӑл вӑхӑталла аппӑшӗн, ашшӗ хистенипех, килпе сывпуллашма лекнӗ, кайран вӑл качча тухнӑ) çуртра хӑтлӑх хуçаланайман: амӑшӗ ӗçме пӑрахман, ашшӗ ӑшчик тулса тӑнине ӗçре пусарма тӑрӑшнӑ, кил ӑшшине туймасӑр пурӑннӑ. Петри ФЗО шкулӗ пирки аса илтерсен, ашшӗ-амӑшӗнчен писсе пыракан Яша хӑй те килте тытӑнса тӑма шутламасть. Яла вӑл темиçе çултан çеç çаврӑнса çитет, клубра вӑл хӑй пултаруллӑ музыкант, ӑста организатор пулнине кӑтартса парать. Ӑна таврари ялсенчи çамрӑксем те паллама пуçлаççӗ. Яша Савыдова Гальӑна килӗштерет, вӗсем

пĕрлешеççĕ. Ку вăхăталла Яков Янов пединститутăн музыка факультетне вĕренме кĕнĕ ĕнтĕ, çавна май вĕсем çемйипех куçса каяççĕ. Çитмĕлмĕш çулсен пуçламăшĕнче амăшĕ вилсе каять те, çамрăк мăшăр яланлăхах яла таврăнать. Яков Янов клубра та, вырăнти вăтам шкулта та ĕçлет, часах ялта районти музыка шкулĕн филиалне уçаççĕ.

Петри ăста платник шутланнă пулсан та, кил-çуртне йĕркеллех тытса тăрайман. Укçи-тенки те, майĕ те пулман-тăр ун чухне. Ывăлĕ яла яланлăхах таврăннă хыççăн Яновсем çĕнĕ çурт тума тытăнаççĕ. Ку ĕçĕн пуçаруçи Яков хăй пулать.

Пултаруллă ывăл ашшĕшĕн савăнăç пулмалла ĕнтĕ. Хăшпĕр çыншăн ун пек мар иккен. Ывăлĕ хăйĕнчен маттур, ăслă, правур пулни, нумай вĕренни Петрин кăмăлне каймасть. Вăл кӳтсе, мăртăхса çӳреме пуçлать. Килте унччENхи пекех хăй хуçа пулма ĕмĕтленет, ывăлне ача вырăнне хума пăрахмасть.

Янов Петр хĕрĕ Ульха следователе каласа панинчен: "Атте мăшкăлне нумай тӳснĕ. Анне те ун пиркиех вăхăтсăр çĕре кĕчĕ пулмалла. Мана та хĕр пулса çитичченех килтен кăларса ячĕ. Яша маттур, ăслă пулнăшăн сахал мар савăннă эпĕ. Атте вара çакăншăн тарăхатчĕ, туллашса çӳретчĕ. Ывăлне сăлтавсăрах кураймасăр пурăннăшăн пĕрре аттене хытă вăрçса хăвартăм. Пурпĕрех ăса кĕмерĕ, авă мĕн туса хучĕ!"

Кил-çуртри вак-тĕвекшĕн хирĕçни, чашăк-тирĕк шăкăртатни Яновсен çемйинче курайманлăха куçать. Хутран ситрен пĕр-пĕрин çине алă çĕклени те пулкалама тытăнать. Пĕррехинче, хытă тарăхнă вăхăтра, Яков ашшĕ çине стакан вăркăнтарать. Кĕленче лекнипе ваттин пуçĕ шăтать.

Милицин участокри инспекторĕ следователе каласа панинчен: "Янов Петр хăйĕн ывăлĕ стакан ывăтса ярса пуçне шăтарни çинчен, килте шăв-шав пулкаласа тăни çинчен пĕлтернĕччĕ. Эпĕ ун чухне ятарласа вĕсемпе тĕл пулса калаçрăм. Яков Петрович тунса тăмарĕ, малашне ун пек пулмасси пирки пĕлтерчĕ. Ун хыççăн эпĕ Яновран жалоба илмен".

Пĕр-пĕрне сивлесе пурăнакан ашшĕпе ывăлне ĕç анчах вăхăтран вăхăта мирлештерсе тăнă. Ĕçĕ вара Яновсен нумай пулнă. Пӳрт лартнă хыççăн вĕсем хуралтăсем çавăраççĕ, хапха тăваççĕ, гаражпа сарайсем купалаççĕ. Иртнĕ çул анчах мĕн тума пултарнине пĕтĕмпех туса çитереççĕ.

Яновсен кӳрши Ситова автора каласа панинчен: Петри тетепе Яков Петрович мана иккĕшĕ те нумай пулăшнă. Ăста çынсемччĕ вĕсем. Шел, иккĕшĕ те çук ĕнтĕ халь: пĕри - тупăкра, тепри - тĕрмере. Юлашки çулсенче килĕнче арăш-пирĕшсем хускалкаларĕç пулмалла. Ĕçки те тупăнсах тăчĕ ĕнтĕ. Çапах та ĕçленĕ чухне питĕ мирлĕччĕ вĕсем. Пĕлтĕр сарай купаларĕç. Эпĕ те пахчара ĕçлерĕм. Ывăлĕпе ашшĕ пĕр-пĕрне тем каласа параççĕ, пĕр вĕçĕмсĕр кулаççĕ. Çапла кунĕпех шăкăл-шăкăл калаçса ĕçлерĕç.

Карăнтарнă ухă хăçан та пулсан йĕппине кăларса яратех. Тулса тăвăннă тарăхупа курайманлăх та тухса тапăнма çул шыраççĕ. Вĕчче хывса çӳрени, кӳрентерӳпе курайманлăх ахаль иртмен: кăрлачăн пĕр каçĕнче çаксем ашшĕне ывăлĕн пуçĕ çине пуртă çĕклеттернĕ.

Тăватă уйăх ĕçленĕ следователь Петр Янов ĕçĕпе. Вун-вун свидетельтен ыйтса тĕпченĕ, документ нумай пуçтарнă. Район прокурорĕн помощникĕ Суражников юрист опытлă специалист пулни вăл тĕпченĕ ĕçпе паллашнă хыççăн тӳрех курăнать. Янов йывăр преступлени тăвас çул çине ăнсăртран тăманнине следователь документсем, ăнлантару хучĕсем, çынсем каласа панисем, тĕрлĕрен доказательствăсем урлă яр уççăн кăтартса панă. Çапах та, мĕнпур доказательствăсем куç умĕнче пулсан та, нимĕнле инстанци те çынна преступник тесе тĕрмене хупса хураймасть. Çакна тăваканĕ - суд. Ĕçе Чăваш Республикин Аслă сучĕ пырса вырăнта пăхса тухнă.

Судсене итлеме юратакан Мария Ивановна Петрова каласа панинчен: "Эпĕ судсенче нумай пулса курнă. Темĕн те пĕлетĕн, темĕн те илтетĕн унта çӳресе. Хуйхă-суйхă та, куççуль те сахал мар пулать. Суд залĕ савăнмалли вырăн мар ĕнтĕ. Ывăлне касса вĕлернĕшĕн ашшĕне суд тунине пĕрремĕш хут куртăм. Ун пек çын хăйне тыткаланипе те, пичĕ-куçĕпе те тискер пуль тенĕччĕ. Преступник ватăлса кĕптĕрмĕшленнĕ старик кăна пулчĕ. Кӳлепипе хăй чылаях çӳллĕскер, анчах следстви камерисенче ларса чылаях имшерленнĕ пулмалла. Утнă чухне шăлаварне туртсах тăрать. Суд пуçланиччен тăванĕпе калаçса илчĕç. "Çăкăр илсе килмерĕн-и?" - тет хайхи. Апла хевтине çухатман иккен-ха ку старик. Хысна апачĕ çитсех пымасть пулмалла ăна. Килти çăкăра çисе пăхасшăн. Хăй этем евĕрлĕ пулнă пулсан, килти çăкăра мĕн виличченех çимеллеччĕ те унăн, анчах урăхла пулса тухнă, ав. Кăмăлĕ хытă вара. Айăпне йышăнчĕ пулсан та, ӳкĕнмерĕ. Тен, çĕр йăтайми çылăхĕшĕн тĕрмере ӳкĕнĕ. Вăхăт пулать-ха унăн..."

Судăн хăйĕн йĕрки. Унăн тĕрĕслĕхе пĕлмелле. Айăплакансемпе айăпланакан сăмахĕсем, свидетельсене ыйтса тĕпчени, хӳтĕлекенĕн сăмахĕ. Унтан - приговор. Петр Янова хăйĕн ывăлне тата кинне тискеррĕн вĕлернĕшĕн Раççей Федерацийĕн Уголовнăй кодексĕн 102-мĕш статйипе айăпланă. Преступлени обществăшăн хăрушă пулнине, çак тискер ĕçе пĕчĕк ача куçĕ умĕнчех тунине шута илнĕ. Ывăлĕпе кинĕн ӳчĕ çинче шутласа çитерейми сурансем пулнине, çав сурансене пула вĕсем пысăк асап тӳссе вилнине те асран кăларса пăрахман. Суд Янова çирĕп режимлă колонине 15 çуллăха яма приговор кăларнă.

Судсене итлеме юратакан Мария Ивановна Петрова каласа панинчен: "Приговора Янов пăшăрханмасăр, лăпкăн итлерĕ. Те хăлхи илтменнипе, те юри - вуласа пĕтерсенех:

“Миçе çула суд турĕç вара мана?” - тесе ыйтрĕ. “Вунпилĕк çула”, - пулчĕ ответ. “Вунпилĕк çула... Юрать апла. Пĕр-икĕ çулне пурăнăп ĕнтĕ”, - пурте илтмелле каласа хучĕ вăл. Пĕр-икĕ çул мар, ытларах пурăнтăрччĕ-ха тĕрмере çав старик. Хăй тунă преступлени йывăрлăхĕ унăн чĕрине чул пек пусса тăтăрччĕ”.

Çакăн пек преступленишĕн суд тата та кăрарах приговор йышăнма пултарнă. Анчах та Янов халиччен судпа айăпланманнине, вăл Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ пулнине, айăпне пĕтĕмпех йышăннине шута илнĕ.

ВАСАНПУÇĔНЧЕ ÇАПЛА ПУЛНĂ

Васанпуçĕнчен кирек хăш еннелле каяс пулсан та вăрман витĕр тухмалла. Çак пин те виççĕр çынна яхăн пурăнакан пысăк яла пуçласа яракан тахçан авал çĕрне-шывне йывăç хăртса, шурлăх типĕтсе аслăлатса пынă теççĕ пĕлекенсем.

Хытă ĕçлеççĕ ял çыннисем, ĕçме те вăйлă ĕçеççĕ. Эрех - ял магазинĕнче чи нумай сутăнакан таварсенчен пĕри. Сăмакун юхтарма пĕлмен хĕрарăм сахал кунта. Вăйлă ĕçкĕ этеме хăй аллипе тыткалать: йăваша хаярлатать, сывлăхлин хевтине пĕтерет, çамрăккине хăвăрт ватăлтарать. Çынсен шăпи çинчен каласа паракан вырăн - Васанпуçăн аслă масарĕ. Ватти çитнипе, “çырли пиçнипе” çакăнта ĕмĕрлĕх вырăн тупнă кашни çын пуçне пÿкле вилĕме пула вăхăт çитмесĕр масара ăсаннисем иккĕ-виççĕрен кая мар. Пĕри эрнипех куç курми пуличчен ĕçнĕ хыççăн тÿнсе кайнă та эрех хăватне пула хĕллехи урамра ураран ÿксе шăнса хутланнă, виççĕмĕшĕ ÿсĕр упăшки ватса çĕмĕрнĕ хыççăн хĕне кайса ура çине тăрайман, тăваттăмĕшĕ ĕçкĕпех хăй этем ĕренкинчен тухнине туйса илнĕ, наркăмăш ĕçсе пурнăçран уйрăлнă. Пиллĕкмĕшĕ, улттăмĕшĕ, çирĕм саккăрмĕшĕ, çитмĕл çиччĕмĕшĕ... Нумайăн вĕсем - вăхăт çитмесĕр пурнăçран уйрăлса кайнисем.

Вăйлă ĕçме укçа нумай кирлĕ. Хальхи саманара ялта укçа тупма йывăрлансах пырать. Васанпуçĕнче “вăрман хÿттинче” пурăнакансем сахал мар. Çавăн пек çынсене вăрман укçаллă пулма та, эрехпе шăварăнма та пулăшать. Лесник тесен вара - хăть те эрехпе шыва кĕр. Йывăç хакланчĕ пулсан та, пурпĕрех укçаран хаклă мар. Хăми-пĕрени те, вутти-шанки те кирлĕ халăха. Çимесĕр-ĕçмесĕр, çипуç çине ямасăр йывăç туянать хресчен çынни. Вăрманĕ çĕрĕкки-пăсăкки мар, лайăххи пултăр тесе эрехне те шеллемест вăл.

Эрех пăкки тесех каламалла марччĕ-ха ĕнтĕ Васанпуç лесникĕ Семен Салтынин пирки. Вăтăр виççĕри кĕрнеклĕ арçын, виçĕ ача ашшĕ вăл. Илĕм-тилĕмпех обходраччĕ: йывăç кастаратчĕ, сыплаттаратчĕ, çаврăнса килетчĕ, пушăлла килекенсене туллипе ăсатса яратчĕ. Ĕçесси те пулнах çав ĕнтĕ; вăрманти “ресторан” кăнтăрла иртсен, кун каç енне сулăнсан,

“уҫӑлатчӗ”. Паян пӗри хӑналать, ыран - тепри. Ӗмӗр тӑршшӗпе те пӗрре анчах курма пӳрнӗ ҫынсемех эрех сӗнеҫҫӗ, ҫыртмаллине тӗртеҫҫӗ. Каҫхинехи ӗҫке моторлӑ пӑчкӑпа вӑрман касакан Костя Куницын та хутшӑнатчӗ. Ҫапла вара туррӑн кунӗ пӗр литр эрехсӗр иртместчӗ.

Ун пек чухне, ҫӗр-икҫӗр грамм сыпсанах, Ҫеменӗн чӗлхи уҫӑлса каять, татти-сыпписӗр калаҫма пуҫлать вӑл, тепрер черкке (стаканӑн ҫурри) ӳпӗнтернӗ хыҫҫӑн Куницынран тӑрӑхлама, вирлӗ сӑмахсемпе тӑрӑнтарса ӑна начара кӑлара пуҫлать. Костя Ҫеменрен пилӗк ҫул кӗҫӗнрех. Авланман. Тӑватӑ ҫул хушши тӗрмере ларса тухнӑ. Пӗччен пурӑнать. Куницын нумай калаҫакан ҫын мар. Эрех ӗҫнӗ хыҫҫӑн тата та чӗмсӗрленет вӑл, янах чӑмӑрӗсем выляни тата куҫӗсем хаяр ҫиҫӗм ҫиҫтерме тытӑнни ҫеҫ Костя ҫилленме пуҫланине, унӑн ӑш-чикӗ кӗвӗлсе пынине кӑтартаҫҫӗ. Йӗкӗлтесе каланӑ кашни сӑмах унӑн чӗрине йӗп пек тӑрӑнать, вӗчӗх кӑмӑл ҫӗпре пек йӳҫсе хӑпарать. Темӗн туса пӑрахӗччӗ вӑл ҫакӑн пек чухне Салтынина, анчах та ыранах ӗҫрен кӑларса ярасси хӑратать: пӗччен пулсан та ӑҫта пырса чикӗн пуҫна ку чухне?

...Ҫав каҫ вӗсем вӑрманти “ресторан” хупӑнсан та тӳрех килӗсене саланма васкаман. Урампа иртсе ҫӳрекенсем Константин Куницынӑн пӗччен пӳртӗнче Семен Салтынин ӗрлешсе калаҫнине илтнӗ, тӳп-тӳп сасӑ пулнине ӗнентерекенсем те пур.

Ирхине амӑшӗн килӗнче Костя Куницынӑн сивӗнсе хытма ӗлкӗрнӗ ӳтне мӑйкӑчран кӑларса пӳрте кӗртеҫҫӗ. Ҫамрӑк ҫын мӗншӗн ҫакӑнса вилнин сӑлтавне пӗлеймесӗр хӑшкӑлаҫҫӗ ял ҫыннисем. Вилене кастарма илсе кайнӑ хыҫҫӑн Васанпуҫӗнче тепӗр хыпар сарӑлать: Ҫемен Салтынин лесник ҫухалнӑ.

Ялта тӗр-тӗр сӑмах ҫӳрет. Ҫемене унта та, кунта та “курнӑ” ҫынсем тупӑнма пуҫлаҫҫӗ. Иккӗмӗш талӑк ҫине кайсан та лесник киле таврӑнмасть. Ял администрацийӗн представителӗсемпе милици работникӗсем тупӑкра выртакан Костя Куницынӑн тӑлӑх ҫурчӗн картишне пунеттейсемпе пӗрле кӗреҫҫӗ. Пӳрт алӑкне ҫӑрапа тӗплӗн питӗрсе илнӗ. Уҫҫи шырасан та тупӑнмасть. Ҫӑрана ҫӗмӗрсе шала кӗреҫҫӗ. Алӑк патӗнчех пуртӑ выртать, леререх - арҫын кӑна пурӑнакан тирпейсӗр пӳлӗмӗн тӗпел кукринче - майсӑр хутланса ӳкнӗ кӗлетке. Пичӗпе ҫавӑрсанах ӑна палласа илеҫҫӗ. Ку - Семен Салтынинӑн вилӗ ӳчӗ. Пуҫӗпе ҫамки ҫинче - пуртӑпа касса имретнӗ сурансем.

...Юлашки виҫӗ-тӑватӑ уйӑхра пӗр ача та ҫуралман. Васанпуҫ ялӗн масарӗ ҫинче ҫӗнӗрен пытарнӑ икӗ вилтӑпри. Касса кӑларнӑ ҫерем те кӑҫалах ешерес ҫук-ха ӗнтӗ. Ҫӗмӗрт сивви тӑрать пулин те, ҫӑкасем ҫулҫӑ сарасшӑн. Вӗсен вӑхӑчӗ ҫитнӗ, Ҫеменпе Костя анчах тӑрса тухас ҫук масар ҫинчен. Вӗсен вӑхӑчӗ иртнӗ. Тӑрлавсӑр пурӑнса сӑлтавсӑр вилнӗ ҫамрӑк арҫынсемшӗн хурланса ҫил ачисем ҫеҫ палӑксемпе хӗрессем хушшинче шӑхӑрса ҫӳреҫҫӗ.

АЧА ÇУРТНЕ ĔÇЕ ВЫРНАÇРĂМ

Иван Пресмыкаев каласа пани

Çулталăк ытла килте ахаль ларнă хыççăн эпĕ çĕнĕ ĕçе вырнаçрăм, тăваттăмĕш уйăх ĕнтĕ ача çурчĕн дворникĕ шутланса тăратăп. Ача çурчĕ мĕн иккенне çынсем лайăх пĕлеççĕ. Эпĕ ĕçлекенни вара урăхларахскер. Ăна пĕр çемье тытса тăрать. Аристиния Абрамовнăпа Аврелий Аристархович Перехлестовсем - арăмĕпе упăшки - тĕрлĕрен ÿсĕмри ачасене усрава илнĕ те килти ача çурчĕ уçнă. Патшалăх вĕсене сакăр пÿлĕмлĕ, заллă, столовăйлă, пысăк кухньăллă икĕ хутлă коттедж туса панă. Подвал, кирпĕчрен купаланă складсем, виçĕ автомашина лартмалăх гараж пур. Перехлестовсен ывăллăха илнĕ ачасем шăпах вуннăн: тăвату хĕрача татаултă ывăл ача. Ывăлĕсем - виççĕшĕ - килте пурăнмаççĕ. Вĕсем тахçанах арçын шутне кĕнĕ: пĕри - çирĕм пĕрте, иккĕшĕ çирĕм тултарса пыраççĕ. Виççĕшĕ те Аврелий Перехлестов уçнă мини–пекарьнăра пекарьсем пулса ĕçлеççĕ. Ача çуртне валли тесе уйăрнă икĕ машинăран пĕринпе çăкăр турттарса хăйсемех сутса çÿреççĕ. Валерий, Родион тата Савелий, чăннипе çитĕнсе çитнĕ каччăсем пулсан та, хут çинче вунултă–вунçичĕ çулхи çамрăксем пек шутланаççĕ. Вĕсене ывăллăха илнĕ чухне Перехлестов хыснари чиновниксене пысăк укçа панă, ачасен çулне чакарттарса хут тутарнă. Аврелий Аристарховичпа Аристиния Абрамовна "ывăлсене" усрама тесе патшалăхран паян кун та уйăхсерен темиçе пин тенкĕ укçа илсе тăраççĕ. "Ывăлĕсем", çăкăр пĕçерсе–сутса, Перехлестовсене сахал мар тупăш параççĕ. Çăкăр турттаракан машинăсăр пуçне Перехлестовсен хăйсен вĕр–çĕнĕ мерседесĕ те ача çурчĕн гаражĕнче ларать. Аристиния Абрамовнăпа Аврелий Аристархович ку машинăна пĕрре те "лартма" пĕлмеççĕ: ун çине ларса таçта каяççĕ, таçтан таврăнаççĕ. Вăхăта вĕсем хула хĕрринчи дачăра тата пĕлтĕр кăна туса лартнă хăйсен керменĕнче ирттереççĕ.

Перехлестовсене хăйсене ача–пăчаллă пулма турă пÿрмен. Патшалăх тăлăх ачасене вуннă таранччене вĕсене мĕнле шанса панă, çакăн пирки эпĕ нимĕнех те калама пултараймастăп, анчах та тăлăхсем Аврелий Аристарховичпа Аристиния Абрамовнăшăн ылтăн арчи пулса тăнине лайăх чухлатăп. Перехлестовсен патшалăх шучĕпе çеç мар, суту–илÿ туса та вăйлă пуяççĕ. Хулара вĕсем нумаях пулмасть апат–çимĕç магазинĕ уçрĕç. Ачасем валли уйăрнă апат–çимĕç складран çак магазина ещĕкĕ–ещĕкĕпе куçать, тăлăхсем вара нумай чухне типĕ тытаççĕ.

Манăн ĕç - çуртпа килкартине тирпейлĕ тытасси тата хурал тăрасси. Халиччен килте газ плити çыvăхне питех пырса çӳремен пулсан та, Перехлестовсем килте çук чухне ачасене апат та пĕçерсе паратăп. Хамах пултараяс та çук пуль те, яшка–пăтă пĕçернĕ çĕрте мана хуçасен усрава илнĕ Наташа ятлă хĕрĕ нумай пулăшать. Аванах хатĕрлетпĕр пулмалла, сĕтел хушшине ларсан, çиччĕн çичĕ кашăка çавăрттараççĕ кăна вара.

Хуçасем усрав ачисемпе сивĕ те, ăшă та мар. Ют çынсем пекех шутланаççĕ вĕсем ачасемшĕн. Ача çуртне хаçатран е радиопа телевиденирен журналистсем пымалла чухне çеç урăхланаççĕ. Аристиния Абрамовна газ плити умне хăй тăрать, ачасен кĕпи–йĕмне прачечнăя памасть, ваннăйра кĕлерсе лартать. Аврелий Аристархович, хăйсен усрав ывăлĕсемпе хĕрĕсен ячĕсене те манса кайнăскер, пӳлĕмсене кĕрсе ачасемпе çĕнĕрен "паллашса" çӳрет. Корреспондентсем пырас кун Перехлестовсем "аслă ывăлĕсене" те чĕнсе илеççĕ. Йăрă фотокореспондент вуниккĕшне те пĕрле ӳкерсе илет: вунă ача тата вĕсен юратнă "ашшĕпе амăшĕ". Хаçатра телейлĕ çемьен "телейне" уçса паракан пысăк статья çапăнса тухать, Перехлестовсене телевиденипе те час–часах кăтартаççĕ.

Эпĕ ĕçлеме тытăннăранпа ача çуртĕнче ытти йышши хăна та пулчĕ, çӳлти пĕр пысăк учрежденирен пысăк чиновник пырса кайрĕ. Перехлестовсем вăл пынă çĕре те лайăх "хатĕрленчĕç". Кантăк рамисене çĕнĕрен сăрланă май, ăнсăртран эпĕ Перехлестовсен калаçăвне илтрĕм. Аристиния Абрамовна Аврелий Аристарховича кĕçнерникун валли икĕ пин доллар укçа хатĕрлеме хушрĕ. Кĕçнерникун вара шăпах вĕр–çĕнĕ автомобиль çине ларса хаклă хăна килсе çитрĕ, ячĕшĕн тенĕ пек пӳлĕмсене кĕрсе çӳрерĕ, демократ йĕркипе манпа та икĕ–виçĕ сăмах хушса калаçрĕ. Апат çиме юлмарĕ (ачасен хушшинче пая кĕме юрать–и вара?"). Перехлестовсемпе ăшшăн калаçса уйрăлчĕ. Икĕ пин доллар хунă конверт унăн кĕсйине кĕнĕ пирки эпĕ пĕрре те иккĕленместĕп.

Çапла, çемьеллĕ ача çуртĕнче ĕçлеме пуçланăранпа пиллĕкмĕш уйăх çине кайрĕ. Лайăх мана кунта. Сережăпа Светланăпа, Аленăпа, Наташăпа, Ваньăпа, Славикпе, Анютăпа аван паллашрăм. Ачасем мана кăмăллаççĕ. Выçă çӳреместĕп кунта. Перехлестовсем вара... Вĕсем ачасемшĕн ют çынсем. Хăймине хăйсем çиеççĕ, ачасене кăвак сĕт параççĕ. Мĕн тăвăн? Тĕнчене тӳрлетсе пĕтерейместĕн.

ÇĔНĔ ВĂХĂТ МЫСКАРИ

Ял хĕрарăмĕ Секлетея Секретарева калавĕнчен

Утмăл урлă каçмасăрах хама пĕрре те ватă çын тесе калас килмест. Çапах та, чир-чĕр çулăхсах тăнипе, çулсем иртни самаях сисĕнме пуçларĕ. Ачалăхăм та, хĕр ĕмĕрĕ те выçăллă-

тутӑллӑ, йӗпеллӗ-сапаллӑ иртрӗҫ те - урӑхла пулма та пултараймасть пуль ҫав. Виҫҫӗмӗш ҫул ӗнтӗ пӗвер пӑсӑлнипе хытах аптратӑп. Вӑхӑт-вӑхӑт сывламалла мар хӗстерсе лартать, ҫут тӗнче ҫине пӑхас килми пулса ҫитет. Ҫӑвартан юн кайнипе пӗлтӗр пӗр уйӑх ытла пульницара выртрӑм, аран-аран сывалкаласа тухрӑм.

Йывӑр ӗҫлеме юрамасть теҫҫӗ те тухтӑрсем, ялта шыв витри йӑтмасӑр, ӗне айне лармасӑр, ҫурӑм ҫине тулли михӗ хумасӑр епле пурӑнӑн? Те ҫӗрулми кӑларса хытӑ ӗшентӗм, те армана пусыпка авӑртма ҫӳрени юрамарӗ - каллех пӗвер шыҫса тухрӗ. Мана, тӑнран тухнӑскере, район больницине ӑсатнӑ. Куҫа уҫса пӑхатӑп та, палатӑра выртатӑп иккен. Паллакан медсестра система текеннине лартма хатӗрленет. Тем самантран тухтӑр та алӑк уҫса кӗчӗ, тӳрех эп выртакан кравать патневаскарӗ. Итлесе пӑхать, хыпашлать. Анализсене те палатӑрах илчӗҫ. Ҫав кунхине темиҫе хутчен те ман пата кӗрсе тухрӗ тухтӑр. Юлашкинчен пӗр ҫыхӑ рецепт йӑтса килчӗ. Мана сыватма пульницара ҫук эмелсем кирлӗ-мӗн, вӗсене хулари аптекӑсенчи коммерци пайӗсенче ҫеҫ туянма пулать имӗш. Пирӗн укҫи-тенки те ҫавнашкал: шӑрпӑкпа тӑвар илсех пӗтет. Хам чирленӗренпех пуҫӑм вӗҫӗнчен кайма пӗлмен хӗрӗме хапха тутарма пуҫтарнӑ укҫам арчан хӑш кӗтессинче выртнине каласа патӑм, рецепчӗсене те алранах тыттартӑм.

Айӑмри ҫичӗ-сакӑр саплӑклӑ прустӑнь, асапланнӑ май хам тапкаланнипе-ши, варринченех ҫурӑлса тухнӑ. Матрасӗ (юн-пӳр хытса ларнипе пулӗ) мӗн тӗслӗ пулни те палӑрмасть. Урӑххи ҫук терӗҫ. Минтер текенни те типнӗ пашалу евӗрлех. Хӗрӗме ҫак япаласене тата ҫийӗме тӑхӑнма халат илсе килме хушрӑм, ҫемҫе пушмак та кирлӗ пулать терӗм. Ахаль каламан ӗнтӗ, чир пасманапа кӗрет те мӑскӑлпа тухать, тесе. Ай-яй сывалма йывӑр. Тухтӑрсемпе сестрасем ырӑ кӑмӑллӑ пулнипе, хӗрӗм туянса панӑ эмелсем усса пынипе, килтен илсе килнӗ тӳшек-минтер ҫемҫен ҫывратнипе кӑна хӑтӑлса юлтӑм пулмалла.

Виҫҫӗмӗш-и, тӑваттӑмӗш кун-и - ура ҫине тӑтӑм. Унччен ӑша пӗр хӗлхем апат та яман. Кӑнтӑрлахи апата палатӑна илсе килсех пачӗҫ. Чӗре сурри туса илтӗм-илтӗмех. Яшка ҫимелли кӗмӗл кашӑкӗ сулмаклӑ вара, кӑвак чечеклӗ, сенкер кӑшӑллӑ турилкки те пирӗн килти майлах. Кашӑкӗпе турилккине кӑштӑртатса хамах савӑт-сапа ҫӑвакан пӳлӗме кайса лартрӑм. Каҫхи апат ҫитермелли вӑхӑт та ҫывхарчӗ. Палатӑра манпа пӗрле выртакансем, тумбочкӑсенчен пушӑ кашӑк-чашӑк кӑларса, пӑтӑ антарса килчӗҫ. Эпӗ шарламастӑп. "Ӑҫта кашӑкку, ӑҫта турилккӳ. Мӗн, паян каҫхи апат ҫиес теместӗн-им?" - пырса ыйтрӗ апат валеҫекен хӑрарӑм. "Ара, чашӑк-тирӗке пуҫ айне хурса выртмастӑп ӗнтӗ. Ҫуса-тасатса сан патнах пырса лартнӑччӗ" - тетӗп ҫакна. "Санӑн кашӑккупа турилккӳне сыхласа ларас-и тата манӑн? Хӗрӳ вӗсене килӳнтен илсе килчӗ вӗт. Мӗн тума пырса хутӑн эсӗ вӗсене раздаточнӑйне. Шӑхӑртса кайнӑ ӗнтӗ вӗсене

халиччен!" - ӳпкелешет хӗрарӑм. Хура та, шурӑ та чӗнмерӗм эпӗ ӑна. Ҫав каҫ пӑтта катӑк турилккерен хуҫӑк кашӑкпах ҫиме тиврӗ.

Виҫӗ эрне выртса тем те куртӑм. Вуҫех ҫукка юлнӑ иккен район пульници. Тухтӑрсемпе сестрисем те вӑхӑтра ӗҫ укҫи илеймеҫҫӗ. Ҫӗтӗке тухнӑ пульницана чирлисем кирлӗ япаласене веҫех килтен илсе килеҫҫӗ. Хама та ҫирӗм кун хушшинче хӗрӗм ҫур пӳрте кунта куҫарса пачӗ.

Выртатӑп сывалса пынӑ май ӗнер пульница кравачӗ ҫинче. Хӗрӗм кӳрсе килнӗ эмелсене тахҫанах ӗҫсе, укол туса пӗтернӗ. Хайсен кунта нимӗн те ҫук. Кунта куҫарса килнӗ тупрана каялла мӗнле турттарса каям-ши тесе шухӑшлатӑп. Радио сасси хӑлхана кӗрет. Чӑвашрадио юбилейсемпе выставкӑсем ирттерни ҫинчен хавхаланса каласа парать. "Чӑвашъен - ҫӗнӗ вӑхӑт", - тет. Выртрӑм-выртрӑм та тарӑхсах кайрӑм. Ара, мӗнле мурла ҫӗнӗ вӑхӑт-ку? Унччен пӗрре те апла марччӗ-ҫке: пульницара эмелӗ те, кашӑкӗ-чашӑкӗ те, минтерӗ-ҫытарӗ те пурччӗ. Тарӑхнипе: "Ҫӗр ҫӑттӑр ку ҫӗнӗ вӑхӑта!" - терӗм те вырӑн ҫинчен тӑрса нушникелле утрӑм.

САМСУН МАНА ХӐРХӐМА КӐЛАРЧӖ

Хула хӗрарӑмӗн Пескарева-Акулован калавӗнчен

Упӑшкам пӑрахса тухса кайрӗ.

Арҫынпа пӑрӑнса курнӑ, ҫулланнӑ хӗрарӑма килте пӗччен тӑрса юлма питӗ кансӗр. Ҫав вӑхӑталла завочӗ те пирӗн йӗркеллӗ ӗҫлейми пулчӗ: виҫӗ уйӑхра пӗрре отпуска ярса тӑма пуҫларӗҫ. Пӗррехинче, хампа пӗрле ӗҫлекен хӗрарӑм патне хӑнана кайсан, 25-27 ҫулхи кервен арҫынпа паллашрӑм. Пурнӑҫ тути-масине ҫамрӑклах лайӑх астивсе курнӑ, синкер ларутӑруран яланах ӑнӑҫлӑ тухма пултаракан ҫын пек туйӑнчӗ вӑл мана паллашнӑ каҫах. Йӑнӑшман иккен. Икӗ хутчен анчах пулчӗ ҫакскер хваттерӗмре, эпӗ пӗтӗмпех унӑн аллине кӗрсе ӳкрӗм. Темшӗн хӑй ӑҫта ӗҫлени ҫинчен уҫҫӑн каласа памастчӗ. Укҫине кӗрхи ҫулҫа сапаланӑ пек сапаланине курса, тупӑшӗ унӑн самаях пысӑк пулнине сисеттӗм-ха ӗнтӗ. Ҫакӑн пек каҫсенчен пӗринче ҫак арҫын эпӗ мӗн чухлӗ ӗҫлесе илни ҫинчен ыйтрӗ. Каларӑм. Ман ҫине вӑл хӗрхенсе мар, йӗрӗнсе пӑхса илчӗ ҫавӑн чухне. Кунне палӑртса, ирхине вунпӗр сехетре пасара пыма хушрӗ, ӑҫта тата кам патне кӗмеллине каларӗ.

Чӗннӗ ҫӗре палӑртнӑ вӑхӑтрах ҫитрӗм. Пӑхатӑп та, пуҫлӑх сӗтелӗ хушшинче леш хайхи, манӑн "савниех", ларать иккен. Пукан сӗнчӗ. Кӗрекен-тухакансем пулчӗҫ. Куҫпа пӑхса илнипех ӑнланаҫҫӗ иккен кунта ӑна. Ӗҫӗме пӑрахма, пасара куҫма сӗнчӗ ҫак арҫын. Пасарта мӗн тумалли та паллӑ: малтан мӗнкилчӗӳ апат-ҫимӗҫ сутнӑ ҫӗрте "хӑнӑхмалла", кайран аш-какай ретне тӑратать.

Заводра мана ĕç кĕнекине хаваспах тыттарса ячĕç, ытлашши пĕр пыр чакрĕ терĕç пулмалла. Пасарта вак-тĕвек апат-çимĕç сутма та хăвăрт хăнăхрăм. Çак вăхăталла ĕнтĕ эпĕ хамăн пуçлăха тата “савнийе” чунпа та, ӳтпе те пĕтĕмпех парăнтăм.

Какай сутма пуçланă пĕрремĕш куна нихăçан та манас çук. Йĕри-тавра вакласа пăрахнă аш татăкĕсем выртаççĕ. Шăматкун пулнă май, прилавок умĕнчи çыннисем те чылаях. Ĕçе пуçăнатăп. Çийĕмре кĕсъесĕр шурă халат, тавар сĕтелĕ айĕнче какай туянакансенчен илнĕ укçана чикмелли дерматин сумка выртать (пасарта ĕçлекенсене кĕсъесемсĕр тумтирпе çӳреме хушаççĕ: укçа-тенке пытарса ан хăварччăр). Васкамасăр, хама тата какай туянакансене улталамасăр тавара виçе-виçе паратăп. Тем самантран ман пата юнашар ĕçлекен Тамара пырса тăчĕ. “Самсун Силăч кăмăлсăр, мĕшĕлтетсе ĕçленĕшĕн сана çиленнĕ”, - терĕ. Мана Самсун Силăч (пуçлăхăма, “савнийĕме” пасар тавраш̆енче ĕçлекенсем темшĕн çапла чĕнеççĕ, хăйĕн ячĕпе ашшĕ ячĕ пачах урăхла) юнашарах тăнă пек туйăнса кайрĕ, унăн тăхлан пек сивĕ куçĕсем асăма килчĕç те чĕрем шăнса кайнă пек пулчĕ. Васкавлăрах ĕçлеме тытăнтăм. Васканă чухне ăçтан пурне те шута илсе тăран, хамăн улталанас марччĕ текен шухăш кăна пăралать пуçа. Çав каç сакăр пин те ултçĕр çитмĕл тенкĕ пырса патăм Самсун Силăча: кунĕпе какай сутса тунă укçа. Мана уйăрса панă какай виçине шута илес пулсан, çичĕ пин те пилĕкçĕр çирĕм тенкĕ памаллаччĕ. Хура та, шурă та чĕнмерĕ Самсун Силăч. Сутса тунă укçаран икĕ процентне хамăра памалла та-ха: манăн çак куншăн икçĕр тенкĕ илмеллеччĕ, “савни” мана пилĕкçĕр тенкĕ памалла тунă. Эпĕ клиентсене улталаса тунă укçан çуррине мана пама шут тытнă. Ăна ултавçă тесе пĕр сăмах та калаймăн. Ултавçи пулсан та, вăл эпех пулатăп.

Çапла кун хыççăн кун иртрĕ. Пасарта тавар ялан пĕр пек сутăнмасть. Какай лайăх кайнă кунсенче шăмăллă аша ытларах сутатпăр, илекенсем сахаллансанах сысна пĕççисене, филе текеннисене кăларатпăр. Ялтан аш-пăш илсе килекенсене хĕсмелли майсем те пур пирĕн командăн (унта пурĕ вунпĕр çын). Хресченсем чылай чухне аш-пăшне курттăмăн парса хăвараççĕ. Майне пĕлсе “ĕçлет” Самсун Силăч, тусĕсемпе пĕлĕшсем нумай унăн. Пĕр каçхине вăл пире пурне те хăй патне чĕнтерчĕ, ыран налук инспекторĕсем пасара килсе тĕрĕслессине пĕлтерчĕ, сутуилӳ “йĕркине” пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыма хушрĕ (вăл пур çĕртен те информаци илсе тăрать). Тĕрĕслекенĕсем пире паллаттарса çӳремерĕç пулмалла, анчах та эпир çав кун çветтуй вырăнĕнчех пултăмăр, никама та улталамарăмăр.

Икĕ çул каяллипе танлаштарсан, эпĕ те чухăн мар ĕнтĕ. Пысăкрах хваттер туянтăм, кил тавраш̆ĕнчи тупра пĕтĕмпех ют çĕршывра кăларни, машина та, гараж та пур. Пурпĕрех телейĕм çав-çавах çук. Самсун Силчăн та ман тĕлĕшрен юратăвĕ

тахҫанах иртсе кайнӑ. Пӗлетӗп: вӑл пӗр хӗрарӑмпа анчах пурӑнакан арҫын мар. Хӗрсене, хӗрарӑмсене перчетке пек улӑштарса тӑрать. Мана вӑл сутӑнчӑк туса хучӗ, хӑрхӑма кӑларчӗ. Ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ, япшар, ҫамрӑк, илемлӗ хӗрсем тупса пама хушать. Ман пата лачкам ӳсӗр чухне кӑна кӗрсе ҫӳреме пуҫларӗ. Мӗн юратни ун пек вӑхӑтра? Ӳпкелешет, кӳрентерет, мана йӗртсе хӑварать. Икӗ хутчен те хӗнесе пӗтерчӗ. Пӗр эрне каялла хӑйпе пӗрле тепӗр ҫамрӑк арҫынна ертсе кӗчӗ. Урӑх хуларан килнӗскер. Самсун ӑна манпа пӗрле ҫӗр каҫма хӑварчӗ. Ҫиленнӗ чухне манӑн "савнийӗм" тата хуҫам кашкӑр пекех туйӑнать. Шӑлӗсене шатӑртаттарать, янах мӑкӑлӗсем пӗр вӗҫӗмсӗр куҫкалаҫҫӗ. "Сан патна пӗр эрнелӗхе упӑшка туса пасарти чӗлхесӗр грузчика Гришӑна килсе яратӑп!" - тет. Мӗн шухӑшланине тӑватех вӑл. Малашне Гришӑпа та вырӑна пайламалла пулӗ-ха манӑн.

Хӗрӗнкӗ, ӳсӗр вӑхӑтсем Самсунӑн сайра-хутра кӑна пулаҫҫӗ. Ахаль чухне вӑл - яланах урӑ, нумай сӑмахламан ӗҫлӗ ҫын. Вӑл манран урай мунчали туса хурсан та, эпӗ унран уйрӑлас ҫук. Таҫта пирӗн президентсем, правительствӑсем пур теҫҫӗ. Пулӗ те. Анчах маншӑн турри те, патши те, президенчӗ-правительстви те - Самсун Силӑч. Манӑн пурнӑҫ мӗнле пуласси пӗтӗмпех унран килет. Унран вӑйли, унран хӑватли урӑх никам та ҫук.

АРХИЕРЕЙСЕМПЕ ПРЕМЬЕРСЕМ ЧВАСОВ ГОСПОДИНПА ХӐШ ХУРӐН ТӐРРИНЧЕН ХУРӐНТАШЛӐ?

Шупашкар хули, Мир проспекчӗ, сакӑрвун тӑваттӑмӗш, тӑхӑрвуннӑмӗш ҫуртсем... Икӗ ҫул каялла ҫак ҫуртсем хушшинче Владимир Чвасовӑн мини-тракторӗ тӑратчӗ, Вӗсен ҫывӑхӗнче ялтан килнӗ ҫынсене тӑтӑш курма пулатчӗ. Ҫуртӑн пӗрремӗш хутӗнче вырнаҫнӑ "Бэй-Фан" офисра та эпӗ пӗрре анчах мар пулнӑ. "Пурнӑҫри вак-тӗвек (Мелочи жизни)" ассоциаци президенчӗпе Володя Чвасовпа сахал мар курнӑҫса калаҫнӑ.

Виҫӗмкун ҫак урама тепӗр хут кайса килтӗм. Ҫине тӑрсах шырасан та "Бэй-Фан" офиса тупаймарӑм. "Пурнӑҫри вак-тӗвек" ассоциаци халӗ ӑҫта ӗҫленине никам та пӗлмест. Владимир Чвасов хӑй те Шупашкартан тухса кайнӑ текен сӑмах ҫӳрет. Вӑл вун-вун ҫынна пуҫтарса пама шантарнӑ мини-тракторсем те ҫук. Укҫисем "ҫилпе вӗҫсе кайнӑ" пирки ӑшӗсене ҫунтаракан хресченсем редакцисен пӳлӗмӗсене кӗрсе тухаҫҫӗ, судсем тӑрӑх ҫӳреҫҫӗ.

Кам айӑплӑ-ха ҫакӑн пек пӑтӑрмах сиксе тухнӑшӑн. Чвасов "Госкомсельхозтехника" системинче ӗҫленӗ чухне яланах пуҫаруллӑ пулнӑ, рационализаторла сӗнӳсене сахал мар

пурнăçа кĕртнĕ. Вунă çулсем-мĕнсем каялла унăн характерĕпе йăли-йĕркинче пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. (Ăс-пуç пирки калаймастăп, ăна специалистсем кăна çирĕплетсе пама пултараççĕ). Чвасов ĕçлекен вырăнта конфликтлă лару-тăру пулса тăчĕ. Çынсем унпа çураçуллă пулаймарĕç, вăл çынсемпе килĕштереймерĕ. Володьăн ĕçрен тухса кайма тиврĕ.

Çак тапхăрта ĕнтĕ унăн хăй темĕн те тума пултараслăхне çынсене кăтартса парас туртăм тата та вăйланчĕ. Чвасов пĕчĕк предприяти, ун хыççăн ассоциаци туса хучĕ, офис уçрĕ, министерствăсемпе ведомствăсене мини-трактор кăларма пуçлас, биогаз хатĕрлесе унпа усă курас ыйтусемпе çӳреме пуçларĕ. Министрсемпе комитет пуçлăхĕсем ăна фантазер тата мыскараçă вырăнне хурса йышăнма пуçларĕç, пĕр вĕçĕмсĕр пулăшма пулчĕç.

Хăйне евĕрлĕ çак кампание православи чиркĕвĕн хамăр патăрти епархийĕн ертӳçисем те хутшăнмасăр юлмарĕç, Чвасова мĕнпур ĕçре пехил парса тăчĕç. Владимир Григорьевич ун чухне премьер-министрта ĕçленĕ çынпа тĕл пулма мехел çитерчĕ. Правительство хаçачĕсем "сурчăк сирпĕтсех" Чвасов аферине пропагандăлама пуçларĕç, журналистсем хушшинче вăл вăхăтра мини-трактор "проблемисене çутатма" çав хаçатсенче ятарлă корреспондентсем уйăрнă тесе те калаçатчĕç.

Китая командировкăна кайса килнĕ тата республикăра мини-тракторпа çулçӳрев ирттернĕ хыççăн (1993 çул, март уйăхĕ) Владимир Чвасовăн авторитечĕ тата та хăпарчĕ.

Ĕненнĕ-ши кам та пулин "Бэй-Фан" мини-трактор кăларма тытăнасса? Çакна ĕненекенсем хушшинче Чвасов господинпа трактор туянакансемсĕр пуçне урăх никам та пулман пек туйăнать мана. Чăнах та, Владимир Григорьевич тракторсем валли тесе 46 двигатель тупса килчĕ. Анчах та часах вĕсем мини-трактора юрăхлă марри палăрчĕ. Пулăшас текеннисем унран пăрăнса çӳреме пуçларĕç, укçа тӳленисем тракторсене хăвăртрах туса пама хистерĕç. Тракторлă пулас тесе 129 çын укçа хывнине лайăх астăватăп. Паллах, Чвасов вĕсемпе нумайăшĕпе халĕ татăлнă ĕнтĕ. Çапах та укçа шыракансем паян та пур-ха.

Çапла вĕçленчĕ (вĕçленчĕ теме юрать пулсан) Владимир Григорьевич пуçланă "шанчăксăр ĕç". Паллах, çакăншăн чи малтанах вăл хăй айăплă. Çав вăхăтрах ăна улталаса, хĕтĕртсе, пулăшма сăмах парса пурăннă министерствăсемпе ведомствăсем те айăплă. Ĕçĕ вĕçленнĕ пулсан та, проблеми юлнă. Хресчене, çĕр çинче ĕçлес текене мини-трактор паян сывлăш пек кирлĕ. Республикăра ăна кăларма пуçлас пирки нимĕнле хускану çук.

ЭСИР ПУРТЕ ПĔР ШУЙТТАН

Антипов тракторист каласа парать

Икĕ эрне каялла ялти страхагент пирĕн кил-йыша калама ҫук "савăнтарчĕ", арăмпа иксĕмĕрĕн хутăш майпа тунă страховани срокĕ тухнă хыҫҫăн вунă тенке яхăн укҫа парса хăварчĕ. Ку хĕрарăмăн чĕлхи ҫинче яланах сарҫусăр пуҫне урăх нимĕн те ҫук та: ку хутĕнче те вăл чĕвĕл-чĕвĕл калаҫмасăр чăтаймарĕ, правительство пирĕн ҫемьене ҫакăн пек хытă улталанăшăн хăй чĕререн кулянни ҫинчен пĕлтермесĕр те пӳртрен тухса каймарĕ. Сăмах май тенĕ пек, кил-ҫуртпа пурлăха тата ĕнене ирĕклĕ майпа страхлассипирки манса кайма кирлĕ марри ҫинчен те асăрхаттарчĕ. Эпĕ, ăшчик кисренмеллех пăшăрханса ӳкнĕскер, юпа пек хытса тăрса юлтăм.

Аша вăркатма, тарăхма сăлтавĕ те пур ҫав. Хам эпĕ ҫирĕм ҫула яхăн ĕнтĕ трактористра ĕҫлетĕп, мăшăрăм та фермăра ĕне сума пуҫланăранпа часах вунпилĕк ҫул ҫитет. Реформа текен арăш-пирĕш пуҫланиччен пурнăҫ пĕрре те хурламалла марччĕ. Тракторист ĕҫĕ ҫăмăлах мар та, укҫи те аванахчĕ: уйăхсерен 150-250 тенкĕрен кая ӳкермен. Арăмăн ĕҫ укҫийĕ те манăнни майлах пулса пынă. Ҫапла ураланса тăвата пӳлĕмлĕ кирпĕч ҫурт лартрăмăр, хапха тутартăмăр, хуралтăсем ҫавăрттартăмăр. Пурпĕрех укҫа перекет кĕнеки ҫине хума та ҫитсе пыратчĕ.

Ҫав ырă кунсенчен пĕринче (ун чухне уявччĕ: Майăн 1-мĕшĕччĕ-и е Ҫĕнтерӳ кунĕ) пирĕн пата хайхи япшар чĕлхеллĕ страхагент кĕчĕ. Хĕрарăм пуҫҫипех сумкинчен пĕр кĕленче шурă эрех кăларчĕ. Эпир те парăмра юлас темерĕмĕр пулмалла. Вăйпитти те, ҫавах виҫĕ ҫынна (арăм, эпĕ тата страхагент) икĕ кĕленче эрех чухах вăл. Самаях хĕртĕмĕр. Чиперук мăшăрăмпа иксĕмĕре те хутăш майпа кашнине пĕр пин тенкĕлĕх страхланма ӳкĕтлерĕ. Укҫине тӳрех колхоз бухгалтеринчен куҫарса тăма пулать-мĕн. Турткаланмасăрах килĕшрĕмĕр. Ҫав саманта Валерикпе Юрик (аслă ачасем) мĕнле вĕренни ҫинчен ыйтса пĕлме те ӳркенмерĕ. "Тепĕр сакăр ҫултан вунсаккăра ҫитеҫҫĕ иккен–ха. Вĕренсе тухаҫҫĕ, аяккалла вĕҫсе каяҫҫĕ. Укҫа кирлĕ пулать. Вĕсен ячĕпе те вунсаккăра ҫитсен пиншер тенкĕ илмелле договор тăвар",-тет. Ҫапла пĕр ăстрăмрах тăвата договор турăмăр. Бухгалтерсем кашни уйăхрах иксĕмĕрĕн ĕҫ укҫинчен пĕрле хĕрĕх тенкĕ майлах тытса юлса госстраха куҫарма пуҫларĕҫ. Хальхи укҫапа шутласан, ку сахалтан та пин тенкĕрен кая мар. Темиҫе ҫул хушши госстраха ҫакăн пек "куланай" тӳлесе тăтăмăр. Ылханлă 1992 ҫул кĕрлеттерсе ҫитрĕ, укҫана ҫĕр пинсемпе, миллионсемпе шутлама пуҫларĕҫ. Ҫав ҫулхине, кĕрхи пĕр тĕксĕм кун, япшар агент каллех пирĕн пата лĕпсĕртетсе ҫитрĕ. "Бухгалтери халь тенкĕсемпе, пуссемпе укҫа куҫарса аппаланмасть, пинсемпе кăна ĕҫлет. Сирĕн - тăвата договор. Юлашки юлнă укҫине алăран парса татмăр–ши? Эпĕ сире кĕпитанци ҫырса паратăп. Укҫине договорсен срокĕсем

вĕçленсен илетĕр. Ӳстерсе парасси пирки пĕрре те иккĕленме кирлĕ мар, патшалăх улталас çук", - чĕвĕлтетрĕ Чиперук. Парса ятăмăр.

Халĕ, акă, алăра вунă тенке яхăн укçа. Сахалтан та хĕрĕх пинрен кая килмелле марччĕ. Çулла Валерикпе Юрикĕн те договор срокĕсем тухаççĕ. Мĕн чухлĕ килсе парĕç-ши иккĕшĕншĕн, вуникĕ-вунпилĕк тенкĕ-ши? Мĕн тума пулать вăл укçапа? Хăçанччен çапла мăшкăласа кулĕç-ши ĕçлекен çынран? Чăтайман енне, "Росгосстрахгранитăн" районти уйрăмне çул тытрăм. Пысăках мар çуртра вун-вуникĕ хĕрарăм айланать. Начальникĕ те вырăнтах иккен. Чĕлхе вĕçĕпе калаçакан çамрăк арçын: "Сана тĕрĕс тӳленĕ. Эпир нимĕн те тăваймастпăр. Ыттине Ельцинран ыйтса ил", - тесе кăларса ячĕ. Утрăм пуçа пĕксе автобус чарăнакан вырăна.

Пирĕн, ял çыннин, ылтăн-кĕмĕл те, долларсем те çук. Пирĕн пĕтĕм пурлăх - çурт-йĕр тата килти выльăх-чĕрлĕх. Вĕсене çухатсан, хăть те чĕрĕллех тупăка кĕрсе вырт. Çавăнпа та ял çынни выльăх-чĕрлĕхпе пӳрт-çурта, пурлăха ирĕклĕ майпа страхлать. Пирĕн ялта 250 кил. Вĕсенчен 150 килĕ ĕне выльăха та, пӳрт-çурта та страхлать. Ыттисем вăй çитереймеççĕ. Эпир те аран-аран саплаштаракаласа пурăнма пуçларăмăр. Мухтав турра, пилĕк çул хушши ялта пушар пулман-ха. Çулсерен икĕ-виçĕ ĕне сарăмсăр вилни пирки вара тунма кирлĕ мар. Пирĕн ялти страхланă 150 килтен "Росстрахгранита" 20 пин тенкĕрен кая мар пырса выртать. 3-5 пинне инкекшĕн тӳлеççĕ, ытти 25 пин тенки мăнтăр хырăмлисен хырăмĕсене тата та сарма, халăх ĕнси çинче ларакан страхагентсемпе страхчиновниксене пуйтарма каять. Страховани системинче ĕçлекенсем уйăхсерен вăтамран пилĕк пин тенкĕрен кая мар шалу илеççĕ тени тĕрĕсех пуль тесе шутлатăп эпĕ.

Ĕнсе çинчен мĕнле пăрахмалла çак харампырсене? "Росгосстрахгранитпа" ытти фирмăсенчен пирĕн хăтăлас пулать. Патшалăхĕ те, тӳри-шари те, страхлакан фирмăсенчи инкесемпе пиччесем те - пурте пĕр шуйттан. ВĔСЕМ ХАЛĂХШĂН МАР, пĕртен-пĕр хăйсемшĕн анчах ĕçлеççĕ. Ялсенче хамăрăнах страхкассăсем йĕркелемелле. Калăпăр, çунса каять ăнсăртран ялта вунă çул хушшинче пĕр çурт, пуçтарса пар ăна кашни килтен страховани фирми мĕн чухлĕ тӳлет - çавăн чухлĕ укçа. Ытларах парсан та пăсмасть. Кăçал ялĕпе 4 ĕне ӳксе вилет е пусса пăрахма тивет тейĕпĕр. Вĕсемшĕн те ялти страхкасса кашни килтен укçа пухса парать. Ку вăл "Росгосстахгранитпа" е тĕрлĕрен "Заботăсемпе" тата "Надеждăсемпе" договор туса укçа тăккаланинчен чылай йӳнĕрех (темиçе хут йӳнĕрех) пулать.

Ĕçлекен çынна çăварлăхлас, пусмăрлас, улталас текенсем халĕ йышлансах пыраççĕ. Вĕсенчен пирĕн хамăрăн ăспа, хамăрăн алăпа, пĕрле пĕрлешсе хӳтĕленмелле.

ХУРА ТĂЛАНА ШУРĂ ÇИППЕ ÇĔЛЕМЕÇÇĔ

Турикас çыннине, Гурий Егорович Егорова, çын вĕлернĕшĕн айăпласа суд тунăранпа кăçалхи раштавра сакăр çул çитет. Приговор йышăнса, ăна вуникĕ çуллăха хупса лартнă. Раççей Федерацийĕн Аслă судне касаци пани Егоровăн пĕрремĕш жалоби пулнă. Унтанпа сакăр çул хушши Гурий Егоровичăн хĕрĕсемпе ывăлĕсем судпа прокуратурăн тĕрлĕ инстанцийĕсене жалоба хыççăн жалоба ăсатаççĕ, ашшĕне тĕрĕс мар айăпланă тесе çыраççĕ, ку ĕçе тепĕр хут пăхса тухма йăлăнса ыйтаççĕ. Чылай чухне вĕсем çырни пĕр усăсăр каялла çаврăнса килнĕ. Çапах та кăçал, çулталăк пуçламăшĕнче, Аслă суд ĕçе тепĕр хут пăхса тухма йышăнать. Инçетри колонире ларакан Егорова тăван вырăнĕсене илсе килеççĕ, январь уйăхĕн юлашки вунă кунлăхĕнче суд унăн ĕçĕпе лару ирттерме тытăнать. Процесс вĕçленнĕ хыççăн тепĕр хут приговор йышăнаççĕ, наказани срокне вуникĕ çултан вунна çити чакараççĕ. Кассаци жалобине пăхса тухса, Раççей Федерацийĕн Аслă сучĕ ку приговора вăйра хăварнă.

Мĕнле преступленишĕн айăпланă-ха Егорова? Мĕншĕн унăн ачисемпе тăванĕсем Гурий Егорович пирки йышăннă приговорпа килĕшмеççĕ, ăна тĕрĕс мар суд тунă тесе темиçе çул хушши унта та кунта çăхавсем яраççĕ. Мĕнре çакăн сăлтавĕсем?

Преступлени август уйăхĕн пуçламăшĕнче пулса иртнĕ. Вăл кун Кури (ялта ăна çапла чĕнеççĕ) иртен пуçласа каçченех сарай тума юпасем лартнă. Кун каçипе те вĕсем патне хăйсен урамĕнче пурăнакан пĕр хĕрарăмсăр пуçне никам та кĕрсе тухман. Лешĕ те ял магазинне шăнтнă пулă тиесе килни çинчен пĕлтерес шухăшпа анчах кĕнĕ. Егоровсем: "Кăçал шăнтнă пулă нумай илсе çирĕмĕр, кирлĕ мар, туянмастпăр", - тенипе ирттерсе янă. Кӳршĕре пурăнакан Лиза аппăш (Гурий Егоровăн ашшĕпе пĕртăван хĕрĕ) кăнтăрла вĕсен килне ура та ярса пусман, хăйсем те ун патне каçман. Вăл картишĕнче темле палламан хĕрарăмпа калаçнине асăрханă-ха Егоровсем, анчах мĕн çинчен сăмахланине илтсе юлайман. Тен, хăлхана чиксе юлма та тăрăшман пулĕ. Мĕншĕн тесен, тăванлă пулсан та, Егоровсем Елизавета Максимовăпа килĕштереймен, пĕр-пĕрин патне кайса-килмесĕр пурăннă.

Хăйсем калана тăрăх, Егоровсем - карчăкпа шăрчăк тата вĕсен пĕчĕк мăнукĕ каçхине йĕркеллех выртса çывăраççĕ, ирех тăрса, яланхи ĕççене пуçăнаççĕ. Кăнтăрла тĕлнелле ял тăрăх хыпар сарăлать: Егоровсен аппăшне Елизавета Максимовăна хăйĕн пӳртĕнчех такам пуртăпа касса вĕлернĕ. Вилнĕ карчăк патне унăн кӳршĕ ялта пурăнакан хĕрĕ Лидия персе çитет. Прокуратурăпа следстви органĕсем те нумай кĕттермеççĕ. Çитмĕл икĕ çулхи ватă хĕрарăма кам вĕлерме пултарни пирки

ыйту сиксе тухать. Хĕрĕ следователе амăшĕ Егоровсемпе хирĕçсе пуранни, Гурий Егорович аппăшне пĕр-икĕ хутчен те вĕлерессипе хăратни çинчен каласа парать. Чăн сăмаха суя тăваймастăн. Чăнах та, Максимовăпа Егоровсем килĕштерейменю Лиза Максимова Гурий Егоровича тахçан сурăх вăрри тесе вăрçнине лешĕ тӳсех йывăра илнĕ, пĕр-пĕринпе хутшăнма пачах пăрахнă. Çапах та, ӳсĕрле-мĕнле Кури хăйне кӳрентернĕ Лиза аппăшне сасартăк "аса илме" пуçланă, ун патне кĕрсе шăв-шав хускаткаланисем те пулнă.

Ку хутĕнче ĕç кинори пек хăвăрт пулса иртет. Çав кунах, августăн 4-мĕшĕнче, Гурий Егорова тытса каяççĕ. Ăна тытса чарнине саккунлă тăвас тесе, вăл июлĕн 30-мĕшĕнче Иванова гражданкăна кӳрентерсе пĕтернĕ пек кăтартса акт çыраççĕ. Судья Егорова 15 талăка хупса лартать.

Унтанпа нумай вăхăт иртнĕ. Судпа прокуратурăра тата милицире халĕ урăх çынсем ĕçлеççĕ. Хальхи вăхăтра право йĕркисене çирĕплетекен тата административлă органсенче ĕçлекенсем пирки кунта нумай лайăххине илтме пулать. Сăмах халĕ вĕсем çинчен мар. Аслă суд Егоров ĕçĕпе йышăннă приговор пирки те иккĕленӳллĕ шухăшсем çук манăн. Анчах та пысăк чăнлăха тупса парăртас ĕçре пĕчĕк улталвпа усă курни те вырăнсăр пулни пирки ун чухне судьяра ĕçленĕ Игнатьева ӳпкев калас шухăш çапах та сĕвĕрĕлсе пĕтеймест-ха. Егорова 15 талăка хупса хумасăрах следстви ĕçĕсене туса пыма май пулнă-çке-ха. Мĕн калама пулать кун пек чухне айăпсăрлăх презумпцийĕ пирки? Паллах, нимĕнех те калаймастăн.

Çын йывăр преступление нумай чухне ӳсĕрле тăвать. Следстви Егоров та Максимовăна ӳсĕрле вĕлернине кăтартса панă. Анчах та суд материалĕсенче вăл ĕçкĕлле пулнине уçса паракан документсене (ухтарнă чухне эрех-сăра тупни, юн çинче алкоголь палăрни, çынсем ăна çав каç ӳсĕрле курни, медицина экспертизи вăл урă мар пулнине çирĕплетсе пани) тупса паллашма пулмарĕ. Допроссенче кун пирки Гурий Егорович хăйĕн показанийĕсене темиçе хутчен те улăштарнă. Хăй малтан ăнлантарнă тăрăх, вăл магазинта хĕрлĕ эрех илсе ял çыннисемпе пĕрле ĕçнĕ имĕш. Ку апла пулнине тĕпчесе пĕлнĕ хыççăн - урăхла показани: килтех унччен туянса хунă эрехе ĕçнĕ иккен. Ăçтан тата хăçан туяннине кăтартса паракан, пĕччен е кампа та пулин ĕçни, е тата ыттине ĕнентерсе паракан материалсем каллех çук. Çапах та суд материалĕсенче, заключенире, приговорта айăпланакан çак преступление ӳсĕрле тунине палăртнă. Допроссенче Егоров хăй çак преступление мĕнле тунине тĕплĕн каласа панă. Кайран унăн вырăна тухса, çакна кăтартса пама та тивнĕ. Ухтару вăхăтĕнче ун патĕнчен темиçе пуртă илсе тухнă. Гурий Егорович преступление çак пуртăсенчен пĕринпе тунине йышăннă. Анчах та экспертиза материалĕсем каллех çакăн пирки уçăмлах мар. Вăл пуртă çинче кайăк-кĕшĕк, выльăх-чĕрлĕх тата этем юнĕ (вилнĕ Максимованнипе пĕр евĕрлĕ) пулнине çирĕплетет. Сăмах

май каласан, экспертсем Максимова килĕнчен илсе тухнă пуртă ҫинчи юн та кайăк-кĕшĕкĕн, сыснан е этемĕн пулма пултарнине кăтартса панă. Ку енĕпе татăклă уҫăмлăх пулманни те ашшĕн айăпĕ пирки Егоровăн ачисене иккĕлентернĕ, паллах. Следстви айăпа пур енлĕн кăтартса панă тата Егоров ку айăпа судчен пĕтĕмпех йышăннă пулсан та, лару пынă вăхăтра Гурий Егорович (сакăр ҫул каялла тата кăҫал) хăйне айăплă мар тесе пĕлтернĕ. Малтан мĕншĕн урăхла показанисем пани ҫинчен ыйтсан, вăл шкулта сахал вĕренни, нумай япалана ăнланманни ҫине ярать. Судпа следстви материалĕсем, тĕпрен илсен, пĕтĕмпех чăвашла. Ҫапах та сакăр ҫул каялла приговор текстне вырăсла вуласа пани те айăпланаканшăн процессуальнăй кăлтăк пек пулса тухнă (иккĕмĕш хут суд тунă чухне ку кăлтăка тӳрлетнĕ). Ачасем хăйĕн ашшĕне хĕрхеннине, вăл айăпсăр пулнине ĕненсе ăнланма пулать. Анчах та чăнлăха хирĕҫ каяймастăн. Хура тăлана шурă ҫиппе ҫĕлемеҫҫĕ. Ун пек тăвас пулсан, вăл тӳрех этем куҫне илемсĕррĕн курăнать. Асăннă преступление тĕпчесе палăртнă тата айăпланакан тĕлĕшĕнчен приговор йышăннă чухне хăш-пĕр кăлтăксем пулман пулсан, Гурий Егоров ĕҫне сакăр ҫултан тепĕр хут пăхса тухма кирлех те пулмастчĕ пулĕ. Аслă суд практикинче ку сайра пулать. Пачах та пулмасан, тата та лайăхрах.

ҪАКĂНСА ВИЛНĔ, НАРКĂМĂШ ĔҪНĔ

Валентин ҫакăнса вилнĕ тени маншăн уяр кунта аҫа ҫапнă евĕрлех пулчĕ. Ăна эпĕ мĕн ачаранах пĕлнĕ-ҫке, ҫирĕм ҫул ытла пĕрле ĕҫлесе, кашни кун тенĕ пекех тĕл пулса пурăннă. Ача чухне ăна темшĕн Веня тесе чĕнетчĕҫ. Лăпкă та сăпай, ĕҫчен пулнипе палăрса тăратчĕ вăл. Пире, хăйĕнчен ҫамрăкрахскерсене, ҫын вырăнне хурса хисеплетчĕ, кӳрентерме памастчĕ. Ашшĕ вăрҫăра вилнипе, ҫурма тăлăххăн ӳсрĕ, вăтам шкул пĕтерме те ăна ҫăмăл пулмарĕ. Салтака кайса килнĕ хыҫҫăн Валентин халăх судне ĕҫлеме вырнаҫнăччĕ, кайран милицие куҫрĕ. Пĕр улшăнмасăр вăтăр ҫула яхăн службăра тăчĕ вăл унта, ахаль сержантран милици майорне ҫитиччен ӳсрĕ. Аллăран иртсен те питĕнчен хĕрлĕ тĕс каймарĕ. Сывлăхлăскер, яланах тăн-тăн утса ҫӳретчĕ, халăх хушшинче пулма юрататчĕ. Икĕ хĕр ӳстерсе аякка ăсатрĕ, юлашкинчен арăмĕпе иккĕшех тăрса юлнăччĕ ĕнтĕ.

Пенсие тухма хатĕрленсе ҫитнĕччĕ вăл. Ҫапах та юлашки вăхăтра калаҫусенче юншăхлани сисĕнетчĕ. Хальхи синкерлĕ самана пăшăрхантаратчĕ ăна, ăшчик кӳтсе тăни ҫинчен калаҫкалатчĕ. Халиччен чир мĕнне пĕлменскер, кăҫал ҫуркунне эрне ытла район больницинче выртнă иккен. Шăматкун мунча кĕме килне таврăннă. Ҫула май шалти ĕҫсен пайне кĕрсе тухнă, юлташĕсемпе сывпуллашнă. Лешсем, паллах, ĕненмен, шӳт тăвать тесе шутланă. Мунча кĕрсе таса кĕпе-йĕм улăштарнă та Валентин ҫав каҫах пурнăҫран уйрăлса кайнă.

Юлташăн пӳкле вилĕмĕн инкекĕ сĕврĕлсе те ҫитейменччĕ,

райцентрта тата икĕ вăйпитти арçын çакăнса вилни çинчен хыпар сарăлчĕ. Пурăнмаллаччĕ-ха вĕсен, ĕçлемеллеччĕ, ачипăчине ÿстерсе çын тумаллаччĕ. Пурăнас темерĕç иккен. Иккĕшĕ те ытла та ĕçке ерсе кайнăччĕ ĕнтĕ. Ăçта ĕçкĕ - унта инкек-синкек, çемье пăтăрмахĕ. Ку çамрăк арçынсен пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнинче çак сăлтав та пулчĕ-тĕр.

Ку кăна çитменччĕ, республикăри районсенчен пĕринче çакăн евĕрлĕ синкер шкула çÿрекен хĕрачапа пулса иртни çинчен илтме тÿр килчĕ. Тăххăрмĕш класа çÿренĕ Тамара. Çул çитесси те нумай юлман ĕнтĕ. Анчах хĕрачан илемлĕ пичĕ çине хурлăх палли яланлăхах хăйĕн пичетне çапса хăварнă, пĕччен чухне унăн куçĕсенчен куççуль кайман. Кулянмалли сăлтавĕсем те пулнă çав. Амăшĕ, упăшкисĕр тăрса юлнă хыççăн, пĕр вĕçĕмсĕр ĕçнĕ. Малтан вăл выльăх-чĕрлĕхне сутса пĕтернĕ, кайран килти япалисене эрехпе улăштарма тытăннă. Тамара ÿпкелешнĕ, амăшне вăрçса та пăхнă, лешĕ вара тăна кĕмен. Пуш уйăх вĕçĕнче, ăшă кунсем çитсен, хĕрача пĕлтĕр кĕркунне туяннă çĕнĕ куртки çакăнса тăнă тĕле пырать те ăна тупаймасть. Куртка ăçта пулни çинчен амăшĕ те каласа параймасть. Тулса çитнĕ ăшчикне уçса яраймасăр, Тамара хурт-кăпшанкă пĕтермелли наркăмăша ĕçет. Асапланать, анчах хăйĕн инкекĕ пирки никама та каламасть. Каярах юлнă пирки, хĕрачана больницăра та çăлса хăвараймаççĕ.

Сахал мар пирĕн республикăра çакăнса е чикĕнсе, наркăмăш ĕçсе вилекенсем. Этем хăйĕн пуçне хăй çиет! Мĕн пултăр çакăнтан хăрушăраххи. Пĕлтĕр кăна 350 çын хăйсен ирĕкĕпе пурнăçне татнă: чăваш хутлăхĕнче пурăнакан çĕр пин халăх пуçне - 26 çын. Ытла та пысăк цифра.

Ял çыннине пурăнма çăмăл мар иккен. Инкек-синкекĕ те сыхласах тăрать ăна. Ĕçпе хуçăлмалли нумай. Кашни пулăма ытла та чĕре патне илет тата ял этемми. Республикăмăрта ялта пурăнакансен йышĕ хуларинчен чылай сахалтарах. Пÿкле вилекенсем ялта нумай, авă. Ун пеккисем иртнĕ çул 200 çын пулнă. Уйрăмах арçын хăйĕн пурнăçне хĕрхенмест. Ĕçки те, нуши-терчĕ те ытларах пулмалла унăн. Пурăнас ĕмĕт пĕтнĕ çынсен йышĕ кăçал тата та ÿссе пырать. Тăвата уйăхра вăл 124 çынна çитнĕ. Иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен чылай пысăкрах. Пурнăç йывăрлансах пырать, социаллă-политикăллă тата йăла хутшăнăвĕсем кăткăсланаççĕ. Хавшак этем, хăйне хăй йĕркене кĕртеймесĕр вилет.

Хăйсен пуçне хăйсемех çиекен çынсене медицина наукинче суицидсем теççĕ. Çын пурнăçĕ - чи хакли, теттĕмĕр эпир нумаях пулмасть. Вăл халĕ те çаплах пулмалла ĕнтĕ. Суицидла пулăмсене чакарас тесе медицинăн та нумай ĕçлемелле, анчах та пирĕн республикăра халлĕхе çак енĕпе социаллă-психологилле служба йĕркеленсе çитмен, кризис стационарĕсем çук. Сывлăх министерствинче суицидологсем пуррипе çуккине те уççăн каласа параймарĕç.

Канăçсăрланмалли сăлтавĕ вара пур: Раççейри виçĕ республикăра (Мари, Удмурт, Чăваш) хăйсен ирĕкĕпе пурнăçран уйрăлакансен йышĕ чи пысăкки. Раççейре кăна мар, пĕтĕм тĕнчипе шутласан та.

Ача чухне çуркуннесенче вăрманти аслă масар çывăхне сурăх çитерме çӳреттĕмĕрччĕ. Пĕррехинче эпĕ масар айккинчи вилтăприне асăрхарăм. Вилнĕ çынна мĕншĕн уйрăм пытарни çинчен хамăрпа пĕрле кĕтӳ кĕтекен Тимук пиччерен ыйтса тĕпчеме пуçларăм. "Упăшки асапне тӳсеймесĕр шыва сиксе вилнĕ хĕрарăма пытарнă кунта. Таса вилĕ мар вăл", - терĕ ун чухне сакăрвунна çывхаракан старик. Нумаях пулмасть ку масар çинче тепре пултăм, палăксемпе хĕрессем çинчи паллакан ятсене вуларăм. Хăйсен вилĕмĕпе вилнисем пăччи-паччи кăна. Пĕрне ĕçкĕ инкекĕ пĕтернĕ, тепри автоаварие лекнĕ, виççĕмĕшĕ наркăмăш ĕçсе хупланнă, тепри те çавăн евĕрлех. Шăпа çапла пăчланса пыма пӳрчĕ-и вара пире? Этемшĕн чи хакли пурнăç. Алă хурас марччĕ ун çине.

ТУПМАЛЛИ

Пурнăç - хытти, çăкăр - çемçи

Ěçлекен ěсěклесе лармасть 4
Чăнгăсем чăнлăха юратса пурăнаççě 7
Куççуль měншěн тăварлă 9
"Атте, киле хăçан таврăнатăн?" 13
Улмаллăра улма тути каламасть 15
Ултавлă ваучер 18
Ан яр, тыт хытăрах, Яргунов 20
Пирěн патăрти Афганистан 22
Хисеплě ретрен - масар хěррине 24
Тайлăк çуртри тăлăх учительница 26
Ишěлчěк айěнче 28
Леня Борисов салтакăн пурнăçěпе вилěмě 29
Çот Шетмěри юмăç карчăк 31
Хура-хура вăрман, ăрасна йывăç 34
Икě тěнче - икě пурнăç 36
Сикрě - тухрě çырмаран 37
Алăксенче - амбалсем 38
Юлташсемпе юнашар 41

Тăван кил - çăхан йăви

Питрав умěн, çурçěр тěлнелле 45
Пуртă-çěçě хăй тăршшě виççě тăсăлать 47
Еркěнěн арăмне вěлерме
малтанах мăйкăч хатěрленě 49
Пуç çинчи пуртă 52
Васанпуçěнче çапла пулнă 60

Усал тěнче

Ача çуртне вырнаçрăм 62
Çěнě вăхăт мыскари 63
Самсун мана хăрхăма кăларчě 65
Архирейсемпе премьерсем Чвасов
господинпа хăш хурăн тăрринчен хурăнташ 67
Эсир пурте пěр шуйттан 69
Хура тăлана шурă çиппе çěлемеççě 71
Çакăнса вилнě, наркăмăш ěçнě 73

Геннадий Алексеевич Уткин

Пуç çинчи пуртă

Топор над головой

Очерки, статьи и зарисовки

На чувашском языке

Редактор В.М.Савельева
Художник Л.Я.Павлов
Компьютерный набор Е.В. Васильева
Оригинал-макет И.И. Николаева

Тип. «Крона» тел. 66-52-77. Зак. № 5429. 2001 г.

12=00